Светлана Асамат

ĔМĔР ТĂРШШĔПЕ...

(2013–2020 çç.)

Шупашкар 2021

УДК
ББК
А

Светлана Асамат.
А Ĕмĕр тăршшĕпе... Сăвăсем. — Шупашкар: 7-мĕш типографи, 2021. — 240 с.

Çын вăл хăйĕн кунне, каçне, мĕн ĕмĕр тăршшĕпе юратса ирттерет. Вăл — ваттисене, ашшĕ-амăшне, тăван киле, тăван тавралăха, тăванĕ-хурăнташне, тус-юлташне, ĕçне, çемьине, ачисене, мăнукĕсене, савнине, Тăван Çĕршыва, тăван Çĕре, Çӳл тӳпене, Турă панă Пурнăçа юратма-хисеплеме, упрама-сыхлама пултарнипе телейлĕ. Этем ĕмĕрĕн Çĕр çинчи тапхăрĕ — юрату туйăмĕпе киленсе-хавхаланса тĕксем е çутă тунсăхра асапланса пурнасси. Çавăн çинчен çырăннă сăввăмсем вулакана — парне. Сăвă пуххинче, юрă хывса юрлама — кĕвĕллĕ сăвă та чылай.

Автор

УДК
ББК

© Асамат С., 2021

2013

ЧАССР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, куçаруçă Петĕр Эйзин сăвăç.

Чăваш халăх артисчĕ, РФ тава тивĕçлĕ артисчĕ Василий Павлов; ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ЧНРадиовĕн продюсерĕ Виктор Дмитриев.

ЧР тава тивĕçлĕ артистки, ЧПАДТеатрĕн режиссерĕ Наталия Сергеева;
ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ЧНРадиовĕн продюсерĕ
Виктор Дмитриев.

ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Геннадий Кириллов тĕпчевçĕ, çыравçă.

ТУСЛĂХ КĂШĂЛĔ

Килсе çитрĕмĕр Шупашкара,
Хамăр чаплă тăван хулана.
Уява, уява, уява
Юрласа, ташласа савăнма.

Аякра пурнакан чăвашсем
Илсе килчĕç кунта саламсем.
Туслăх туййăмĕ пĕрлештерет,
Кăмăла çӳлелле вĕçтерет.

Тĕрлĕ халăх юрри-ташшисем
Янăраççĕ чуна хускатса,
Туслă халăх кĕвви-сăввисем
Атăл çийĕн юхать шăранса.

Шупашкар, чиперлен, хитрелен,
Килĕрех, тăвансем, çулсерен.
Тав тăватпăр сире пуç тайса,
Пурăнар пĕр-пĕрне вăй парса.

Туслăх кăшăлĕ, туслăх кăшăлĕ
Саламлать сире хаклă туссем.
Туслăх кăшăлĕ, туслăх кăшăлĕ
Йыхравлать хăнана, тăвансем.

10.03.13

ТĂВАН КĔТЕС

Тăван кĕтес вăрманĕсем,
Тăван кĕтес çаранĕсем,
Тăван кĕтес уй-хирĕсем,
Тăван кĕтес улăхĕсем —
Çак тĕнчере чи илемли,
Ялан — аса килекенни.

Тăван кĕтес çăлкуçĕсем,
Тăван кĕтес йăмрийĕсем,
Тăван пахча çеçкийĕсем,
Тăван пахча çимĕçĕсем —
Çак тĕнчере чи илемли,
Ялан — аса килекенни.

Тăван кĕтес — атте-анне,
Йышлă пускил, юлташ, ратне.
Ытарайми хитре кĕтес,
Мана манса кайман-и эс? —
Çак тĕнчере чи илемли,
Ялан — аса килекенни.

Хĕвел шевли чуптунă самантра
Сывлăм шăрçи йăлтăртатса илни,
Хĕвел шевли чуптунă самантра
Çăлкуç таппи тапăртатса илни —
Çак тĕнчере чи илемли,
Ялан — аса килекенни.

24.03.13

ЙĂНĂШ

Эпĕ сана усал туман,
Ыр тунине шута хуман.
Эпĕ сана улталаман,
Урăххипе улăштарман.

Эс такампа таçта чупни —
Эс такампа мана сутни.
Йăнăш тунишĕн ӳкĕнсе
Ан тархасла чĕркуçленсе.

Каçарнисем — пĕрре, тепре,
Эс ман хыçран тек ан çӳре.
Йывăр е çăмăл — пурпĕрех,
Сансăр та пурнăп чиперех.

Эс тăхăнтарнă ылтăн çĕрĕ
Тухрĕ те ӳкрĕ пӳрнерен,
Хуйăх кăшланăран-и, тен,
Пӳрне çинçелнĕрен-и, тен?

Курăк айне, тусан айне
Пулчĕ эппин... Çук, шырамастăп,
Ни курăка та таптамастăп,
Ни тусана та тустармастăп.
Ма пĕшкĕнес?
Ылтăн тесе ун умĕнче
Сăпайăма-им ӳкерес?

25.03.13

ЭПĔР САНПА

Эпĕр санпа çумма-çумăн
Такăрланă сукмаксем:
Çемçе курăк çийĕпеле
Çавтăнса çӳренисем,
Чечексенчен кăшăл туса
Тăхăнса ташланисем;
Тăван килшĕн вăя хурса
Тăрăшса ĕçленисем,
Тăван килĕн кăмакине
Пĕрле чĕртсе хутнисем;
Хамăр хаклă ачасене
Юратса ӳстернисем,
Хамăр атте-аннемĕре
Хисеплесе пăхнисем.

Эпĕр санпа пĕррехинче
Тĕл пулса мăшăрланни,
Пĕрне пĕри кăмăл туса
Килĕштерсе пурăнни,
Пĕрне пĕри ирĕн-каçăн
Йăпăр-япăр ăнланни,
Пĕрне пĕри ытаруллăн,
Юратуллăн юрани —
Эпĕр санпа çут тĕнчене
Пĕр пĕриншĕн çурални.

Пĕтĕм тăван-хурăнташа
Хапăл туса сăйлатпăр,
Пĕтĕм тăван-хурăнташпа
Туслă-мирлĕ пурнатпăр.

31.03.13

АЧАЛĂХРА

Улăх тăрăх çырла татса
Çырла çисе ларнисем,
Кӳлĕ хĕрне чупса анса
Шывра шапăртатнисем,
Вăрман тăрăх янраттарса
Юрласа çӳренисем;
Хĕлле çитсен, çунашкапа
Катаччи ярăннисем,
Йĕлтĕрпе чупассипе,
Юрачи купалассипе
Ăмăрту ирттернисем;
Çуркунне тата çулла
Çерем çинче çатлаттарса
Лапталла та мечĕкле,
Шаклалла вылянисем,
Юрра ăста çамрăксемпе
Вăй картине тăнисем;
Ăс пухмашкăн таплаттарса
Шкулалла уттарнисем,
Тăван килте, тăван шкулта
Пурнăçа вĕреннисем —

Чи телейлĕ, чи хаваслă
Ачалăхри самантсем,
Асран тухми илĕртӳллĕ,
Ытаруллă вăхăтсем.

1.04.13

ТĂВАН ТАВРАЛĂХ ПАРХАТАРĔ

Тăван тавралăх пархатарĕ —
Ачалăхри ачаш кунсем.
Тăван тавралăх пархатарĕ —
Шкулта вĕреннĕ вăхăтсем.

Тăван тавралăх пархатарĕ —
Тăван кĕтес илемĕсем.
Тăван тавралăх пархатарĕ —
Хаваслă пурнăç кĕввисем.

Тăван тавралăх пархатарĕ —
Ваттисене хисеплени.
Тăван тавралăх пархатарĕ —
Чăваш ачи чăваш пулни.

Тăван тавралăх пархатарĕ —
Тăван кил-йыш ытамĕнче,
Тăван тавралăх пархатарĕ —
Тĕнче çутин илемĕнче.

Пурнăçăмри кашни самантшăн —
Тавах сире атте-анне.
Хĕвеллĕ, ырă ăрăскалăм —
Вăл пурăнать тăван килте.

28.04.13

КИЛĔШТЕРЕТĔП

Таçта-и, аякра-и эс,
Кунта-и, çывăхра-и эс,
Эпĕ сана манса кайман,
Эпĕ сана асран яман.

Эс те мана манса кайман,
Эс те мана асран яман.
Тĕлĕкĕме килсе çӳрен,
Ман ытама кĕрсе ӳкен.

Çак пурнăçра тĕл пулнисем,
Эпĕр санпа — телейлисем,
Туйăм хакне, чысне, вăйне
Туйса киленнĕ савнисем.

Килĕштеретĕп, килĕштеретĕп,
Çурхи чечекĕн ешеретĕп,
Ĕлĕк пĕрле çӳренине
Алшăллисем çине тĕрлетĕп.

Алшăллине тĕрленĕ май
Пите куççулĕм йĕпетет,
Килеймессе пĕле тăрах,
Чунпа чĕрем санах кĕтет.

11.02.13

ЫРАТТАРАТĂН...

Шăтарасла
Ан тинкерсем пит-куçăмран —
Ыраттаратăн.
Çунтарасла пăхнипеле —
Вăтантаратăн...
Ан тинкерсем пит-куçăмран —
Ыраттаратăн, вăтантаратăн...

Çатăрласа
Ан çупăрла çан-çурăмран —
Ыраттаратăн.
Шăмшакăма пăчăртаса —
Йынăштаратăн...
Ан çупăрла çан-çурăмран —
Ыраттаратăн, йынăштаратăн...

Ăс-пуçăма
Арпаштарса ан тухатла —
Ыраттаратăн.
Тухатлама пултарнипе —
Пăхăнтаратăн...
Ан тухатла ăс-пуçăма —
Ыраттаратăн, пăхăнтаратăн...

Тĕрĕссипе калас пулсан? —
Сĕртĕнӳсен çĕмренĕпе тивсе
Пылаккăн ыраттар та ыраттар,
Ăша, чуна ирĕлтерсе çунтар...

14.02.13

ИКĔ ТУСĂМ ПУР

Икĕ тусăм пур — чунăмпа чĕре,
Икĕ тусăм пур — ĕмĕрех пĕрле.
Тимлĕ чĕрепе юнăм юмахлать,
Имлĕ чунăмпа туйăм сăмахлать.

Шухăша яри! уçса ярам-и,
Кăмăла яри! ярăнтарам-и?
Чĕрепе, чунпа туслă пурăнма
Пулăшса тăрать чăтăмлă шăпа.

Иртĕ — иртесси, пулĕ — пуласси,
Иксĕлми тĕллев — лайăх пурнасси.
Чунăмпа чĕрем — шанчăклă туссем,
Турă çырнипе — чи çывăххисем.

Ĕмĕр тăршшĕпе вĕсемпе пĕрле
Пурнăç шăнăрне çирĕплетмелле.
Ыйтусемпеле шухăш-ĕмĕте
Вĕсемпе сӳтсе килĕштермелле.

Икĕ тусăм пур — чунăмпа чĕре,
Икĕ тусăм пур. Ĕмĕрĕм — пĕрре.

20.03.13

КĔВЕ

Пĕр кĕвĕç тăкнă путсĕр сăмахсем
Пĕр пакăç çӳп купи пулса тăрсан,
Çав сăмаха сапалакан çын кĕлетки
Пĕррехинче, хăйĕн купи çине хăех
Такăнса ӳкнĕ тет те,
Куçне çӳп кĕнипе суккăрланса,
Ахрат çырми тĕпне ӳпĕннĕ тет.

Унăн тискер çилли улать тет
Çавă тĕпсĕр шăтăкран,
Çав шăтăка иленнĕ тет çăхан,
Çав шăтăка вĕçет тет
Сăвăслан, ӳпре-пăван.
Ĕрле-ĕрле пĕр путсĕр ĕç
Тăвасшăн имĕш, ирсĕр пĕртăван.

«Кĕвĕçе кĕве çиет»
Теççĕ ăслă чăвашсем.
Кĕвĕç вилсен, тепрехинче
Кĕве пулса килессе
Шахвăртнă ĕнтĕ вĕсем,
Пурнăçа сăна-сăна
Хайхи-майхилекенсем...

16.10.13

САНСĂР

Иксĕмĕр пĕрле çӳренисене
Манса кайрăн-им, манса кайрăн-им?
Пĕр-пĕрне савса килĕштернисем
Иртсе кайрĕç-им, иртсе кайрĕç-им?

Лăпкă çил вĕрет, шурăмпуç килет,
Ăшă кун шевли таврара çиçет.
Эпĕ сан пата янă саламсен
Ăшă пайăрки сан çине ӳкет.

Иксĕмĕр пĕрле хывнă юрăсем
Уçă сывлăшра сапаланччĕр-и?
Аслă вăрманта, аслă улăхра
Кайăк сассинче янăраччĕр-и?

Сансăр — миçе кун, сансăр — миçе каç,
Сансăр — миçе çул тăсăлчĕ кун-çул?
Чун-чĕрем ăшши эс пĕрре кăна,
Чун савни, чун савни, аса ил мана.
Аякран-и, çывăхран-и,
Хаксăр хаклă сасна пар,
Аякран-и, çывăхран-и,
Хаксăр хаклă сасна пар.
Кĕтеп, кĕтеп, кĕтеп, кĕтеп...

2013

ЧУНĂМ САВНИ ÇУМĔНЧЕ

Шурă Атăл, шурă Атăл,
Шурă Атăл хумханать.
Чун савнине аса илсен
Çамрăк чунăм хурланать.
Уйăх тăлăх, уйăх тăлăх
Çӳллĕ-çӳллĕ тӳпере,
Тусăм, эп те сансăр тăлăх
Çакă çутă тĕнчере.

Икĕ çыран пулман пулсан
Юхан шывĕ пулмĕччĕ,
Тусăм, эсĕ çумра пулсан
Хурланасси пулмĕччĕ.
Атăл урлă, Атăл урлă
Шывпа утса каçма çук.
Тусăм, сана манса кайса
Урăххине савас çук.

Хăмла çырли, хурăн çырли
Татса килтĕм вăрмантан,
Пĕрле çырла татнисене
Асилсемччĕ хушăран.
Асилсемччĕ, асилсемччĕ
Çеçке çурнă вăхăта,
Асилсемччĕ, асилсемччĕ,
Пăшăлтатнă сăмахна.

Шурă çĕмĕрт сĕре хитре
Шур пĕркенчĕк айĕнче,
Çутă тĕнче сĕре хитре
Чунăм савни çумĕнче.

2013

2014

Чăваш халăх артистки,
РФ тава тивĕçлĕ артистки
Любовь Федорова.

ЧР, РФ халăх артисчĕсем:
Нина Яковлева,
Нина Григорьева,
Николай Григорьев;
ЧР культурăн тава
тивĕçлĕ ĕçченĕ,
ЧНРадиовĕн продюсерĕ
Виктор Дмитриев.

ЧР, РФ культурăн тава
тивĕçлĕ ĕçченĕ, публицист-
куçаруçă Алексей Леонтьев
журналист.

ЧР культурăн тава
тивĕçлĕ ĕçченĕ Улькка
Эльменĕ çыравçă.

ĔМĔР ТĂРШШĔПЕ

Ĕмĕр тăршшĕпе сана юратса
Ĕмĕрлетĕп ĕмĕре, савни.
Пĕр мăшăр пулса пĕрле пурăнма
Пӳлĕхçĕ çырман пире, савни.

Куçран тинкерсе юмахланисем
Асăма вырнаçнă ĕмĕре.
Шăппăн юрлама килĕштернисем
Ăшăтнă пире иксĕмĕре.

Кăмăл çилĕсем хурлăн вĕрнипе
Хумханать-çке чунăм Атăл пек.
Уйрăлу килсе кӳрентернипе
Усăнать-çке пуçăм курăк пек.

Ай, кĕтмен çĕртен, шыраман çĕртен,
Хурлăха эс тупăнтăн, савни.
Хĕрпе каччă чух паллашнă пулсан
Пулăттăмăр тен, чи телейли.

Мĕн паллашнăран чунăмра пурнан,
Кирлĕ пулас çук пуль урăххи.
Çакă Çĕр çинче, çутă тĕнчере
Пултăн маншăн никамран та çывăххи.

1.03.14

ПУРНĂÇ КУСТĂРМИ

Пурнатпăр-и, пурнатпăр-и,
Телей курса пурнатпăр-и?
Телей курса пурнатпăр-и,
Çавна чунпа туятпăр-и?

Саватпăр-и, саватпăр-и,
Пĕрне пĕри саватпăр-и?
Пĕрне пĕри саватпăр-и,
Çавна чунпа туятпăр-и?

Сывлатпăр-и, сывлатпăр-и,
Кăкăр туллин сывлатпăр-и?
Кăкăр туллин сывлатпăр-и,
Çавна чунпа туятпăр-и?

Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр чарăнми —
Шăлтăртаттăр пурнăç кустăрми.
Шăлтăртаттăр пурнăç кустăрми —
Кăлтăр-кăлтăр-кăлтăр чарăнми.

1.03.14

САВАТТĂНЧЧĔ

Саваттăнччĕ, саваттăнччĕ,
Хыттăн ыталаттăнччĕ,
Хыттăн чуптăваттăнччĕ,
Тен, чăнах саваттăнччĕ.

Саваттăнччĕ, саваттăнччĕ,
Ăшшăн ачашлаттăнччĕ.
Ăшшăн юмахлаттăнччĕ,
Тен, чăнах саваттăнччĕ.

Саваттăнччĕ, саваттăнччĕ,
Парнесем параттăнччĕ.
Кучченеç йăтаттăнччĕ,
Тен, чăнах саваттăнччĕ.

Саваттăнччĕ, саваттăнччĕ,
Кăмăла уçаттăнччĕ,
Юратма ыйтаттăнччĕ,
Тен, чăнах саваттăнччĕ.

Савăнаттăм, ĕненеттĕм,
Кайăкăн вĕçсе çӳреттĕм.
Халь ăçта-ши эс? Пĕлмес...
Халь ăçта-ши эс? Пĕлмес...

1.03.14

ÇЫРМА ЮХАТЬ

Çырма юхать, çырма юхать,
Çумăр шапăртаттарать.
Сарă хĕрĕн куçĕ юхать,
Чĕри шачăртаттарать.
Хĕвел анать, хĕвел анать,
Шевлисене пуçтарать.
Сарă хĕрĕ чĕтре-чĕтре
Савни çумĕнче тăрать.

Уйăх тухать, уйăх тухать,
Сивĕ çутă çутатать.
Сарă хĕрĕн нӳрлĕ питне
Каччă тути ăшăтать.
Шуçăм килет, шуçăм килет,
Пайăркине пайăрлать.
Сарă хĕрĕн чун савниййĕ
Паян салтака каять.

Ирпеле те, кăнтăрла та,
Каçпала та, сĕм çĕрле,
Икĕ çамрăк тупа турĕç
Ĕмĕрех пулма пĕрле.
Пĕр çулталăк иртсе кайĕ,
Вăхăт хăвăрт çаврăнать.
Сарă хĕрĕ сар каччине
Чунтан кĕтсе пурăнать.

Çумăр çутăр, шывĕ юхтăр,
Хĕвел анса хăпартăр.
Савнă каччă савни патне
Ырă-сывă таврăнтăр.
Упăшкапа арăм пулса
Ăшă йăва çавăрччĕр,
Ачипчипе, мăнуксемпе
Ĕмĕрĕпех савăнччĕр.

Татăлаççĕ те ӳкеççĕ
Чăмăр çумăр пĕрчисем.
Çамрăк мăшăрсем пулаççĕ
Каччăсемпе пикесем.
Çамрăк ĕмĕр иртсе кайĕ,
Юлайрасчĕ выляса,
Иртсе кайĕ те çухалĕ,
Юлайрасчĕ савăнса.

1.03.14

СĔРЕП

Йăнăшсемшĕн,
Çылăхсемшĕн ӳкĕнсе
Килте-и, чиркӳре-и,
Хирте-и, вăрманта-и
Кĕлĕ вуласси —
Чи çутă савăнăç.

Савăнăç — сăлăнăç тĕрекĕ,
Çăлăнăç — пурăнăç сĕрепĕ,
Сĕреп сываттăр тĕнчене —
Çут тĕнчери этемсене
Усал тумасăр пурăнма,
Сĕреп сыхлатăр çынсене
Çылăх тума намăсланма...

11.03.14

ЙĔКĔР ЫВĂÇ

Пытаратăп питĕме
Йĕкĕр ывăçа,
Санăн куç хĕлхемĕсем
Сапăнчĕç куçа.
Вăтантарчĕç, вăтантарчĕç,
Вăтантарчĕç,
Пирĕн куç хĕлхемĕсем
Мăшăрланчĕç,
Йĕкĕр ывăç хӳттинче
Ытамланчĕç.

Сыптарам-и уçă шыв
Йĕкĕр ывăçран,
Чун киленĕç тумлисем
Ӳкрĕç куçăмран.
Шăпăртатрĕç, шăпăртатрĕç,
Шăпăртатрĕç,
Пирĕн куç хĕлхемĕсем
Йăлтăртатрĕç,
Йĕкĕр ывăç хӳттинче
Пăшăлтатрĕç.

Йĕкĕр мăйăр тĕшшине
Катса парам-и,
Йĕкĕрленнĕ тутасем
Пылакланччĕр-и?
Йĕкĕр ывăç, йĕкĕр ывăç,
Йĕкĕр ывăç,
Йĕкĕр ывăç ăшĕнче
Ăшă сывлăш,
Йĕкĕр ывăç ăшĕнче
Пирĕн пурнăç.

15.03.14

САНСĂР ПУÇНЕ

Миçе утăм,
Миçе утăм турăм-ши,
Миçе çухрăм,
Миçе çухрăм утрăм-ши? —
Сана куриччен, сана тупиччен.

Миçе хут-ши,
Миçе хут ыталаса,
Миçе хут-ши,
Миçе хут ачашласа
Юлтăм-ши сана, юлтăм-ши сана?

Миçе кун-ши
Иртрĕ эп пĕччен юлни,
Миçе çул-ши
Иртрĕ сансăр пурăнни,
Сансăр пурăнса сана манманни.

Сансăр пуçне урăххине
Ыталас килмест,
Сансăр пуçне урăххине
Чуптăвас килмест,
Сансăр пуçне урăххине
Ачашлас килмест,
Сансăр пуçне урăххипе
Пурăнас килмест.

15.03.14

КАЛЛЕХ

Каллех, каллех,
Каллех çăваççĕ ăшă çумăрсем,
Выляççĕ шуçăм шевлисем.
Каллех, каллех,
Каллех утатпăр çуммăн çавтăнса,
Пĕрле пулнишĕн савăнса.

Каллех, каллех,
Каллех калаççĕ купăсне çилсем,
Ташлаççĕ ташшине шывсем.
Каллех, каллех,
Каллех хуркайăкăн вĕçес килет,
Саркайăкăн юрлас килет.

Каллех, каллех,
Каллех çурхи илем эрешĕсем,
Çĕнелнĕ туйăм кĕввисем.
Каллех, каллех,
Каллех çиçеççĕ туйăм çеçкисем,
Ăшă сăмах пайăркисем.

Чун савнинчен лайăххи
Çуккă, çуккă урăххи.
Никам та çук урăххи
Чун савнинчен лайăххи.

16.03.14

ПĔР НИКАМА ТА

Унта шырарăм,
Кунта шырарăм,
Ăçта-ши эсĕ, шырани?
Ак, пĕрре куртăм,
Тӳрех-çке туйрăм,
Сана эп тупрăм, шырани.

Унта кайсан та,
Кунта кайсан та,
Каймастăн манăн куçăмран,
Хăть кăнтăрла-и,
Хăть те çĕрле-и
Тухмастăн манăн пуçăмран.

Мĕскер тăвам-ши,
Мĕскер калам-ши,
Сана хам майлă çаварма.
Мĕнпе тивем-ши,
Епле пĕлем-ши,
Сана, сан майлă юрама.

Пĕр сыпкăм шыв пек,
Пĕр кашăк пыл пек
Эп çăтса ярăттăм сана.
Пĕр никама та, пĕр никама та
Памастăп паянтан сана,
Тархасшăн, ан тирке мана.

19.03.14

ХĂНА ТАКМАКĔСЕМ

Ак, килтĕм хăнана,
Хапăл тăватри мана?
Кучченеçĕм чи тутли
Илсе килтĕм тăп-тулли.
Ак, сана купăста,
Тем тума та эс ăста.
Каса-каса тăварла
Тăвансене хăнала.

Ак, сана панулми,
Ак, сана çĕр çырли,
Сахăрла та сахăрла,
Хăнусене хăнала.
Ак, сана хур какай,
Парса ячĕ кукамай.
Хăть пĕçер, хăть ăшала,
Тăвансене хăнала.

Ак, сана хурлăхан,
Акăш-макăш ан хурлан.
Хуран кукли çаврала,
Хăнусене хăнала.
Ак, пĕр хутаç хăмла,
Йĕкĕр ывăç чăмăрла,
Кăрчамапа, сăрапа
Тăвансене хăнала.

Ак, сана аншарли,
Ан шарла уни-куни.
Черккесене тултарса
Хăнусене хăнала.
Ак, тата, мĕн тата,
Хĕрсе кайрăм, тупата,
Ай, тупата-тупата,
Питĕ лайăх-çке кунта.

Ак, тата, шăртти-шарт,
Ал çупатăп пулмалла.
Сăвăласа ташласа
Кайрăм мар-и тарласа?
Алă-ура сывă чух,
Кăмăл-туйăм шухă чух,
Эй, тусăм, ташша тух,
Яра пар та, ух! та ух!

Ай, эрех, ай, сăра,
Ĕçне турĕ пулмалла.
Эй, ара, мĕн ара,
Хăнара савăнмалла.
Ай, тата, мĕн тата,
Пуç çаврăнать мар-и-ха?
Юрлама та ташлама
Эпĕр маçтăр мар-и-ха?

Ай, тăван, тав сана
Хапăл тунăшăн мана,
Чăмăртам сан аллуна,
Саркалантăм пĕр кана.
Авкаланса юрларăм та
Ура хуçса ташларăм,
Каяс пулать, сывă юл,
Ăсатса яр, ална сул.

21.03.14

САВАС КИЛНИШĔН

Савас килнишĕн савнă эп сана,
Савас килмен пулсассăн, саваймастăм.
Савас килмен пулсассăн, сан çине
Куç хĕррипе те çаврăнса пăхмастăм.

Савас килнишĕн савнă эп сана,
Килмен пулсассăн, çывăха ямастăм.
Савас килмен пулсассăн, эп сана
Ачашланса кайса ачашлаймастăм.

Савас килнишĕн савнă эп сана,
Ыт ахальтен çумна пăчăртанмастăм,
Именнине, вăтаннине сирсе
Иленкĕн сĕртĕнсе чуптăваймастăм.

Савас килнишĕн савнă эп сана,
Ахаль, самантлăха та çывхартмастăм.
Савас килнишĕн савнă эп сана,
Савман пулсассăн, тачă çыхăнмастăм.

Савас килни, савас килни —
Кĕтсе илниййĕ тупăнни.
Савас килни, савас килни —
Туййăм вучахĕ чĕрĕлни.
Туййăм вучахĕ чĕрĕлни,
Çунса пĕтсен, сӳнсе ларни.

29.03.14

ПĔРЛĔХ

Пурăнас килет хитре, таса,
Пурнăçа савса, хисеп туса.
Пурăнас килет хавхаланса,
Пурнăç йĕркине чунпа туйса.

Йывăр вăхăтсем хупăрласан,
Ан пăрахтăрччĕ çумри тăван.
Ыррипе хурри çынсем тавра
Аякра та мар, ялан çумра.

Тăнăçлă, татуллă пурăнни —
Пурнăç тутине пĕлсе тăни,
Йывăрлăхсене çăмăллатса
Килĕшӳллĕн ĕмĕре тăсни.

Ирпе тăрсан ирĕклĕ пулни,
Каçпа выртсан канăç тупăнни —
Кулленхи çитĕнӳсен шайне
Ӳстерес шутпа çине тăни.

Çĕршывпа семье тытăмĕнче
Пĕрлĕх пархатарĕ йăл илсен,
Çĕршывпа семье тытăмĕнче
Пĕрлĕх пуррипе тĕрекленен.

29.03.14

КАШНИ ÇУРКУННЕПЕ

Кашни çуркуннепе эс аса илĕн
Эпир ăçта, мĕнле паллашнине,
Ешĕл вăрманăн ăшă кашлавне,
Шăпчăкпала саркайăк кĕввине.

Кашни çуркуннепе эс аса илĕн
Çавра уçланкăри чечексене,
Кĕрен сиренĕн çепĕç çеçкине,
Çутă çăлкуçăн çутă юррине.

Кашни çуркуннепе эс аса илĕн
Укăлчари йăмралăх хӳттине,
Куçран куçа хĕлхем вĕçнисене,
Таса уйра кăвайт чĕртнисене.

Кашни çуркуннепе эс аса илĕн
Чи пирвайхи сĕртĕнӳсен хĕмне,
Ман патăма епле васканине,
Мана епле типтерлĕн савнине.

Сан асăнта, сан асăнта
Эп пулса юлăп çуркунне.
Пĕррехинче, пĕр çуркунне
Эпир тупсаччĕ пĕр-пĕрне,
Савма сăмах парсаччĕ ĕмĕре...

29.03.14

ТУНСĂХЛАТĂП

Пирĕн сукмак кĕске пулчĕ,
Кĕске пулчĕ,
Ун вырăнне симĕс курăк
Шăтса тулчĕ.
Çерем тăрăх утса кайрăм,
Утса кайрăм,
Пирĕн ура йĕрĕсене
Тупаймарăм.

Йăмра айне пырса лартăм,
Йĕрсе ятăм,
Хурланнипе курăк тăрăх
Йăвалантăм.
Ĕмĕтленнĕ, ĕмĕтленнĕ,
Ĕмĕтленнĕ,
Кăвайта çакланнă ĕмĕт
Ĕнĕкленнĕ.

Тунсăхлатăп, тунсăхлатăп,
Тунсăхлатăп,
Тĕлĕкре те ĕлĕкхипе
Аташатăп.
Ĕлĕкхи ытарлă вăхăт
Иртсе кайрĕ,
Мăшăр пулма ĕмĕтленни
Пулаймарĕ.

Паллашмалла пулман пулсан —
Паллашмастăмăр.
Уйрăлмалла пулман пулсан —
Уйрăлмастăмăр.

1.04.14

ПИТĔ ЛАЙĂХ, ТĂВАНСЕМĔР

Эп паян сĕре хавасл ă,
Килтĕм чĕннĕ хăнана,
Тăвансем савса пăхаççĕ
Кĕрекери тăвана.

Пĕр кутамкка илсе килтĕм
Питĕ тутлă кучченеç,
Эрехне те, сăрине те,
Сарă питлĕ пӳремеч.

Ĕçессипе çиессинчен,
Ытларах — калаçасси,
Тăван халăх юррисене
Шăрантарса ларасси.

Параппанпа купăс сасси
Линкка-линкка авăнма,
Алă çупса, такмакласа
Чăваш ташши ташлама.

Питĕ лайăх, тăвансемĕр,
Пĕр-пĕрне сума сума.
Питĕ лайăх, тăвансемĕр,
Шăкăлтатса пурăнма.

Ши-ши! кайрĕ, ши! кайрĕ,
Пи-пи! кайрĕ, пи! кайрĕ.
Тăвансемпе тĕл пулсан та
Кăмăл çуталса кайрĕ.

2.04.14

ШУÇЧУМАН

Хăвăрт çывăрса каясчĕ,
Тĕлĕк курасчĕ,
Тĕлĕкре санпа пуласчĕ,
Сана савасчĕ.
Шуçчуманăн шуç урапи
Кăлтăр-кăлтăрти,
Шуçчуманăн йĕс таканĕ
Тăпăр-тăпăрти.

Шуçчуман çине ларасчĕ
Сан пата çитме,
Кĕмĕл шăнкăрав çакасчĕ
Сана илĕртме.
Шăнкăрав çумне çакасчĕ
Пăхăр тăнкăрав,
Шăнкăравпа тăнкăравăн
Илĕртӳллĕ шав.

Пăлханса тухса тăрасчĕ
Сан мана кĕтме,
Илĕртӳллĕн чуптăвасчĕ
Вĕри питĕме.
Ярăнса вĕçсе çӳресчĕ
Пĕлĕт хушшинче,
Уйрăлми çывăхланасчĕ
Тĕлĕк килĕнче.

Шуçчумана чĕнтĕм, чĕнтĕм,
Сас памарĕ шăхăрса.
Шуçчуман вăл йăраплан-ши,
Урхамах-ши, апăрша.

2.04.14

ПИРĔН УРАМ ЛЕШ ЕНЧЕ

Пирĕн урам леш енче
Ма йыт вĕрет-ши?
Тăкăрлăкпа, урампа
Такам çӳрет-ши?
Такам мар пуль,
Такам мар пуль,
Хĕрпе каччă пуль,
Уйрăлас килменнипе
Утаслаççĕ пуль.

Кĕтрĕм-кĕтрĕм тусăма,
Ăçта çӳрет-ши?
Урам урлă çӳреме
Йывăр терĕ-ши?
Сас памарĕ,
Сас памарĕ,
Мĕскер пулчĕ-ши?
Çырма урлă каçса килме
Мĕскер чарчĕ-ши?

Хăйĕн урам вăййинче
Савни тупрĕ-ши,
Хăйĕн кӳршĕ хĕрĕпе
Çуммăн утрĕ-ши?
Ял варринчи
Кĕпер çине
Анса тăрас-и?
Çăлтăр шыва ӳкнĕ тĕле
Куççуль тăкас-и?

Хĕр-тантăшсем улахалла
Кайрĕç пaçăрах.
Каччă-тусăм, каччă-тусăм,
Килччĕ хăвăртрах.
Эпĕ кĕçĕр кулянни
Юлтăр кĕçĕре,
Эпĕр санпа туслашни
Пултăр ĕмĕре.
3.04.14

ВĂХĂТ ЙĔППИ

Кун вăрăмланнă вăхăтра
Тавралăх тумĕсем кăтра.
Кунсем кĕскелнĕ вăхăтра
Тавралăх сăнĕ тунсăхра.

Кун кĕскелет сана кĕтсе,
Каç кĕскелет сана кĕтсе,
Вăрăма кайнă кĕтнисем —
Вăрăма кайнă çумăрсем.

Мĕн тĕрлĕ çимĕç пахчара,
Мĕн тĕрлĕ тĕслĕ панулми.
Сансăр пуçне çак таврара
Урăххи çук-шим ман валли?

Кун хыççăн кун васканисем —
Сансăр ирттернĕ вăхăтсем.
Сансăр кичем, сĕре кичем,
Вăхăтпа тан тапать чĕрем.

Ирпеле те кăнтăрла,
Ĕнтрĕкпе те каçпала,
Вăхăт йĕппи шаклаттарса
Яра парать малалла.
Вăхăт йĕппи хăвăрт кусни
Мĕншĕн пăсать кăмăла?
Вăхăт иртни — ĕмĕр иртни,
Сансăр иртни — пушăлла...

3.04.14

АСА ИЛЕТĚН-ШИ?

Аса илетĕн-ши, аса илетĕн-ши?
Шухăшунта манпа пĕрле
Укăлчана тухатăн-ши,
Уй хĕррипе утатăн-ши?

Аса илетĕн-ши, аса илетĕн-ши?
Шухăшунта манпа пĕрле
Йăмра патне çитетĕн-ши,
Çăлкуç шывне ĕçетĕн-ши?

Аса илетĕн-ши, аса илетĕн-ши?
Шухăшупа — савни тесе
Мана ятран чĕнетĕн-ши,
Çупăрласа илетĕн-ши?

Шухăш килет, шухăш каять,
Савăнтарать, хурлантарать...
Шухăш вĕçет, чупать, ӳкет,
Чĕркуçленет, упаленет,
Кăшкăра-кăшкăра макăрать,
Ĕсĕкле-ĕсĕкле лăпланать,
Пуçтарăнать, сапаланать,
Хăйĕнпе хăй ачашланать...
Асаилӳ... Асаилӳ...

3.04.14

ТЕЛЕЙ МАР-И?..

Кайӑксем юрлаççӗ,
Килчӗ çуркунне.
Кайӑк таврӑнать вӑл
Хӑйӗн йӑвине.
Юханшыв шарлать вӑл
Кунӗ-çӗрӗпе,
Юханшыв юхать вӑл
Хӑйӗн çулӗпе.

Чечексем çутаççӗ
Чакӑр çеçкине,
Чечексем пӗлеççӗ
Ӗмӗр кӗскине.
Ӑшӑ аннӑ вӑхӑт
Ӑшӑтать чуна,
Асилӳ кӑвайчӗ
Хӗретет сӑна.

Ачашларӑн мар-и
Ӑшӑ куçупа,
Ачашларӑн мар-и
Ӑшӑ аллупа?
Ӑшӑ, халь те ӑшӑ,
Сивӗнессӗм çук.
Ӗмӗрӗм иртсен те
Ӗмӗр манас çук.

Хуçнӑ ӗмӗт сапаки
Шанса кайрӗ-и,
Мӑшӑрланса пурнасси
Пулаймарӗ-и?
Ах, анчах та, телей мар-и
Эпӗр тӗл пулни? —
Ӗмӗрлӗхе асӑнмалӑх
Калаçса курни...

3.04.14

ĂНСĂРТРАН

Пĕр каçпа тухсассăн
Укăлча хĕрне,
Вăл — юмахри улăпăн
Тухрĕ куç умне.

Йăпатма пикенчĕ
Эп пăлханнăран.
Тĕл пулса паллашасси
Пулчĕ ăнсăртран.

Тĕлĕнтĕм, килентĕм,
Килĕштертĕм пуль,
Эп ăна ĕнентĕм,
Улталантăм пуль...

Йăпăртлăха килчĕ
Йăлкăнса илме,
Пăлтăр-палтăр çилĕн
Вĕçрĕ хирелле.

Хыççăн талкăнмастăп,
Ҫайрĕ пулсан, кайтăр.
Йăпăлти сăмахĕсене
Çил ури таптатăр.

4.04.14

ЧАСАХ...

Татах та юр çăвать,
Татах та юр çăвать,
Çуркуннене килме чарасшăн-ши?
Тавралăхăм — ĕнтĕркесе кайса
Тăрать йĕпе хулпуççине усса.

Татах та йывăççем,
Татах та йывăççем
Папкисене хуплаççĕ шăнасран,
Çанталăк пурпĕрех ăшăнасса
Çулсеренех кĕтеççĕ хумханса.

Татах та пĕлĕтсем,
Татах та пĕлĕтсем
Кутамккине салтаççĕ майĕпен.
Тăкăнакан эрешлĕ юр пĕрчи
Тата тепре çĕре шураттăр-и?

Часах, ак, килĕ капăр çуркунне,
Илемĕпе тултарнă саппунне
Салтса сапалĕ çĕр анлăшĕпе —
Тавралăх çи-пуçне ешĕллетсе,
Япшаррăн, çĕнĕлле хитрелетсе.

Часах, часах, ак, çураки пуçланĕ,
Ĕçре хĕрелĕ ал тупанĕ.
Ĕçчен пике-çуркуннепе
Сăн-пит хĕрелĕ хĕвелпе,
Ĕççи те акатуй кĕввисемпе.

5.04.14

КАЛАСАМЧЧӖ КАШНИ КУН

Пӗрре кала, тепре кала,
Ман татах илтес килет.
Эсӗ мана юратнине
Пӗрмаях пӗлес килет.

Пӗрре кала, тепре кала,
Чӑмӑртаса ытала.
Хӑвӑн çумна пӑчӑртаса
Ыраттар çан-çурӑма.

Пӗрре кала, тепре кала,
Калас килтӗр яланах.
Юратнине каламашкӑн
Нихӑçан та ан пӑрах.

Юрататӑп тесе суйма
Никама та юрамасть.
Суяканӗ суять пулсан
Хӑй те телей кураймасть.

Эсӗ мана юратнине
Каласамччӗ кашни кун.
Эсӗ мана юратнипе
Чечекленет манӑн чун.

5.04.14

ЧĂННИПЕХ ТЕ ЮРАТАТЬ

Юрататăп, юрататăп
Терĕ мана чун савни,
Чăнахах-ши, суя-ши,
Тĕрĕссинех калать-ши?
Юратать-и мана тусăм? —
Ыйтрăм вĕçен кайăкран.
Юратать тет, юратать —
Чĕвĕлтетсе хуравлать.

Юратать-и мана тусăм? —
Ыйтрăм эпĕ чечекрен.
Юратать тет, юратать —
Пилĕкĕнчен авăнать.
Юратать-и мана тусăм? —
Ыйтрăм эпĕ йывăçран.
Юратать тет, юратать —
Çулçисемпе ал çупать.

Юратать-и мана тусăм? —
Ыйтрăм шапăрти шывран.
Юратать тет, юратать —
Йăлкăшса шăнкăртататать.
Юратать-и мана тусăм? —
Ыйтрăм сарă хĕвелтен.
Юратать тет, юратать —
Пайăркипе çупăрлать.

Юратать-и мана тусăм? —
Ыйтрăм тулли уйăхран.
Юратать тет, юратать —
Хуçне хĕссе йăл! кулать.
Юратать-и мана тусăм? —
Ыйтрăм çутă тĕнчерен.
Юратать тет, юратать —
Пил парса телей сунать.
Юратать-и мана тусăм? —
Ман чăнне пĕлес пулать.
Илтрĕм, чăн та юратать,
Куртăм, чăн та юратать.
5.04.14

ЫЛТĂН-КĔМĔЛ

Кĕмĕл çĕрĕ парнелерĕн —
Кĕмĕллентĕм:
Йăвашлантăм, çемĕçлентĕм,
Çепĕçлентĕм.
Кĕмĕл туйăм йăлтăртатрĕ,
Чăлтăртатрĕ,
Кĕмĕл кăмăл шăнкăравĕ
Шăнкăртатрĕ.

Ылтăн сулă парнелерĕн —
Ылтăнлантăм:
Çирĕплентĕм, хĕрӳлентĕм,
Сапăрлантăм.
Ылтăн туйăм йăлтăртатрĕ,
Чăлтăртатрĕ,
Ылтăн кăмăл шăнкăравĕ
Шăнкăртатрĕ.

Ылтăн-кĕмĕл шерепийĕ
Асăнмалăх:
Савăнмалăх, тав тумалăх,
Пурăнмалăх.
Ылтăн-кĕмĕл туйăм уççи —
Савнă тусăм,
Ылтăн-кĕмĕл кăмăл хуçи —
Мăшăр тусăм.

5.04.14

САНА КУРСАН, САВӐННИПЕ

Сана курсан, савӑннипе
Куҫӑм йӑлкӑшма пуҫлать,
Сана курсан, савӑннипе
Пуҫӑм ҫаврӑнма пуҫлать.

Сана курсан, савӑннипе
Ӑшчик вӗреме пуҫлать,
Сана курсан, савӑннипе
Чӗлхе ирӗлме пуҫлать.

Сана курсан, савӑннипе
Сӑнӑм хӗрелме пуҫлать,
Сана курсан, савӑннипе
Кӑмӑл хусканма пуҫлать.

Сана курсан, савӑннипе
Кӑшкӑрса ярас килет,
Сана курсан, савӑннипе
Ытамна ӳкес килет.

Пуҫа кӑкру ҫине хурса
Ҫывӑрса каяс килет,
Ҫывӑрса тӑрас килет,
Вилсе чӗрӗлес килет...
Савӑнни вӑл савӑнни-ха,
Мӗн пире малта кӗтет?

5.04.14

ВАТТИСЕМ ВĔРЕНТНИНЧЕН

Улталаса, вараласа
Çын кăмăлне хуçма хатĕр,
Çын кăмăлне таптас текен
Уни-куни сахал мар.

Кăмăлна хупса çӳре,
Лăпкăн авăстăр чĕре.
Уçă алăкран ялан
Сĕкĕнет ӳпре-пăван.

Никама та ан ĕнен,
Ан пул тимсĕр шăлйĕрен,
Хыпар çитрĕ? — тĕрĕсле,
Ан ыраттăр пуç, ĕнсе.

Никампа та ан ятлаç,
Çăвар карма юрамаç,
Сăмах вăрăм хӳреллĕ,
Хӳри вĕçĕ хиврелле.

Ăмсану пулать — хури,
Пур тет ăмсану — шурри.
Йĕкĕрешпе тĕл пулсан
Аташăнса ан пăтран.

Вĕçкĕн сăмах вĕçтерсе
Пăс кăларса ан çӳре,
Кĕвĕçӳпе ан чирле,
Акăш-макăш ан ĕрле.

Пурнăç шăнăрĕ — пĕлӳ,
Асăрхаттару — сĕнӳ,
Кашни сĕнӳ — тĕрĕслев,
Икĕ вĕçлĕ хирĕçлев.

5.04.14

ТĔЛ ПУЛСА УЙРĂЛСА КАЙИЧЧЕН

Тĕл пулса уйрăлса кайиччен,
Пирĕн хушăра çиçет хĕлхем.
Уйрăлсан, çав хĕлхем ташшине
Асилсе, асилсе киленсем.
Асилсе мана, савăн пĕр кана.

Тĕл пулса уйрăлса кайиччен,
Пирĕн хушăра çӳрет юмах.
Уйрăлсан, çав юмах çаврине
Асилсе, асилсе киленсем.
Асилсе мана, савăн пĕр кана.

Тĕл пулса уйрăлса кайиччен,
Пирĕн хушăра вĕçет телей.
Уйрăлсан, çав телей ăшшине
Асилсе, асилсе киленсем.
Асилсе мана, савăн пĕр кана.

Тĕл пулса уйрăлса кайиччен,
Чĕресем хываççĕ кĕвĕсем.
Уйрăлсан, ик чĕре юррине
Асилсе, асилсе киленсем.
Асилсе мана, савăн пĕр кана.

5.04.14

СĂНАВ...

2 тĕрленчĕк

1

Ыйтатăп сывлăшран:
«Эп çаранти чечексемпе калаçнине
Илсе çитер савни патне...».
Анчах: ку эпĕр утнă çаран мар,
Ку — кăçалхи çаран.

Ыйтатăп сывлăшран:
«Эп çыранпа утса шывпа калаçнине
Илсе çитер савни патне...».
Анчах: ку эпĕр утнă çыран мар,
Ку — кăçалхи çыран.

Ман çаранпа та, çыранпа та
Утассăм килчĕ çаруран...
Мĕн чĕпĕтет ура тĕпне?
Курăк... Хăйăр...
Вĕсем те кăçалхи...
Мана кунта
Йыхăрса илчĕ — пĕлтĕрхи...

2

«Хĕрарăмăн акула пек
Е кушак пек пулмалла» —
Пĕр арçын çапла каларĕ,
Шӳтлем пекки тукаларĕ.
Шăртлă пулă, чĕрĕп евĕр
Хĕрарăма хурларĕ,
Шăрчĕ, йĕппи — хӳтĕленме! —
Çавна шута хумарĕ.

Хăйне пăхсан — шăши пек,
Вĕтĕ килька пулă пек,
Акулăпа кушак шăлĕн
Çемми пулма хатĕр пек...
11.04.14

САНСĂР КАМА САВАС?

Вăхăт чупса иртет,
Вăхăт юртса иртет,
Вăхăт вĕçсе иртет,
Вăхăт çиçсе иртет.
Ăçта çӳретĕн-ши,
Кампа çӳретĕн-ши,
Урăххине епле
Саватăп тетĕн-ши?

Сана курас килет,
Санпа пулас килет.
Тусăмçăм, тусăмçăм,
Эс манăн пурнăçăм.
Ĕмĕрĕм, ĕмĕрĕм —
Тĕтĕмлĕ тĕлĕкĕм.
Тĕлĕкĕм, тĕлĕкĕм —
Сăнчăрлă ирĕкĕм.

Ăша кăшлать пушар,
Тусăм, килсем, хăтар.
Иккĕн пĕрле, атя
Вучах чĕртсе ярар.
Вучах чĕрĕлменни —
Пӳлĕхçĕ пӳрменни.
Пĕтрĕм, мĕнле пурнас,
Сансăр кама савас?

17.04.14

ЁМĔР ТĂРШШĔ

Такăнмăттăм, такăнмăттăм,
Тумхах такăнтарчĕ пуль.
Хурланмăттăм, хурланмăттăм,
Хурлăх чыхăнтарчĕ пуль.
Чупса кайрăм, чупса кайрăм,
Утса каймаллатчĕ пуль,
Ура айне пăхса утсан
Чиперех пулатчĕ пуль.

Утасси те, чупасси те —
Пирĕн пурнăç çулĕсем,
Савăнса та, тăвăнса та
Хура-шур курассисем.
Йĕресси те, куласси те
Пирĕн куçа йĕпетет,
Тĕл пулса уйрăласси те
Пирĕн чуна чĕпĕтет.

Вĕçен кайăк, вĕçен кайăк
Пĕр килет те пĕр каять,
Пирĕн ĕмĕр алăкĕсем
Уçăлать те хупăнать.
Килнĕ пулсан, килнĕ пулсан —
Пирĕн пурпĕр каймалла,
Çӳлти киле таврăниччен
Çĕр çинче пурăнмалла.

Пирĕн ĕмĕр — ĕмĕр тăршшĕ
Куçа уçса хупиччен,
Пирĕн ĕмĕр — ĕмĕр тăршшĕ
Сывлăш пĕтсе çитиччен.
Пĕртен пĕрех пĕр пурнăçа
Ма хурланса ирттерес?
Шур çӳçеллĕ кăмăлсене
Çиле майлă вĕçтерес.

Ай, эпир те вĕçен кайăк,
Килетпĕр те каятпăр,
Йăва туса, чĕп кăларса
Ĕмĕрсене тăсатпăр.
Турă пане пурнăç çулĕ
Аялалла, çӳлелле,
Турă панă пĕр пурнăçа
Чиперлетме пĕлмелле.

Тăван килĕм, атте-анне
Тавах сире ĕмĕре,
Тăван çĕрĕм, тăван халăх
Ешереççĕ чĕрере.
Пирĕн пурнăç телейĕсем
Çитĕнеççĕ çемьере,
Пирĕн пурнăç илемĕсем
Çӳл тӳпеллĕ тĕнчере.

Ай, пурнăçăм, иртсе кайма
Ытла хытă ан васка,
Тӳсме пане хурлăхсемпе
Ытла хытă ан лăска.
Куç çутине хĕмлентерсе
Хĕпĕртӳллĕн савнар-и,
Пурнас килсе тăнипеле
Хавхаланса пурнар-и?

17.04.14

ÇУ УЙĂХĂН ВĔÇĔНЧЕ

Çуркуннехи тӳпере
Çурла уйăх авăнать,
Çулçă сарнă йывăçсен
Çепĕç çеçки çурăлать.

Çуркуннепе — çуйăху,
Çуркуннепе — çураçу.
Ай, пуçланчĕ çураки,
Уйсен-хирсен ярапи.

Ял урамĕн тăршшĕпе
Ача-пăча вăй вылять,
Аслисене тăнласа
Йăран лартма пулăшать.

Çĕкленӳллĕ туйăмсем,
Илĕртӳллĕ кăмăлсем,
Вĕлкĕшеççĕ сывлăшра
Çутçанталăк шевлисем.

Çу, çу, çумăр çу,
Çумăр патăр ăнăçу.
Пĕлĕт алли сапалатăр
Пирĕн çине пылпа çу...

22.05.14

КАЯХ ĔНТĔ

Купăсна тăса-тăса
Юрă юрлани,
Мана ĕлĕкхисене
Аса илтерни.

Иртсе кайнă çамрăклăх
Таврăнмĕ тепре.
Ĕлĕкхисем тавралла
Уссăр ан çӳре.

Ан юрла тек, ан юрла,
Купăсна пуçтар.
Йывăç, тымартан хăрсан
Чĕрĕлесшĕн мар.

Эсĕ маншăн тинь кăна
Ан та тунсăхла,
Кăмăлăма çавăрма
Ан та шухăшла.

Пуçтарăннă çулупа
Аяккалла кай.
Асаплантăмăр пĕрле
Ахалех самай.

26.05.14

АХ, ПĔЛЕСЧĔ

Ах, пĕлесчĕ, асилет-ши
Ман савниçĕм ман çинчен.
Ах, пĕлесчĕ, астăвать-ши
Эп ăна савни çинчен.

Ах, пĕлесчĕ, асилет-ши
Пирвайхи тĕлпулăва.
Ах, пĕлесчĕ, астăвать-ши
Пирвайхи ыталăва.

Ах, пĕлесчĕ, асилет-ши
Вăтанса чуптунине.
Ах, пĕлесчĕ, астăвать-ши
Тутасем тĕлкĕшнине.

Ах, пĕлесчĕ, асилет-ши
Чарăнми калаçнине.
Ах, пĕлесчĕ, астăвать-ши
Кăвайтсем çунтарнине.

Ах, пĕлесчĕ, асилет-ши
Чун савниçĕм тенине,
Ах, пĕлесчĕ, астăвать-ши,
Ĕмĕр савăп тенине.

28.05.14

ИКĔ САРĂ КАЙĂК

Икĕ сарă кайăк
Тухнă уçăлма,
Шăрçаланнă сывлăм шывне
Тутанса пăхма.
Иккĕн çуммăн ларнă
Пĕр турат çине,
Иккĕн çуммăн вĕçсе аннă
Курăксем айне.

Икĕ кайăк сыпнă
Сывлăм шăрçине,
Ик çунатне хурса янă
Пĕр пĕрин çине.
Икĕ сарă кайăк
Янă юрласа,
Ик йăвари чĕппийĕсем
Ларнă тăнласа.

Икĕ кайăк вĕçнĕ
Икĕ еннелле,
Икĕ кайăк вĕçсе кайнă
Хăйсен килнелле.
Чĕлтĕр-чĕлтĕр çиçнĕ
Сывлăмăн шăрçи,
Чĕлтĕр-чĕлтĕр сывлăм шăрçи,
Тен, куççуль шăрçи...

Икĕ сарă кайăкăн
Килĕ — пĕр вăрман.
Икĕ йăва хушшинче
Çавракa çаран.

20.07.14

ПУРНĂÇ ШАВĚ

Тухас терĕм, тухас терĕм
Атăл хĕррине,
Итлес терĕм, итлес терĕм
Шыв шавланине.
Атăл шывĕ, Атăл шывĕ
Çиле пăхăнать,
Атăл шывĕ, Атăл шывĕ
Çилпе хумханать.
Атăл шывĕ васкаса юхать,
Атăл шывне тинĕс йышăнать.

Ĕмĕр тăршшĕ, ĕмĕр тăршшĕ
Çĕр çул тееççĕ,
Ĕмĕр тăршшĕн вăрăмăшне
Çулпа виçеççĕ.
Çулĕ вăрăм, çулĕ вăрăм,
Е сĕре кĕске,
Çул вĕçĕнче, çул вĕçĕнче
Пĕчĕк тĕмеске.
Ĕмĕр тăршшĕ шăпа аллинче,
Ĕмĕр çути шăпа куçĕнче.

Килсе каяс, килсе каяс
Терĕм хăнана,
Ырă сунса ырă тума
Хаклă тăвана.
Ырă кăмăл, ырă туйăм
Чуна ăшăтать,
Чун ăшшийĕ, чун ăшшийĕ
Ăша çутатать.
Атăл шывĕ шавласа юхать,
Пурнăç шавĕ уçлăхра юлать.

7.09.14

ИРТЕТ...

1

Пыллă сăран техĕмлĕ шăршин —
Сан паталла...
Кикак-кикак хуркайăксен сассин —
Сан паталла...

Кăвайтăн йӳçĕ тĕтĕмĕн —
Сан паталла...
Улăх-çаран сĕткенлĕ сывлăшĕн —
Сан паталла...

Эсĕ туймастăн пулмалла,
Туйнă пулсан, сас памалла...

2

Кун хыççăн кун иртет.
Çулталăк хăйĕн вăхăтне
Уйăхсемпе виçет.

Хура кĕр кунĕсем...
Хĕвел пăхсан та,
Тунсăх хупăрлать.
Çил — йывăç-курăка кăшлать.
Пакша та, çисе янă
Мăйăр хуппине çĕре сурать.
Кăмпа нумай,
Ăна та пуçтараççĕ.
Ун тунине те
Пуççăр хăвараççĕ.

Кичем...
Йĕпхӳ мĕкĕлтетет...
Иртет...
Ак, юр выртать те хĕл ларать.
Хĕле кĕрсе —
Çуркуннене тухасчĕ,
Тĕнче ешернине
Татах курасчĕ...

22.09.14

ТАВРĂН...

Эп ăна савма пăрахнă мар-и?
Пăрахма шутланă тахçанах.
Пăрахассипе ăнран кайман-и?
Пăрахман пулас, вăл асăмрах.

Вăтануллăн, асăм ытамне ўксе —
Иртнĕ вăхăт килĕнчи туруменче:
«Таврăнсамччĕ тусăм, кун пек таврăн,
Каç пек таврăн — çаврăн ман тавра,
Кил те пурăн, пурăн ман çумра...» —
Шăппăн кĕл туса пăшăлтатни
Туйăма те йăпатни, те çуйхатни...

24.11.14

КИЛПЕТСЁРЛЁХ

Тин шăтса тухнă ешĕл курăка:
«Пĕри пĕтсен тепри шăтать» тесе
Лапчăтса имĕрнĕ пĕр кĕтĕк этемкке
Килпетсĕр хăтланни, тăмсайланни.

Тин çеç çеçкене ларнă çĕмĕрте:
«Пĕр-ик туратсăр чухăна юлмасть» тесе
Хуçа-хуçа илсе килти сĕтел çине лартни
Е такама парнелени —
Çеçке-çырла пуласлăхне хуçса
Килпетсĕр хăтланни, тăмсайланни.

Килпетсĕр çын курăка çеç-и,
Йывăçа çеç-и шелсĕррĕн ватать?
Вăл çынсемпе те тăшманла куштанланать.
Килпетсĕрсем килпетсĕр пулнинче
Кам айăпĕ каçăрăлса пуçтахланать?..

2014

2015

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, музейçĕ Эдуард Бахмисов.

ЧР журналисчĕсен пĕрлешĕвĕн ертӳçи, филологи наукисен кандидачĕ Валерий Комиссаров доцент.

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ЧНРадиовĕн продюсерĕ Виктор Дмитриев; ЧР наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, филологи наукисен докторĕ Виталий Родионов профессор; Чăваш халăх артисчĕ Иван Иванов доцент.

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Жуков композитор.

ÇӲЛ ТӲПЕРИ ÇĂЛТĂРСЕМ

Çӳл тӳпери çăлтăрсем,
Çӳл тӳпе чечекĕсем —
Çиçеççĕ, çиçеççĕ,
Çӳл тӳпене чĕнеççĕ.

Уçланкăри чечексем,
Сĕм вăрман илемĕсем —
Çиçеççĕ, çиçеççĕ,
Уçланкăна чĕнеççĕ.

Санпала çӳренисем,
Сан çумна сĕртĕннисем —
Асăмра, асăмра,
Хĕрсе кайнă ăшăмра.

Çакă çутă тĕнчере
Маншăн эс пĕртен-пĕрре,
Сывлатăп, сывлатăп,
Сан ăшшупа сывлатăп.

Ай, савниçĕм, савниçĕм,
Чун ăшши — киленĕçĕм.
Ай, савниçĕм, савниçĕм,
Чун çути — телейĕмçĕм.

1.01.15

КАЙ...

Тунсăх пусать чунăма,
Шелсĕррĕн пусать.
Хурлă чунăм пичĕ тăрăх
Вĕри шыв юхать.

Чунăм, манăн чĕрене
Ма ыраттаран?
Кăтра ҫӳҫлĕ яш каччăна
Мĕншĕн юратан?

Тунсăх тĕтри ăшĕнче
Ним те курăнмасть,
Ăшă хĕвел пайăркисĕр
Сывлăм йăлкăшмасть.

Ҫутăях та туйăм сăнĕ
Мĕншĕн тĕксĕмленчĕ?
Савнипе телей курас
Шанчăкĕ шĕвелчĕ.

Тунсăх, сирĕл те ăсан
Тĕтрепе пĕрле,
Чĕремрен те чунăмран
Кай, тек ан йĕрле.

1.01.15

ЭПĔР САНПА ПĔРЛЕ ЧУХНЕ

Эпĕр санпа пĕрле чухне
Хĕвел те ăшшăнрах пăхатчĕ,
Пирĕн çине ÿкме пуçланă
Çумăр та çемçенрех çăватчĕ.

Эпĕр санпа пĕрле чухне
Вĕçеттĕмĕр, тен, тӳпере,
Ишеттĕмĕр, тен, тинĕсре —
Çутă, таса ирĕклĕхре.

Эпĕр санпа пĕрле чухне
Тавралăх сăнĕ улшăнатчĕ,
Çанталăк та, вĕри е сивĕ —
Кăмăллараххăн туйăнатчĕ.

Пайăрка евĕр йĕппипе,
Çитмĕл те çичĕ çиппипе
Тур(ă) Амăшĕ пире валли
Пĕр мăшăр алшăлли тĕрлетчĕ...

Пĕр мăшăр асамат кĕперĕ
Асам хĕмне сапса çиçетчĕ,
Ман тутана пĕçертнине
Эпĕ сана парнелесеччĕ.

Эпĕр санпа пĕрле чухне
Пирĕнпеле телей çӳретчĕ...

2.01.15

СЛАКПУÇ ЧĂВАШĔСЕНЕ

Слак шывĕ хĕрринчи Слакпуç ялне,
Ивановпа Ухсай тăван çĕрне
Чунтан саватпăр эпĕр, чăвашсем,
Таймапуçах сире, хисеплĕ несĕлсем.

Нарспипеле Сетнерĕн Силпине
Килсе курас килет çулсеренех.
Слакпуç чăвашĕсен ĕçченлĕхне
Чăваш тĕнчи пĕлет ĕмĕртенпех.

Кĕçтенттипе Якку чупса çӳренĕ
Урам кукри яланхиллех хитре.
Икĕ музей, ик тавракурăм шайĕ
Варнаçнă икĕ кӳршĕллĕ пӳртре.

Пушкăрт тăрăхĕнчи чăваш çынни
Ĕмĕрлĕхе юлсам чăваш пулса,
Мĕнпур йывăрлăха, пăтăрмаха çĕнсе
Пурăн хăпартланса, хăватланса.

Ивановпа Ухсай тĕнчи пуртан
Чăваш туять хăйне патвар, пуян.

4.01.15

ВĂЙĂСЕМ

Ешĕл улăх çийĕнче
Вĕлкĕшеççĕ лĕпĕшсем,
Лĕпĕш çунатти çинче
Çиçкĕнеççĕ сăвăсем.
Сăвăсем, сăвăсем-
Сывлăм шăрçи тĕслисем.

Çавра кӳлĕ çийĕнче
Чĕлкĕшеççĕ чĕкеçсем,
Чĕвĕл-чĕвĕл сассисем —
Чĕнкĕл-чĕнкĕл кĕвĕсем.
Кĕвĕсем, кĕвĕсем —
Кĕмĕл кĕсле çаврисем.

Куçăм-пуçăм çийĕнче
Çаврăнаççĕ пĕлĕтсем:
Шĕлепкеллĕ шухăшсем,
Шӳлкемеллĕ ĕмĕтсем.
Шухăшсем, ĕмĕтсем
Шуçăм тĕрри тĕслисем.

Аслă вăрман катинче
Йĕкĕтсемпе пикесем,
Шăпчăксем, сар кайăксем —
Шăпăрсемпе купăссем.
Юрăсем, ташăсем —
Ăрăскаллă вăйăсем.

12.02.15

АЙ, ÇАВРĂНАТЬ...

Ай, çаврăнать, çаврăнать,
Хура пĕлĕт çаврăнать.
Кунĕпе те çĕрĕпе
Çумăр чашлаттарнипе
Çутă тĕнче йĕп-йĕпе.

Ай, çаврăнать, çаврăнать,
Тĕтĕм унки çаврăнать.
Кăмакине хутрăмăр,
Кăравайне лартрăмăр,
Пĕçерсе кăлартăмăр.

Ай, çаврăнать, çаврăнать,
Айван пусăм çаврăнать.
Чун варлине курасси —
Линкка-линкка авнасси,
Чуппа-чуппа тăвасси.

Ай, çаврăнать, çаврăнать,
Пирĕн ĕмĕр çаврăнать.
Çак ĕмĕре пурнасси —
Йĕресси те куласси,
Курмаллине чăтасси.

Илсе килчĕç хăнана
Пурăнмашкăн пĕр кана.
Шăлтăр-шалтăр самана,
Ан тăрмала ман чуна.
Вăхăт çитсен кайăпăр:
Анăпăр, хăпарăпăр.

25.02.15

МАНСА КАЙРĂН ПУЛЬ

Тĕттĕмленчĕ —
Каç та пулчĕ пуль.
Пĕлĕтленчĕ —
Çумăр çăвать пуль.

Тĕтреленчĕ —
Сывлăм ӳкрĕ пуль.
Хĕвелленчĕ —
Курăк типрĕ пуль.

Сенкерленчĕ —
Тул çутăлчĕ пуль.
Ĕмĕр иртрĕ —
Сансăр иртрĕ пуль.

Тĕлпулăва чĕнмерĕн,
Чĕнмерĕн —
Манса кайрăн пуль,
Манса кайрăн пуль...
Мĕншĕн савмастăн-ши мана,
Сансăр никам та кирлĕ мар мана.
Кирлĕ мар, кирлĕ мар,
Урăххисем кирлĕ мар.
Сансăр никам та кирлĕ мар.
Манса кайрăн пуль...
Манса кайрăн пуль...

8.03.15

МАЛАЛЛА

Çурхи çумăр пек
Иртсе кайтăр тунсăх,
Çурхи çумăр пек
Юхса кайтăр шывпала.
Шывпала, шывпала,
Юхса кайтăр шывпала.
Тунсăх юхса кайтăр, кайтăр
Çурхи çумăрла.

Кĕрхи тăвăл пек
Иртсе кайтăр хурлăх,
Кĕрхи тăвăл пек
Вĕçсе кайтăр таçталла.
Таçталла, таçталла,
Вĕçсе кайтăр таçталла.
Хурлăх иртсе кайтăр, кайтăр
Кĕрхи тăвăлла.

Пирĕн ĕмĕрсем —
Пирĕн ырлăх-пурлăх.
Пирĕн ĕмĕрсем —
Тапăртатчĕр малалла.
Малалла, малалла,
Пĕлме паман малалла.
Пирĕн ĕмĕр иртсе кайтăр,
Кайтăр малалла.

9.03.15

УЛТАВ

«Эс — пур» тесе
Хавхаланса пурнаттăм,
Чун тăвăлса çитсессĕн эс мана
Лăпланăç парасса шанаттăм.

Эс çук иккен, пачах та çук.
Эс пулнă-и? Пачах пулман,
Йывăрлăха кĕрсе ӳксен
Нихçан та ман çумра тăман,
Нихçан, нимпе те пулăшман.

Ăçтан? Эсĕ çуккишĕн кулянса
Сана эп шутласа кăларнă,
«Эс — пур» тесе эпĕ хама
Хама кирлишĕн улталанă.

Ултав та ывăнса çитет суйма.
Суя та ывăнса çитет тунма.
Эс — çук.
Пулман. Пулас та çук.

Эп шутласа кăларнă ĕмĕлкӳ кăна
Ман куçăмра курăнса илнĕ
Хушăран, сайра хутран...
Эп хама хам
Улталама шут тытнăран...

20.04.15

СУМА СУНИ

Ман пур ҫӗре те ёлкӗрес килет,
Ман пур ӗҫе те хутшӑнас килет.
Килет пулсассӑн — вӑхӑт тупӑнать,
Вӑхӑт тупма, Турри, тен, пулӑшать.

Сӑвӑ калама та, юрӑ юрлама
Шкулта мана ача-пӑча кӗтет.
Ҫыравҫӑ ӗҫӗпе паллаштарма
Вулавӑш та тӗлпулӑва чӗнет.

Манӑн е уявра, е хаклавра,
Театрта та керменте, вулавӑшра —
Чечек кӑшӑлӗпе е парнепе
Халӑх умне тухса калаҫмалла.

Куракансем хаваслӑн ал ҫупсан,
Юбилярсем телейлӗн тав тусан
Хамӑн ӗҫ-пуҫ та аванах пырать,
Ыр тунӑшӑн ырри килсех тӑрать.

Ҫамрӑккисем «аппа» тесе чӗнни,
Пӗр ҫулхисем «юлташ» та «тус» тени —
Эп пур ӗҫе те вӑхӑтра тунишӗн —
Тен, чӑнахах, хисеплесе сума суни.

9.05.15

ПУРНĂÇПА ТĔЛĔК

Ăçта эс çук — вăл манăн пурнăç,
Ăçта эс пур — вăл манăн тĕлĕк.
Чун-чĕрене йăпатнă савнăç —
Вăл пулнă ĕлĕк, ĕлĕк, ĕлĕк...

Ăçта эс пур — вăл манăн тĕлĕк,
Сана кĕтсе кӳтет пуçелĕк.
Эс аякра, тен, çывăхра-ши,
Тепре тĕл пуласси хăçан-ши?

Чун-чĕрене йăпатнă савнăç —
Эс ман хĕвел, ăршаллă канăç.
Кун-çулăма çутатнă евĕк —
Анчах вăл пулнă ĕлĕк, ĕлĕк...

Ыйăхри тĕлĕк мĕн-ши, мĕн-ши?
Тусăм, эс маншăн кам-ши?
Манпа шыва, вута кĕме
Татах килсем тĕлĕкĕме...

Кунçулăм тăршшĕ-анлăшне
Санпа эп пайлăттăм, савниçĕм.
Анчах та туйăм шанăçне
Çунтарчĕ аслатиллĕ çиçĕм.

8.06.15

ÇЕÇПĔЛ

Тӳпе шурăмпуçпа кĕренччĕ,
Хĕвел, хăпарнăçем чиперччĕ.
Тем пулчĕ, пĕлĕтсем капланчĕç,
Шурăмпуçа хăйсен хыçне пытарчĕç.
Хĕвел, çав тĕксĕме шăтарчĕ тухрĕ,
Çĕр çинелле каллех хаваслăн пăхрĕ.

Çеçпĕл çеçки — çурхи вăрман асамĕ.
Ăна курса тавра юрла пуçлать,
Ăна курса тĕнче çамрăкланать.
Çеçпĕл чечекĕ хыççăн шăкăрин
Тĕрлĕ ӳсен-тăран çеçке çурать,
Тавралăх ешерет, капăрланать.

Çеçпĕл чечекĕн хăватне тавах.
Çеçпĕл Мишши поэтăмăр, тавах!
Эс хăвăн тавракурăмна-ăсна
Çĕн ăрăва пама пултарнипе
Паттăрла тĕслĕх кăтартса —
Вут-хĕмлĕ сăнарна Чăваш Кĕнекинче
Ĕмĕрлĕхе ӳнерлесе хăвартăн,
Чăвашлăхшăн тăрмашнă Чăвашсен
Мал ретĕнче тивĕçлипех тăратăн.

Çеçпĕл Мишшин кĕрнеклĕ еткерне,
Чăваш, мĕнле шайра тытса упратăн?
Тивĕçтеретĕн-и ун хурăç кăмăлне,
Тытатăн-и çӳлте чăваш чĕлхин сумне?
Сĕвĕрĕлме памастăн-и сипетлĕ
Тăван чĕлхемĕрĕн сĕтеклĕ техĕмне?
Чăваш! Пуласлăхшăн явап тытас пулать!
Чăваш тенин чăваш пулса пурнас пулать!

11.06.15

САВНĂ МĂШĂРĂМ

Пĕррехинче ăнсăртран
Тĕл пулман пулсан,
Пĕр-пĕрне килĕштерсе
Пĕрлешмен пулсан —
Пирĕн ĕмĕр еплерех
Пулаятчĕ-ши,
Пирĕн телей чечекĕ
Çурăлатчĕ-ши?

Ытарайми ачасем,
Хаклă мăнуксем
Пирĕн пурнăç тĕшшисем,
Пурнăç ăшшисем.
Тăван килĕн кăмаки
Вĕри кăварлă,
Тăван килĕн кĕреки
Çăкăр-тăварлă.

Кĕмĕл туйра кĕмĕлĕн
Çиçсе лартăмăр,
Ылтăн туйра ылтăнăн
Йăлтăртатрăмăр,
Тăвансем, хурăнташсем
Ырă суннисем —
Мĕн виличчен уйрăлми
Утма хушнисем.

Ай-хай, савнă мăшăрăм,
Ытарайми мăшăрăм,
Ылтăн-кĕмĕл çунатăм,
Виç шăнăрлă хăватăм.

4.07.15

ПĔРМЕЧЕ

Миçе пĕрмече-ши, миçе пĕрмече
Пит-куçăм çинче, çан-çурăм çинче?
Кам шутланă ăна, кирлĕ-и шутлама,
Пĕрмече йĕрĕсем — çул, сукмак пек çăра.

Пĕрмече йĕрĕсем — вăрăмми, кĕскисем,
Турă çырнă çыру йĕркисем-тĕррисем.
Этем ӳчĕ, тен, пир? Этем ĕмĕрĕ — çип...
Çиппине туртаканĕ — калем евĕрлĕ йĕп...

Пĕрмече шутлама вăхăт пур-и çынсен?
Хырăма тăрантма, кăмăла йăпатма
Мĕн иртен пуçласа сĕм çĕрле пуличчен
Пĕрмече-йăрансем хывмалла, акмалла,
Мĕн лартса ӳстерни — тăранма, йăпанма.

Тӳпере те нумай пĕрмече йĕрĕсем,
Çыхăнса, татăлса тĕвленеççĕ вĕсем.
Çăлтăрсем —
Çав тĕтреллĕ çулсен юпписем,
Çăлтăрсем —
Пĕрмече çулĕсен куçĕсем...

Этем ӳчĕ, тен, хут?
Çын шăпи, тен, ӳнерçĕ?
Аллинче — вут çинче пиçнĕ сарă икерчĕ.
Çав икерчĕ çинче — калемсем, сăрăсем —
Тĕнчепе этеме сăнарлаççĕ вĕсем:
Çырмасем те тусем, вăрмансем те шывсем,
Уй-хирсем, тинĕссем, амалак вырăнсем,
Çак илемлĕ тĕнчен илĕрти çутисем.

Тĕрлĕ тĕслĕ ӳтсемлĕ, шăм-шакпа кӳлепеллĕ,
Ырă, кăткăс ĕçсемлĕ арсем, амасем —
Шучĕ çук пĕрмечеллĕ çынсем-этемсем.

4.07.15

САВМАН САВНИ

18 тĕрленчĕк

1

Хамăра хамăр хĕрхенме,
Хамăра хамăр шеллеме,
Хамăра хамăр юратма,
Хамăра хамăр ăшăтма
Пĕлменнипе чирлетпĕр пуль.

Хамăра хамăр сивлесе
Ĕнтĕркесе каятпăр пуль,
Хамăра хамăр тиркесе
Чĕмсĕрленсе каятпăр пуль.
Хамăра хамăр ал памасăр
Сĕмсĕрленсе каятпăр пуль,
Хамăра хамăр пулăшмасăр
Нишлĕленсе каятпăр пуль.

Аскăнлăх тапхăрĕ асать,
Ма йĕрĕнсе хирĕçлеместпĕр?
Чыссăрлăх тапхăрĕ чышать,
Ма кар! тăрса хӳтĕленместпĕр?
Мĕншĕн тесессĕн, шел пулин те,
Хамăра хамăр йӳле янă,
Хамăра хамăр шара янă,
Сĕмсĕрленсе-чĕмсĕрленсе
Хамăра хамăр мура панă.

Иртĕхе ирĕк — аскăнма,
Ирсĕре ирĕк — чашкăрма.
Мĕн çавăрать куçа, пуçа,
Мĕн тĕтĕрлет мала, хыçа,
Ырри е тискерри? — хуçа,
Мĕн пăтратать çак пурнăçа?

Хĕвел тухать, анать — сӳнмест.
Хамăрти хамăрлăх — пĕтмест.

Хамăра хамăр упрасан,
Хамăра хамăр чысласан,
Пурнас тесе тапаҫлансан,
Ырă-Хаяр вăйсен хăвачĕ
Пире ҫĕклентерсех тăрсан,
Хăюллăн, сумлăн, ҫĕнтерӳллĕн
Хамăршăн хамăр тăрăшсан —
Хамăрлăх шăнăрĕ — типмест.

Хамăрпа хамăр мухтанса
Кăкăр ҫапни — вырăнлă мар.
Хамăрти хамăрăн ăс-хал,
Ан вăйсăрлантăр ăрăскал.

2

Шуҫăм ҫавăтса тухнă ир кулать,
Хĕвел ăна ҫупăрласа:
«Ӳс, пысăк пул, каҫчен» — тесе
Лăпкать те, пил парса
Ҫĕр ҫийĕн вĕҫтерсе ярать.

Амăшĕнче аталанса
Ҫуралакан ҫĕнĕ пепке
Ҫут тĕнчене килет.
Ашшĕпе амăшĕ ăна:
«Ӳс, пысăк пул,
Хĕвелпе уйăх ҫутинче
Тĕреклĕ, ҫирĕп ҫитĕнсе
Ватăличчен пехиллĕ пул» — тесе
Ҫĕр тăрăх уттарса ярать.

Пурте килет, пурте каять,
Пурте курмаллине курать.
Хĕвелпе Уйăх ҫавринче
Этемлĕх, Ҫĕр амаланать.

3

Паян эп вăйлă, эпĕ çамрăк,
Тухăç тыр-пуллă ман каçалăк.
Ыран та вăйлă, çирĕп пулăп,
Еткерĕм хакĕпе чыс курăп.

Эпĕ паян наян пулсан,
Юхăнчăк пулĕ ман — ыран.

4

Лашуна ятлан, çапатăн,
Ху эс, уншăн мĕн тăватăн?
Çитермен лаша ырхан,
Утă-сĕлĕ çук-им сан?

Уттине çулас пулать те
Капана пухас пулать.
Сĕллине акас пулать те
Пӳлмене хурас пулать.
Ĕçчен лаши — урхамах,
Апатлантар лайăххрах.

5

Савманнине сава-сава
Сарăхса кайма юрать-и?
Савакана тĕртсе ярсан
Телей курасси пулать-и?

Савманнине хăвалас та,
Савакана çупăрлас.
Савакан ăшпиллĕхĕпе
Савăкланса пурăнас.

6

Эп шăнкăрчла та çунат çапрăм,
Эп шăпчăкла та шăнкăртатрăм,
Саркайăкăн — кĕсле каларăм,
Эп саншăн — антăхса юрларăм.

Сассем ларсан, икĕ саспа
Вĕрентĕмĕр те юрлама,
Иксĕмĕре илтĕнмелле
Халь кунĕн-çĕрĕн калаçатпăр,
Сăмахсăрах, куçран чухлатпăр.

7

Саркайăкăн савнасси
Улăх ути çуличчен,
Яш-кĕрĕмĕн савнасси
Яшлăх иртсе кайиччен.

Улăх ути çулнă чух
Кайăк йăви пушанать,
Яшлăх иртнĕ майĕпе
Çамрăк ĕмĕр катăлать

Пурнăç чарăнми утать:
Сарă хĕр качча тухать,
Сарă йĕкĕт авланать,
Сарă çемье çаврăнать.

Сарă çемье ăшшинче
Ача-пăча çуралать,
Ачи-пăчи ӳснĕçем
Ашшĕ-амăш ватăлать.

Çуркуннехи вăхăтсем —
Йывăç-курăк çеçкисем,
Кĕркуннехи вăхăтсем —
Пиçнĕ çимĕç тĕшшисем.

Саркайăка савăнма
Улăх çăра пулинччĕ,
Пурнас килсе пурăнма
Ĕмĕр вăрăм пулинччĕ.

8

Мĕншĕн куртăм-ши ăна,
Ма куçа хупмарăм-ши,
Мĕншĕн саврăм-ши ăна,
Тӳр кăмăла аврăм-ши?

Ма чармарăм-ши хама
Çумна тăма, йăпшăнма?
Тусăм тесе чĕнес килни
Пăтраштарчĕ пуль тăна.

Юрĕ, эп ăна курман:
Паллашман, ыталашман,
Куççульпе те çăвăнман...
Юрĕ, эп ăна савман...

Каялла май çаврăнтăм,
Утăм турăм, чарăнтăм.
Малалла та, каялла та
Çул çуккишĕн макăртăм.

Кайри — кайра, малалла
Кампа утса каймалла?
Апла пулсан, хам тавра
Чару карти кармалла.

Чару карти çӳллĕшĕ —
Шухă шухăш сывлăшĕ.
Никам сиксе каçас çук,
Ютти çумма тăрас çук.

Кăшкăрупа ыйту палли
Шăтăрнакла карăнчĕç,
Кăшкăруллă ыйтусем
Ӳкĕтлеме тапăнчĕç.

Ишсе тăкас! Ишсе тăксан,
Чупса кайăп ыткăнса,

Таçта çĕтсе çӳрен тусăм
Сукмак йĕрне шыраса.

Ишсе тăксан — чару-чарак
Чăтăмĕ вăйсăрланать,
Хирĕлекен хурлăхăма
Тӳсесси кăна юлать.

Хурлăхăма сирсе яма
Тусăм кăна пулăшĕ...
Вĕрсем, вĕрсем ман еннелле
Ун аякри сывлăшĕ.

Ан улталан ĕнтĕ, чунăм,
Шанса кĕтни килеймĕ,
Тусăм тени сана текех
Хăй хӳттине илеймĕ.

Чару карти варĕнче те,
Чару юпи çумĕнче
Тăлăх чунăм макăрнисем
Юпа тăрри тĕтринче.

Юпа тăрри тĕтринче те
Сывлăм шăрçи çитĕнет,
Тулса çитсен — куççуль евĕр
Туртăнса талса ӳкет.

Ӳктĕр, ӳктĕр, сапăнтăр,
Чун — хурлăхран тасалтăр!
Йӳçĕхнĕ пыр, хытнă кăмăл
Çемçелтĕр те çуталтăр.

Чăтаймасăр йĕрсе яни
Чуна çуса тасаттăр,
Чăтăмлăхпа тӳсĕмлĕхĕм
Утас çула якаттăр.

9

Савман савни, сивĕ савни,
Мĕншĕн куҫа курăнтăн,
Шанчăк ҫурти, мĕне туйса
Сӳнсе лартăн, усăнтăн?

Савман савни, сивĕ савни,
Кама савса пурнатăн,
Урăххипе, урăх ҫĕрте
Ниуш телей куратăн?

Сивĕ савни савманнине
Тахҫантанпах пĕлетĕп,
Сивĕ савни савманнипе
Шăнса кӳтрĕм, чĕтретĕп.

Саваканни, эп савасса
Кĕтет, кĕтсе илеймест,
Ӳкĕтленмен туйăма
Хистесе кӳрентермест.

Сивĕ савни сăнарне
Мĕншĕн ҫурса тăкмастăп,
Мĕншĕн чунтан савакана
Чуна шанса памастăп?

10

Пули-пулми сăмах купи,
Миҫе купа? — такăнма.
Такăнас мар, ӳкес мар,
Вараланса пĕтес мар.

Хăмăр-хура тĕслĕ сăмах —
Тикĕс ҫул ҫинчи тумхах.
Чикеленсе амансассăн
Пулса юлмăн-и ухсах?

Ҫутă, янкăр таса сăмах
Ҫĕрте выртмасть, вĕлкĕшет.

Вĕри сăмах — вучах вуттин
Кăварланса тĕлкĕшет.

Вучах çунать — тĕтĕм йӳççи
Мăрье витĕр — тулалла.
Лăпкă вучах ăшши-пăшши
Тĕпел ăшши тавралла.

Тутлă сăмах клентĕрĕсем
Сĕтел çинчи чашăкра.
Сиплĕ сăмах шерпечĕсем —
Сĕтел çинчи савăтра.

11

Çумăр çукалиш тăвать,
Аслати кăлтăртатать,
Çиçĕм иртĕхсе кайсан,
Çумăр ĕрĕхсе каять.

Кăвак тӳпе хуралать те,
Хĕвел таçта пытанать,
Пĕлĕт пулкки кĕпĕрленсе
Вăрçă-харçă пуçарать.

Çавă хура пĕлĕте
Ним те тĕртсе яраймасть,
Усалланнă кăра вăйне
Ним те тытса чараймасть.

Урса кайса тӳнклеттерет
Пӳрт тăррине, кантăка,
Пăрлă çумăр ӳпĕнтерет
Йывăça та курăка.

Чăмăрланнă пăр таткине
Çĕрелле вирхĕнтерет,
Çĕре сăтăр тунипеле
Тухатмăшла ихĕрет.

Калча пуҫне татса перет,
Чечексене ҫӗмӗрет.
Ҫак тискере ҫӳл тӳпере
Мӗскер пӑхса ӳстерет?

Ӑш ҫумӑрпа сивӗ ҫумӑр
Черетленсе килеҫҫӗ.
Ҫӳлти такам хушнипеле
Ӗҫне туса ҫӳреҫҫӗ.

12

Тӗлӗкӗмсен хутлӑхне
Чӑнпа суя кӗреҫҫӗ,
Шухӑшсен сӗрӗмӗнче
Йӗкӗрешленсе ҫӳреҫҫӗ.

Суиҫсем чее чӗлхеллӗ,
Сӑмаха тӗвеҫҫӗ меллӗ.
Чӑнлӑх — лӑпкӑ та пулать,
Чан ҫапса та янратать.

Пурнӑҫри чӑнпа суя,
Виҫҫӗш пӗрле — пӗр мӑя.
Тавҫӑруллӑ та правур
Тӗрӗс суякан — матур.

Тӗрӗспе ултав утаҫҫӗ
Ҫын ҫумӗнче пӗр ҫулпа,
Ҫын тӗрекне тӗрӗслеҫҫӗ
Тӳрӗ, кукӑр сӑмахпа.

13

Кунӗпе тӗрленчӗк ӳнерлетӗп,
Тӗрлӗ тӗслӗ курӑмпа тӗртсе илетӗп,
Тавлашатӑп, хирӗҫетӗп, мирлешетӗп,
Шухӑш евӗр, сывлӑшра вӗлтӗртететӗп.

Сывлӑшӗ тем тӗрлӗ те вӗрет,
Вӗҫтерет, ярӑнтарать, силлет.

Ӳкрӗм, тӑтӑм та, тӳрлентӗм пек,
Ыратнисенчен сиплентӗм пек.

Ирпеле ирех хӗвел ӑваратрӗ,
Аслатийӗ кӑнтӑрла хӑратрӗ.
Каç та пулӗ, Уйӑх вӑрттӑн пӑхӗ,
Çӑлтӑрсем те, çамрӑксем те вӑййа тухӗ.

Тӗнчипе саланӗ савӑк кӗвӗ,
Йыхӑрӗ ташша асамлӑ çемӗ.
Кӑмӑлсем тапранӗç хускалма,
Туйӑмсем — юмах юмахлама.

Уçӑ кантӑкран пӗр çепӗç кайӑк
Юрлани кӗрет те пӳлӗме,
Тӗрлӗ вӗçен кайӑк сасси евӗрлӗ
Вӗренес килет тӗрленчӗк тӗрлеме.

14

Тарса пытантӑм терӗн-и? —
Чӗнместӗн.
Кӗтетӗп кунӗн-çӗрӗн,
Ма килместӗн?

Иртнӗлӗхре эс
Çуммӑнах çӳреттӗн,
Манпа ыталанса, чуптӑвӑнса
Ӗмӗр пӗрле пулма ӗмӗтленеттӗн.
Таçта кайсассӑн, шӑнкӑравласа,
Чӑнах юратнине ӗнентереттӗн,
Ӑшпиллӗ сассупа ачашлама пӗлеттӗн...
Иртнӗлӗх иртнӗ, юлнӑ хыçалта!
Аванччӗ чун юрланӑ вӑхӑтра.
Халӗ, тӗлпулусем сӗре сайра,
Пулни-иртни таврӑнайми кайра...

Писсе çитни-и, ывӑнни-и?
Пӗрлӗх çӗтни-и, ватӑлни-и?

Юрĕ, тупăнайми пытан,
Туртăм сӳннишĕн ан вăтан.
Эп саншăн — çук, эс маншăн — çук...
Эп те вылям пекки тăвам,
Эп те сан пек, иртнисене
Маннă пекки туса пăхам.

15

Ирхи, кăнтăрлахи, каçхи
Апат паратăп хырăма.
Кунĕпеле эп мĕскерпе-ши
Тăрантаратăп чунăма?

Теме те ăнланма пулать,
Ултавçăна ăнланаймастăн.
Теме те каçарма пулать,
Сутăнчăка каçараймастăн.

Теме те хăнăхма пулать,
Таптанине хăнăхаймастăн.
Теме те пусарма пулать,
Чунсăрлăха пусараймастăн.

Ултавçă, сутăнчăк пулма,
Тус-пĕлĕше ура хума,
Тискерленме, выçăхланма
Кам вĕрентсе тăрать çынна?

Куç умĕнче — куç кĕскисем,
Вĕсем çинче — чăпар сăнсем...
Апат памашкăн чунăма
Лăкас пулать ăса, тăна...

16

Хĕрхенӳ ыйтма эп кĕлмĕç мар,
Тарăхпа тулма эп мĕскĕн мар.
Вĕçтерме пĕлместĕп, вĕçкĕн мар,
Çапăçма пĕлместĕп, сĕмсĕр мар.

Хĕрхенетĕп эп сана, тăшманăм,
Сан куллу пулса сана култарайманшăн.
Хĕрхенетĕп эп сана, куштанăм,
Саншăн ырă тĕслĕх пулайманшăн.

17

Кайрăн пулсан — яланлăха,
Тек каялла таврăнмасла,
Мĕн ĕмĕрӳ вĕçлениччен
Ан асилтер тек ху çинчен.

Йĕрсе тăртаннă сăнăма
Çăл шывĕпе шăлса якатăп,
Йĕрсе тăртаннă асăма
Çиçĕм ăшне ывăтса ярăп.
Вара тинех хама санран
Хăтарăп та, çуталăп кайăп.

Çуталăп кайăп шуçăмла,
Çуталăп кайăп çăлкуçла,
Çĕнелнĕ кăмăл-туйăмпа
Сывлайăп çĕнĕ сывлăшпа.
Тек ĕмĕрне тĕл пулмасла,
Кай ара, кай, таврăнмасла...

18

Çӳлтен вĕçсе иртен
Шухăшсенчен хăшне-пĕрне,
Хам шухăшсен çекĕлĕпе
Туртса антартăм та,
Ман пирĕштийĕм пĕтĕрнĕ
Çиппе хутăштарса ярса
Шурă хута тĕрлеме лартăм.

18 тĕрĕ тĕрлесе
Пуçа тайса çырса ларни —
Эп хампа хам халап яни.

5.07.15

ТĂВАН ЧĔЛХЕ

2 тĕрленчĕк

1

Тăван Çĕршывăм, эпĕ сан хĕрӳ,
Эпĕ пурришĕн савăнтăр чĕрӳ.
Кĕмĕл тумне чăнкăртаттартăр чăваш халăхĕ,
Ылтăн ĕçне йăлтăртаттартăр чăваш халăхĕ!

Эс пур пулсассăн, эп те пур, чĕлхем,
Ман чĕремре ырă-хаяр хĕлхем.
Эп — кĕнекеçĕ, эп чăваш ачи,
Çеçпĕл акса хăварнă уй калчи.

Çеçпĕл çеçки шăпиллĕ савнă Çеçпĕл,
Чăваш ака-сухин çулпуçĕ — эс вăл,
Таплаттаратăн хыттăн чи малта,
Поэт-юлташусем сан çумăнта:

«Нарспи» те «Арçури» хайлавçисем,
«Тутимĕр» те «Тилли...» авторĕсем,
Тата, тата нумай çыравçăсем —
Чăваш чĕлхиллĕ савăк саслисем.

Чăваш тĕнчин сассийĕ — чăвашла,
Пулма та пултараймĕ урăхла!
Ытти чĕлхе — ун пĕлĕш-хурăнташĕ,
Ытти чĕлхеллĕ халăх — тус-юлташĕ.

Тăван чĕлхемĕр — пирĕн сас илемĕ,
Тăван чĕлхемĕр — пирĕн ăс элемĕ,
Тăван чĕлхемĕр — пирĕн ĕç хĕлхемĕ,
Тăван чĕлхемĕр — ăрăскал тĕревĕ.

Тăван чĕлхе вăл — кукамай та асанне,
Тăван чĕлхе вăл — кукаçи те асатте.
Тăван чĕлхе — тирпейлĕ кинеми, мучи,
Тăван чĕлхе — Чăваш Çĕршывĕн Кил Хуçи.

2

Чунăм вăрманĕ варкăшпа вăранчĕ,
Çулçи-çеçкийĕ варкăшăн хускалчĕ,
Пуçларĕ авăнма, чăштăртатма,
Ӳсме, çимĕçленме, тутлăхланма.

Вăй-хăвата кивçен ыйтса илеймĕн,
Ыйтса илсессĕн тавăрма пĕлеймĕн,
Ӳсни, çимĕçленни, тутлăхланни —
Йăх-ратăн пӳлмине пухутлани.

Чунăм вăрманĕнче çăлкуç тапать,
Шăнкăр та шăнкăр юрласа чупать,
Икĕ çыранлă çул хыван çăлкуç
Сасси, хăй хыççăн чĕнекен çулпуç.

Вăрман кашлавĕнче ыйту, хурав,
Кашлав — тĕлĕнмелле курав, сăнав.
Варкăш е тăвăл, вăрманта — тирпей,
Ăçта тирпей, унта çиçет телей.

6.07.15

ТАВАХ, ТĂВАН

Сĕтел ури авăнать,
Апат-çимĕç тăкăнать,
Кĕрекере йăлтăртатса
Савнă хурăнташ ларать.

Сĕтел çитти ярапи,
Апат-çимĕç шерепи
Килĕштĕрччĕ хăнана,
Чуна çывăх тăвана.

Тавах, тăван, ыр тăван
Пĕрле савăнма аван,
Килсе-кайса çӳресси
Пултăр пĕрле савнасси.

Ыр тăвана савмасан
Тата кама савмалла,
Савнăçа та, хурлăха та
Тăванпа пайламалла.

Черкке шакки — чăнкăрти,
Курка шакки — шанкăрти,
Куçăм тулли тăвансене
Тав сăмахĕ — шăнкăрти.

6.07.15

ÇУМĂР ВИТĔР...

2 тĕрленчĕк

1

Çумăр витĕр килсе кайрăн,
Çумăр чарăнмарĕ.
Эс кайсассăн, сивĕ çил
Çан-çурăма, сăн-питĕме
Хыпашларĕ, хыпашларĕ,
Тен, çумăртан пытанмашкăн
Типĕ вырăн вăл шыраре?
Типĕ вырăн тупăнмарĕ,
Çумăр чалăшшăн чашларĕ,
Ывăнмарĕ, чарăнмарĕ.

Мĕншĕн çумăр шапăртатрĕ,
Ма хĕвел пăхмарĕ,
Ма тӳпе пире валли
Ăшă антармарĕ?
Ма айăплас çумăра
Нӳрĕ сăмахсемшĕн?
Юлашкинчен — уйрăлма
Калаçса талнишĕн...

2

Ĕмĕтленнĕ пек сайра пулать.
Лайăх шухăш-ĕмĕт такăнать,
Вăркăнса ӳкет те аманать.
Ура çине тăрать те сывалать,
Татах утать, татах та аманать.

Эп пурпĕрех
Ĕмĕтленме чарăнаймастăп,
Эп ĕненӳсĕр
Пурăнма пултараймастăп.

12.07.15

ЯЛАН ÇАПЛА ПУЛНĂ

Çумăр çăвать тесе
Çумăра хирĕç,
Каяс çула тухасси
Çӳллĕ тивĕç.

Тăвăл тухать тесе
Тăвăла майлă
Хирĕçмесĕр калаçни
Чăн сăпайлă.

Телей çуккă тесе
Макăрса ларни,
Ĕненӳпе шанчăка
Килме чарни.

Чипер пурнас тесе
Юратма пĕлни,
Тăван çемье тĕпелне
Телей кӳни.

Ялан çапла пулнă,
Çапла пулать,
Пирĕн пурнăç çулĕ
Юханшывăн юхать.
Шарлаттарса, шарлаттарса —
Пирĕн пурнăç çулĕ
Юханшывăн юхать.

29.07.15

ПИРĔН ĔМĔР ÇУЛĔСЕМ

Кантăк витĕр пăхсассăн та,
Кантăка уçса ярсан та
Çуталса каймасть, çуталса каймасть.
Аннă хĕвел канма выртнă
Ирччен вăранмасть.

Куçа чарса пăхсассăн та,
Куçа тачă хупсассăн та
Канăç таврăнмасть, канăç таврăнмасть.
Йывăр шухăш хумĕсене
Сирсе яраймасть.

Чуна уçса ярсассăн та,
Чуна хупса хурсассăн та
Кăмăл сипленмест, кăмăл сипленмест.
Иртнĕ вăхăт ăшшисене
Кĕтсе илеймест.

Мĕн териех васкаварлă
Пирĕн ĕмĕр çулĕсем.
Кăвар тăрăх чуптараççĕ
Пирĕн шухăш-ĕмĕтсем.
Савнас килсе савăнар-и
Тус-тăван, хурăнташсем,
Ан кӳренччĕр пирĕн çине
Пирĕн ĕмĕр çулĕсем.

12.08.15

ВĂХĂТ-ХУÇА

Турат çине ларса тухнă
Вĕçен кайăксен
Чĕвĕлтетсе калаçнисем —
Каясси çинчен.
Чĕппийĕсем çунатланнă,
Çула тухмалла,
Ăшă кунсем сивĕниччен
Вĕçсе каймалла.

Саксем çине ларса тухнă
Ватăлнă çынсен
Шăкăлтатса калаçнисем —
Ачисем çинчен.
Мăнукĕсем ÿссе пыни
Хавхалантарать,
Ватлăх хăвăрт çитсе тăни
Пăшăрхантарать.

Йывăç-курăк сарăхмасăр
Çимĕç çитĕнмест,
Кун иртмесĕр, каç иртмесĕр
Шурăмпуç килмест.
Килессипе каяссисем —
Пурнăç çулĕсем,
Уйрăлнă чух ма юхать-ши
Кăмăл шывĕсем?

Ай, Вăхăт, Вăхăт — тĕнчери хуçа,
Вăл пурне те хăварать хыçа.
Ай, Вăхăт, Вăхăт, тарават пулсам,
Ырлăх ыйтакансене ырлăхне парсам,
Сывлăх ыйтакансене сывлăхне парсам.
Телей ыйтакансене телейне парсам.

12.08.15

САВНИ ПАТНЕ КАЙĂТТĂМЧЧĔ

Атăл çине анса ларчĕç
Шурă шухăшсем,
Шухăшсене сыпса илчĕç
Вĕçен кайăксем.
Телей тени ăçтарах-ши? —
Тинĕс хĕрринче
Е кайăксем йăва тунă
Çӳллĕ ту çинче.

Шур шухăшсем ту тăррине
Вăййа тухаççĕ,
Шур пĕлĕтсем вĕсен тавра
Карта тăваççĕ.
Вĕсен çутă кĕввисене
Сыпса илеççĕ,
Çӳл тӳперен пусăм çине
Пĕрĕхтереççĕ.

Шурă пĕлĕт, шурă пĕлĕт
Анччĕ аяла,
Каç пулсассăн, çӳл ту айне
Савни тухмалла.
Эсĕ ăна тĕтре пулса
Вăрттăн çупăрла,
Эпĕ янă саламсене
Хăлхинчен кала.

Акăш карти ишнисене
Куртăм Атăлта,
Кам-ши халĕ сан çумăнта
Çакă самантра?
Савни патне кайăттăмччĕ,
Çулне тупаймас,
Чун савнине манăттăмччĕ,
Манса каяймас.

15.08.15

МĔНЛЕ ПУРĂНАС-ХА МАН?

Килĕштерӳ хĕмне
Сӳнтерейместпулсан,
Мĕнле пурăнас-ха ман
Эс уйрăлса кайсан?

Килĕштерӳ çути
Чунăм çути пулсан,
Мĕнле пурăнас-ха ман
Çутă сӳнсе ларсан?

Килĕштерӳ ăшши
Кăмăл ăшши пулсан,
Мĕнле пурăнас-ха ман
Кăмăл шăнса хытсан?

Мĕншĕн-ши, мĕншĕн-ши
Çăваççĕ çумăрсем,
Мĕншĕн-ши, мĕншĕн-ши
Çиçеççĕ çиçĕмсем?

Мĕншĕн-ши, мĕншĕн-ши
Юхаççĕ куççульсем,
Мĕншĕн-ши, мĕншĕн-ши
Сивнеççĕ савнисем?

10.09.15

МĔНЛЕ ПУРĂНАТĂН ВАРА?

Мĕнле пурăнатăн вара,
Мĕншĕн сас памастăн?
Эс нивушлĕ ман çинчен
Пĕртте шутламастăн?

Мĕнле пурăнатăн вара,
Ĕçӳсем аван-и?
Кунĕпе те çĕрĕпе
Савăнăç куран-и?

Мĕнле пурăнатăн вара,
Ăçтарах çӳретĕн?
Эс хăçан-ши ман пата
Таврăнса çитетĕн?

Мĕнле пурăнатăн вара,
Эпĕ тунсăхлатăп,
Чун юрланă вăхăта
Лайăх астăватăп.

Мĕнле пурăнатăн вара,
Вара-вара, ой, вара,
Шӳтле-шӳтле, сисмесĕрех
Уйрăлтăмăр-ши вара?

25.09.15

СĂНАВ

2 тĕрленчĕк

1

Çил-тăман та, тăвăл та иртет,
Шалкăм çумăр шывĕ те типет.
Эп савнине савнă тапхăр иртнĕ,
Уншăн макăрнă куççулĕм типнĕ.

Иксĕлнĕ, пушаннă туйăмсем —
Катнă мăйăр хуппისем-ши,
Катăк шăл вырăнĕсем-ши,
Кăвак çӳç пайăркисем-ши...

2

Шăтса тухнă та ӳсет.
Чип-чиперех тăракана
Касасса та татасса,
Çапа-çапа çурасса,
Кăмакара, кăвайтра
Кĕл пуласса пĕлес пулсан
Шăтатчĕ-ши çав йывăç,
Ӳсетчĕ-ши çав йывăç?

Кăмакара е вучахра
Шачăртатса çуннă чухне
Хуçнă турат е пуленке
Кăпăкланса çатăртатни —
Йывăç тавраш — хăйне ӳсме
Панă ăшша ăшталансах,
Тен, каялла тавăрассăн,
Хăйне майлă сас кăларса
Хăйне майлă тав туни...

10.11.15

АСИЛӲ

8 тӗрленчӗк

1

Кӗрен шевлисене
Енчен-енне сапа-сапа
Хӗвел хăпарчӗ.
Сенкер тӳпе кавирӗ
Кăварланчӗ.

Паян çилсем шапăлтатмаççӗ,
Йывăç турачӗсем
Сулкаланмаççӗ.
Тӳлек. Илпек.
Тавралăхăм кӗрнек.

Эп, хӗвеле кӗтсе илме вăраннăскер,
Пусă шывӗпеле çăвăннăскер,
Шуçăм пайăркипе шăлăннăскер —
Пирӗшти пек чипер.

2

Ăрăскалăм санпа
Паллаштарчӗ пулсан та,
Пӗрлешсе пурăнма
Тӳр килмерӗ пулсан та,
«Кирлӗ мар эс мана» —
Теейместӗп сана.

Именӳллӗ ачашшăн,
Ăшшăн, лăпкăн та шăппăн
Эп кашни тӗлпулу
Самантне асилетӗп,
Асилӳ сукмакне
Таптамасăр... йӗрлетӗп.

Ку — ман чунăм вӗçевӗ.
Асилӳ ăшӗнче —

Сан сăну, сан куллу,
Сан сассу, ытаму,
Çутă каç парнеленĕ
Çурхи тĕлпулу,
Ăмăр кун персе панă
Йĕпе уйрăлу.

3

Пире тем тапăннă,
Пире тем уйăрать.
Уйăракан сăлтав
Çул варринче тăрать,
Пире пĕр-пĕринчен
Тĕрте-тĕрте ярать.

Пирĕн хушша
Миçе чарак тăратнă?
Тĕл пулмалли çула
Миçе чăрмав амантнă?

Кĕмĕл кĕпер
Кам ватнипе-ши? — ишĕк.
Хушшăмăрти калаçусем
Мĕне пула-ши? — сӳрĕк.

Тутлă асилĕве
Йӳçĕхтерме памастăп.
Мĕн уйăрать пире?
Пĕлсен те шарламастăп.

4

Эсĕ аякка ăсаннине —
Çу шăрăхне, хĕл сиввине
Тӳссе ирттернĕ евĕрех
Чăтса ирттертĕм.

Пăр çапрĕ — туйăм калчине,
Тăм тиврĕ — туйăм çырлине.

Çавах, калчи çĕкленнĕ пек,
Çавах, çырли хĕрелнĕ пек...

Эс тахçанах таçта пурнатăн.
Ман туйăма çулсеренех
Калчаланма, çимĕçленме —
Сан туйăму та ырă-сывă пулнине
Хаваслă сассупа ĕнентерсе
Эс тăтăшах пылак салам яратăн...

5

Çулçӳревçĕ-шухăшăм
Пĕрре йывăрланса,
Тепре çăмăлланса килет.

Шухăш манпа пытанмалла вылять:
Килет — кулать, каять — улать,
Эпĕ ăна асăрхасса шанать.
Тĕртсе ярса кӳрентерес килмест,
Хăть килĕшет, хăть килĕшмест,
Вăл шахвăртмасăр çӳремест.

«Ун ĕçĕ пур, тĕллевĕ пур,
Эсĕ унпа йĕркеллĕ пул» —
Тесе калать пек пĕр такам.
Апла, пуç мимине лăкам та,
Сăмахсене суйла-суйла
Типтерлĕн, сумлăн калаçам,
Ыр шухăша алай тăвам,
Усаллине вĕрсе ярам,
Çулçӳревçĕ-шухăшăма
Канса илме пулăшам.

6

Ик кăвакарчăн — икĕ аллăмра.
Тватă çунатлă пулса тăтăм мар-и?
Çĕклеççĕ, вĕçтереççĕ, антараççĕ,
Кăвăл та кăвăл юмахлаççĕ.

Ман — тусӑмпа вӗҫессӗм килсе кайрӗ,
Пӗр мӑшӑр кӑвакарчӑн ҫул шырарӗ.
Вӗҫме? Унпа пӗрле утмашкӑн та ҫул ҫук,
Текех ман савнӑ тусӑм манпа ҫук.

7

Мӗн тесе чуну вӗчӗрхенет?
Пайлама пӗлсессӗн, мӗн пурри ҫитет.
Мӗн тесе аллу сулкаланать?
Ӗҫлеме пӗлсессӗн, тытнӑ ӗҫ пулать.

Мӗн тесе сассу хӑшӑлтатать?
Юрлама пӗлсессӗн, юрӑ шӑранать.
Мӗн тесе куҫу йӑмӑхланать?
Тимлӗ пулмасассӑн, ҫул такӑнтарать.

Мӗн тесе пусӑрӑнса ларан,
Кирлӗ мар япалана ма пуҫтаран?
Шӑлса ывӑт, ҫӳп-ҫапран тасал, пушан,
Курӑн ак, часах ҫӑмӑлланан...

8

Мӗн кирлине пухутлама,
Тимлӗ куҫпа тинкерсе
Суйласа тупни кирлӗ.
Чун ыйтнине ҫырлахтарма,
Чуна чун апачӗ кирлӗ.
Чун вӑл тем те тутанса курать,
Чуна та пиҫнӗ апатпа сӑйлас пулать.

Тутсӑррине, пиҫменнине сурса пӑрахасси —
Ӑша, чуна варалама юрамасси.

13.08.15

ХАЛЬЧЧЕН

7 тĕрленчĕк

1

Савниçĕм тутине,
Куçне те ытамне саватăп.
Вĕсем мана «Савниçĕм» тенĕ,
Вĕсем ман пурнăçа, сăн-питĕме,
Çан-çурăма, чун-чĕрене
Хĕвеллĕн эрешленĕ...

Сăн-питĕмре — вăл парнеленĕ
Чечек кăшăлĕсен илемĕ,
Çан-çурăмра — вăл хăналанă
Кучченеçсен çăра сĕткенĕ,
Чун-чĕремре — вăл йăлкăшса
Каланă сăмахсен хĕлхемĕ,
Пурнăçăма тытса тăрать —
Вăл панă юрату тĕревĕ.

2

Ăçта кăна çитсе курмарăм,
Кампа кăна-ши паллашмарăм,
Сан сăнару асран каймарĕ,
Ыттисене çумма ямарĕ.

Куçран кайман сăну
Урăххисемшĕн — сыхă-чатăр.
Çав чатăра чăл-пар! çурса
Мана тытма пултаракан
Арçын хальччен те тупăнмарĕ.
Хальччен — санпа паллашнă
Иртнĕ ĕмĕрти пĕр ĕнтрĕкрен
Пуçланса кайнă — паянччен.

3

Туятăп, тен, улталанатăп,
Тен, хама хам суйса пурнатăп,
Сана ĕлĕкхиллех саватăп,
Тен, хытăрах та кăмăллатăп.

Эс сывласа кăларнă сывлăш
Мана хальччен те ăшăтать,
Сан ытамун вĕри çаврийĕ
Мана хальччен те ункăлать.

Сана ĕлĕкхиллех саватăп,
Тен, йăнăшатăп? Йышăнатăп —
Эс пулнă, пур. Телей тени —
Эпĕ хама — санпа тупни...

4

Кĕтмен çĕртен тĕл пултăмăр,
Паллашрăмăр, туслашрăмăр.

Чунсем, ăршаллă сывлăшра
Ярпайланса савăннисем,
Пĕрне пĕри сĕртĕннĕ чух
Вăтаннипе чĕтренисем,
Ытам ункин кăвайтĕнче
Чăмăртанса йынăшнисем...
Пирĕн тавра пирĕштисем
Вăйă карти çавăрнисем,
Ухă йĕппиллĕ ангелсем
Чĕресенчен тĕл тивнисем —
Пире валли шăпа ирттернĕ
Туйăм тĕнчин уявĕсем...
Ăçта ăсанчĕç-ши вĕсем?..

5

Эс мана улталанă,
Эс ютпа çывăхланнă,
Эп çавна пĕлнине эс пĕлетĕн.
Тĕл пулма килĕшмерĕм, кӳрентĕн.
Кам кама кӳрентернĕ,
Ухмаха-им перетĕн?

Каçару та ыйтмарăн,
Эпĕ пурпĕр каçарнă.
Пултăр! Эс такама
Хăв çумна çыпăçтарнă.
Пултăр, пултăр! Ăна эс
Ача çураттарнă.
Ах, анчах та! Мана
Сан сую йăлăхтарнă,
Тек, сана сĕртĕнес
Кăмăлсем кăмрăкланнă.

«Куçа кĕнĕ тусан
Пĕрчинчен пĕрене
Ӳстернин усси çук» — тенĕрен,
Шачăртатнă асапăн
Кӳренӳ кĕлĕ — ляп...

6

Ĕхĕлтетсе лӳчĕркенĕ
Матка-пуканесене
Шаршана хуратăн мар-и,
Кăвайта пеме?

Пуканесен пуххипеле
Камитле вылян,
Хăвна епле кирлĕ çапла
Астарса тăран.

Сан аллунти çип вĕçĕнче
Шĕвĕр сăнăсем,

Пуҫӑрланнӑ пуканесен
Чирлӗ сӑнӗсем.

Енчен-енне ыткӑнтарса
Ывӑтса яран,
Выляс шухӑш тулса ҫитсен
Шӑхӑрса пухан.

Хӑш-пӗрисем сан кӑвайтна
Ухлатса сикеҫҫӗ,
Сӑн-питне те, намӑсне те
Ҫылӑхпа ӗнтеҫҫӗ.

Кармашсассӑн та тытаймӑн,
Ан та аппалан.
Ӑнкаратӑп, эсӗ маншӑн
Йӑпӑлти тӑшман.

«Пуленке пек шачӑртатса
Ҫунса каясран,
Сан аллуна лекес марччӗ» —
Тетӗп, ан ҫыхлан.

7

Эпӗ Сана ӳнерлесе савӑннисем,
Эпӗ Сана ӳнерлесе хурланнисем —
Чӑн пурнӑҫра пулма пултарнӑ-пулайман,
Хӗрхӳллӗ сӑввӑмсем те юррӑмсем.

Пулнӑ-пулман самант савӑкӗсем —
Пиҫнӗ хӑмла ҫырли сапакисем,
Илтнӗ-илтмен сӑмах пылакӗсем —
Тута ҫинче вӗренӗ сӗтексем...

Пулнӑ-пулман самант савӑкӗсем —
Ирсен, кунсен, каҫсен ярăписем,
Анан хӗвел каҫ пуласса туять,
Уйӑх та шуҫӑм аннине сӑнать...

Пулнӑ-пулман самант савӑкӗсем —
Тӗлӗксенчи хитре тӗрленчӗксем.
Мӑшӑр саспа юрланӑ юрӑсен
Янравӗ хӑлхара — ачаш, ӗлккен...

Пулнӑ-пулман самант савӑкӗсем —
Эсӗ ятран чӗнсе йӑпатнисем,
Ҫырусенчи «Савниҫӗм» тенисем,
Ҫавнах — туту, куҫу каланисем...

«Савниҫӗм» тавралла ҫиҫет тӗнче,
Телейлӗ куҫӑм — уҫӑ чӳрече:
Мӗн туйнине сӑнарласа пама,
Пулнипеле пулманнине хутӑштарма.

15.08.15

ӐШӐМ ӐРШИ

Савнине савса пӗтереймен
Ачашлӑхӑм,
Савнине савса тӑранайман
Ачашлӑхӑм — ӑшӑм ӑрши:
Вӑл парнеленӗ
Чечексен, сӗртӗнӳсен
Ӳсӗртекен шӑрши...
Савса пӗтереймен,
Савса тӑранайман ачашлӑхӑм
Ҫак таранччен чун-чӗреме ачашлани —
Эп Савнине нихҫан манми асра
Ачашшӑн упрани...

16.08.15

КАВИР

Савни чуптунă ал тупанĕпе
Пит-куçăма сĕртĕннисем —
Савнишĕн тунсăхланă вăхăтра
Асилӳпе чуна йăпатнисем.

Телей кĕтмен çĕртен килет тесе
Вăл килессе пурнатăп ĕненсе.
Хăçан, ăçтан таврăнасса кĕтсе
Тват еннелле пăхатăп чĕвĕнсе...

Вăл парнеленĕ тутăра çыхса,
Вăл парнеленĕ шăрçана çакса
Тухатăп час-часах укăлчана,
Чупса пырса ытамлама пĕр хурăна.

Пĕррехинче, çумăр айне пулсан,
Çав хурăн çумĕнче пĕрремĕш хут
Чуптунăччĕ вĕрин ачашланса,
Пĕрне пĕри савма ирĕк парса.

Мĕнпур енчен янранă сас-чĕвре
Унăн ури сассийĕ илтĕнсен,
Çав еннелле эп сарăттăм кавир,
Хăть сĕм çĕрле, хăть тăвăл тухнă ир.

16.08.15

ЭПИР КУНТА...

Утма çулсем кĕскелсе мар,
Вăрăмланса пыраççĕ.
Кунтан кайсан пирĕн чунсем
Çĕнĕ çула тухаççĕ.

Ăш кăмăлсем сивĕнсе мар,
Сăпайланса пыраççĕ,
Кунтан кайсан пирн кăмăлсем
Çĕнĕ çавра пуçлаççĕ.

Эпир кунта хурланнисем
Кунтах ӳксе юлаççĕ,
Эпир кунта савăннисем
Пирĕнпеле пыраççĕ.

Эпир кунта хăнарине
Эпир аван пĕлетпĕр,
Ырă хăна пулас тесе
Чуна парса ĕçлетпĕр.

Чуна парса ĕçленисем
Этемлĕхре юлаççĕ.
Ламран лама — еткер ятпа
Пурлăх пулса куçаççĕ.

16.08.15

ЯВАП

Каллех, ирпе тăрсан — ĕçе,
Ĕç кунĕ вĕçленсен — киле.
Килте те килти ĕç кĕтет,
Килте çемйе кĕштĕртетет.

Таса çи-пуç, паха апат —
Пурне те ĕлкĕрес пулать.
Ĕлкĕрмесен, тумалли ĕç
Тем чухлĕ пухăнса каять.

Хĕр-ывăл, мăшăр пулăшсан,
Тумаллине пĕрле тусан
Канма та вăхăт тупăнать,
Ĕмĕр аван иртсе пырать.

Ĕçри ĕçе, килти ĕçе
Юратакан этем сатур.
Пурнăç кал-кал ăнса пыни,
Яваплăх — чăтăмлă пулни.

Шанчăкпа чăтăм тата тӳсĕм —
Явапăн çывăх тусĕсем.
Явапăн чыслă пархатарĕ —
Йĕркеллĕ иртнĕ кун-çулсем.

18.08.15

ТЎПЕРЕН — ÇĔРЕЛЛЕ

Çиçĕм ихĕрчĕ-çиçрĕ,
Аслати ахăртатрĕ,
Аслати теме çапрĕ.
Тӳперен çĕрелле
Сивĕ шыв шапăртатрĕ.

Хура пĕлĕт шăвать —
Тӳперен çĕрелле
Хура тăм пăрахать.
Тăм çапать те сăхать
Пиçекен пурлăха,
Хура тăм — хурлăха.

Шурă пĕлĕт ишет —
Тӳперен çĕрелле
Сиплĕ сывлăм ӳкет.
Çутçанталăк вăйне
Ӳстерес кăмăлпа
Пур ӳсен-тăрана
Çумăрпа шăварать,
Пархатар кăтартать.

Пуç çине анакан
Ыррине, хуррине
Йышăнма пĕлмелле!
Тĕнчере пĕтĕмпех! —
Тӳперен — çĕрелле...

25.08.15

ЫТ-АХАЛЬТЕН-ИМ?

Ыт-ахальтен
Нимскер те çырăнмасть,
Ыт-ахальтен
Нимле сăмах та вакланмасть.
Сăмах валли — сăмах тума
Хатĕр ялан — сăлтав, ăнлав,
Шĕвĕр ыйту, мăка хурав,
Хирĕçтăруллă тавлашу,
Ал тытса татнă мирлешӳ.

Ыт-ахальтен кăна-им çуркунне
Çуллен улăштарать тĕнче тумне?
Ыт-ахальтен кăна-им кĕркунне
Сăпайлăн кăтартать ĕçне-сумне?

Ман сăввăм-юррăмсем те пĕр çавра
Карталанса тăраççĕ ман тавра.
Ыт-ахальтен пĕрне те хайламан,
Пехиллĕ вăхăта сая яман.

Тупта мана, чун панă ăрăскал,
Шухăшпа ĕмĕт йĕпĕ — ан мăкал!
Тĕрле, йĕрле мана, хавхалантар,
Ыт-ахальтен килмест вăл — пархатар.

Шăтма, ӳсме, тӳсме, аталанма
Ыт-ахальтен нимскер пултараймасть.
Ыт-ахальтен тĕнче те çаврăнмасть,
Çавра тумасăр — сывлăш çаврăнмасть.

19.09.15

ĔНЕНМЕ ПĂРАХНĂ

2 тĕрленчĕк

1

Сарă хĕвел пайăркисем
Таврана саратрĕç,
Çуркуннехи чечексем
Шеппĕн йăлтăртатрĕç.

Сарă уйăх пайăркисем
Тӳпене çутатрĕç,
Çуркуннехи çăлтăрсем
Шуххăн чăлтăртатрĕç.

Шухă каччă аллисем
Хыттăн чăмăртарĕç,
Хĕм сапакан куçĕсем
Шӳтлĕн юмахларĕç.

Ах, анчах та эп ăна
Ĕненме пăрахнă,
Утса курнă сукмаксен
Йĕрĕсем тумхахлă.

2

«Манса кай ăна» — тесе
Мĕн чухлĕ ӳкĕтленĕ
Хама хам эп кунĕ-çĕрĕпе,
Ман сăмса тутри,
Пуçелĕк пулнă йĕп-йĕпе...

Юшкăнланчĕ ĕненӳ кӳлли,
Юшкăн лĕприне пуçа чикместĕп.
Ултавран тасалнă чунăма
Пулăшатăп чыслă пурăнма.

20.09.15

УЛШĂНУСЕМ

Мĕн ăмăрлатрĕ тӳпене,
Кам чĕнсе илчĕ çумăр пĕлĕтне?
Йĕпхӳ шӳтерчĕ пуль
Сукмаксене те çулсене,
Шух çил вĕрсе салатрĕ пуль
Хиврe сăмах куписене.

Çанталăк макăрать,
Сивĕ кунсем таврăнасса
Татуллăн палăртать.
Çу илемне çаратнă кĕркунне
Кĕтсе илмешкĕн хатĕр хĕллене.
Çумăрлă юр е юрлă çумăр çăвĕ,
Хĕл лариччен — хура, тавралăх тумĕ.

Хĕлле — шур аçамне уртса ярса
Çӳрĕ тавралăхпа хуçаланса.
Çи-пуçĕ ирĕлмешкĕн тытăнсан
Çур илемне килме епле чаран?

Улшăнусем пулаççĕех малтан-кайран,
Çанталăк йĕпенни, типни — аван.
Çулталăк: хĕллепе, çуркуннепе,
Çуллапа, кĕркуннепе — пуян.

28.09.15

ĔМĔТ

Утмăл çултан иртрĕм,
Çитмĕле çитесчĕ,
Çитмĕл çулпа ал тытса
Малалла иртесчĕ.

Ĕмĕтри пуласлăха
Яш! ярса пусасчĕ,
Çамрăк чунлă ватлăха
Пуçĕнчен лăпкасчĕ.

Сакăрвуннă, тăхăрвуннă,
Çĕр çула çитесчĕ,
Симпылланнă кĕрхи çимĕç
Евĕрлĕн çиçесчĕ.

Чăваш енĕм, эпĕ санăн
Йăлтăрти хĕрӳ,
Эп пурришĕн, сывланишĕн
Савăнтăр чĕрӳ.

Эп пурришĕн, сывланишĕн
Савăнтăр çемье,
Тăвансем те тусăмсем,
Пĕтĕм çут тĕнче.

Ырă çут тĕнче хĕвелĕ
Çиçтĕр куçăмра,
Ырă çут тĕнче илемĕ
Çиçтĕр чунăмра.

13.05.15

УТМĂЛТУРАТ

Утмăлтурат парнелерĕн,
Аллăмран чуптурăн.
Тутаран чуптунине те
Курса тăчĕ хурăн.

Сан ятупа утмăл çеç-и,
Ултçĕр сăвă çырăнчĕ.
Пирĕн тавра вĕчĕх, кĕвĕç
Сăмах-юмах сырăнчĕ.

Куç умĕнче юлташ тени
Куç хыçĕнчи тăшманччĕ,
Çывăх туссем мана унпа
Калаçма та хушманччĕ.

Çĕлен евĕр сехĕрленсе
Сăхассипе чалăхрĕ,
Тĕве евĕр кавле-кавле
Элек сурса альчăхрĕ.

Чалăхтăрин, альчăхтăрин,
Асăмра — утмăлтурат,
Чĕрере савни сăмахĕ:
«Ан пăрах мана, юрат».

21.03.15

ТЕЛЕЙЛИСЕМЧЧĔ...

Эпир пĕрне пĕри:
«Ĕмĕрлĕхе саватăп» тенисем
Мăшăрланса вĕçетчĕç уçлăхра,
Çутанкă пĕлĕтсем пулса
Çӳл тӳпене тăратчĕç çутатса.
Сăмах мăшăрланни —
Эпир мăшăрланниччĕ...
Эпир — телейлисемччĕ...

Эпир пĕрне пĕри:
«Ĕмĕрлĕхе саватăп» тенисем
Мăшăрланса ларатчĕç йăвара,
Чăпар çунатлă кайăксемĕн
Мăнаçлă вĕçевре саркаланса
Тавралăх илемне ырла-ырла
Юрлатчĕç те ташлатчĕç сывлăшра.
Сăмах мăшăрланни —
Эпир мăшăрланниччĕ...
Эпир — телейлисемччĕ...

Ах, тем те кăтартать
Çынна шăпа.
Этемĕн куççульне
Виçеймĕн ывăçпа...

27.11.15

ИККĔН, УЙРĂЛМИ ПĔРЛЕ

Хăть ăçта-таçта кайсан та
Эпваскатăп сан пата.
Эсĕ аякра пулсан та
Таврăнатăн ман пата.

Кăшăлтин кăшăлтатаççĕ
Вăрмансемпе уй-хирсем,
Шăкăлтин шăкăлтатаççĕ
Йăмрасемпе çăлкуççем.

Кайăк тӳпере вĕççен те,
Унăн йăви çĕр çинче.
Пирĕн килĕшӳ хĕлхемĕ
Чĕресен варкăшĕнче.

Пĕрне пĕри килĕштерме
Тупăннă эпир, элле?
Кăнтăрла е сĕм çĕрле
Иккĕн, уйрăлми пĕрле.

Эпир санпа — пĕр сапака,
Пĕр пайăрка, пĕр кăшăл.
Тăвансемшĕн, юлташсемшĕн
Çыпăçуллă пĕр мăшăр.

14.12.15

АХ! САНА, АХ! МАНА

Лапка-лапка юр çăвать,
Сукмака хӳсе хурать,
Пирĕн ура йĕрĕсене
Пирĕн куçран пытарать.

Хĕрлĕ пилеш çырлине
Хĕлле çитсен татаççĕ,
Хĕлле çитсен ун тути
Тутлă тесе калаççĕ.

Ӳкнĕ пек тӳшек çине
Ӳкрĕмĕр те юр çине,
Ытамланса кусрăмăр,
Пĕр чăмăркка пултăмăр.

Çуркуннепе юр кайсан
Симĕсленĕ сĕм вăрман,
Уçланкăра тĕл пулса
Ларăпăр-и юрласа?

Çумăр çăвĕ ташласа,
Вăрман тăрĕ юрласа,
Эпĕр санпа тĕл пулнишĕн
Пирĕнпеле савăнса.

Ах! сана, ах! мана
Кирлĕччĕ-ши тĕл пулма?
Тутлăн-тутлăн чуптума та
Хурлăн-хурлăн уйрăлма?

2015

2016

ЧР наукăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, этнограф, истори наукисен докторĕ Виталий Иванов; ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ЧНРадиовĕн продюсерĕ Виктор Дмитриев.

ЧР, РФ тава тивĕçлĕ строителĕ, ООО «Комплекс» строительство компанийĕн тĕп директорĕ Валерий Гордеев; ЧР, РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Зинаида Козлова профессор.

ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Николай Дмитриев.

Çыравçă Анатолий Ефимов-Хмыт педагог; ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш кĕнеке издательствин тĕп редакторĕн çумĕ Владимир Степанов çыравçă-фантаст.

ЮЛТАШСЕМ-ТАНТĂШСЕМ

Тахçанах тĕл пулман, калаçман,
Тахçанах пĕр-пĕрне ал паман,
Хурăнташăм, мĕнле пурăнан,
Мĕн тери эп хаваслă паян.

Каймалли сăлтавсем пулнăран
Тухса кайрăмăр хамăр ялтан,
Тунсăха путакан шухăшра
Савнă ялăм, ачалăх асра.

Çул юппийĕ салатрĕ пире,
Ăрăскал сапаларĕ пире,
Тĕл пулас ĕмĕтсем — каялла
Йыхăраççĕ пире ялалла.

Юлташсем-çке эпир, тантăшсем,
Пĕр ялта çуралса ӳснисем,
Пĕр урам тăршшĕпе утнисем,
Пĕр шкултан вĕренсе тухнисем.

Савнă ялăм, туссем, тăвансем,
Вăй парса тăракан вырăнсем —
Куртăм, савăнтăм чун каниччен,
Сывă пулăр тепре куриччен.

08.02.16

ТЕЛЕЙ ЫЙТСА...

Телей парас темен юратуран,
Телей парас темен юратуран
Телей ыйтса чĕркуçленсе тăни —
Чĕркуççине кăна, чĕркуççине кăна
Ыраттарни...

Телей парас темен юратуран,
Телей парас темен юратуран
Телей ыйтса куççуль сăрăхтарни —
Куç çутине кăна, куç çутине кăна
Йăмăхтарни...

Телей парас темен юратуран,
Телей парас темен юратуран
Телей ыйта-ыйта пуça тайни —
Чун кӳтнине кăна, чун кӳтнине кăна
Çырлахтарни...

Уçланкăра кăвайт çунать,
Ун варринче шăпа ташлать,
Телей туйса курман юратуран
Шачăртата-шачăртата кулать...

Телей туйса курман юратăвăм
Куçне чарса кăвайт тавра утать,
Кăвайт умне пырса ларса йĕрет, юрлать,
Телей парас темен юратуран
Телей ыйтса тăнран тухать.

Телей парас темен юратуран
Мĕн-ма телей ыйтать?
Телей курас килнипеле — телей курассăнах,
Телей пама пултарайман юратуран
Телей ыйтать...

11.03.16

ÇЕÇПĔЛ КУÇÇУЛĔ

Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт иртет.

Çеçпĕл Мишши

Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт иртет,
Çаврăна-çаврăна йĕр йĕрлет,
Пĕлĕтсем те, çынсем те чупаççĕ,
Пурăнма ĕлкĕрмешкĕн васкаççĕ.

Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт иртет,
Пĕрчĕн-пĕрчĕн шывне ӳкерет.
Çавă çумăр, тен, Çеçпĕл куççулĕ,
Йывăр килнĕшĕн ăмăр кун-çулĕ.

Остерпа Шупашкар çийĕпе
Ушкăн-ушкăн шур пĕлĕт иртет,
Остерпа Шупашкар çийĕпе
Çеçпĕл чунĕн мĕлки вĕлкĕшет.

Утса тухнă кунçулĕ кĕске,
Суха тунă каçалăкĕ — вăрăм.
Вăл — юратнă чăваш халăхне
Йыхравлать сăввисен уçлăхне.

Сăвăсем, çырусем — ушкăн-ушкăн,
Калавсем, тĕпчевсем — ушкăн-ушкăн,
Умлăн-хыçлăн килсе сас параççĕ,
Çеçпĕле пурте тимлĕн тăнлаççĕ.

Çеçпĕл-сăвăç чĕрин юн таппин,
Сăввисен кĕввинчи янăравĕ —
Чăваш халăх кунçулĕн уттин
Чи малта пыракан мăчаварĕ.

15.06.16

КАЙ!

3 тĕрленчĕк

1

Çумăр çăвать, çапса çăвать,
Йывăç-курăк тайăлать.
Шалкăм тăрăх кăра çилсем
Тапса сиксе алхасать.

Шеллесемĕр, ан тăрмалăр
Çӳле кайнă курăка.
Хĕрхенсемĕр, ан тустарăр
Çеçке çурнă улăха.

Кăра çилсем тулла-тулла
Йывăççене хуçаççĕ,
Тавралăха хăратмалла
Кашкăрсем пек улаççĕ.

Ывăнĕç те чарăнĕç-ха,
Кĕтнĕ канăç килĕ-ха.
Тӳлек вăхăт таврăнĕ-ха
Пирĕн лăпкă хутлăха.

2

Пĕр хура пĕлĕт карталанă хĕвеле,
Вăл ăна хупасшăн пулнă тет хĕве.
Хĕвел ахăлтатса кулса ярать те,
Пĕлĕт картийĕ ишĕлсе анать те...

Вăран та кул! Пĕлтер, тĕнче вăраннă!
Çут тĕнчере çап-çутă ир пуçланнă.
Вăрантăмăр! Сывлатпăр, пурăнатпăр,
Кӳлĕннĕ ĕç-пуçа тума пуçлатпăр.

Пурте эпир, çынсем — ĕç лашисем,
Кӳлнĕ лава мĕкĕрленсе туртакансем.
Мĕн ĕмĕр тăршшĕпе — ĕçпе кану,
Пĕр чарăна пĕлми — типтерлĕ хускану.

3

Мĕн-ма-ши тухрăн куç умне?
Мĕн-ма хускатрăн вырăнтан
Ман тикĕс пурнăç тĕнĕлне?

Вичкĕн куçун пĕр пайăрки
Мана сыхланăн туйăнать
Таçти çĕртен те,
Çутăран та, тĕттĕмрен те...
Кай! Кирлĕ мар!

Ман тăрăха — мĕн тĕллесе кăтартнипе
Çитсе тăрса, хăюллăнах пултартăн
Куç умне те, çул çине тухса тăма?

Уйрăличчен — кам-ши е мĕн
Хĕтĕртнипе пĕрре уяв,
Тепре камит тĕпĕртеттертĕн ман тавра?

Пĕр кайнăскер — ман тăрăха
Тепре килсе тек ан тустар!
Тасал куçран, хăть те ăçта кустар...

5.06.16

ТЫТĂМ

4 тĕрленчĕк

1

Çĕнни — кивви çинче никĕсленет.
Кивви — çĕнни мĕн тăвасса пĕлет.

Тĕрĕ — хăйĕн йĕрне, хăйĕн тĕсне хывать.
Юрă — хăй сăввипе, хăй кĕввипе сывлать.
Сăмах — хăйĕн тымарĕн
Хунавне те тĕшшине пăхать.

Пулăм — йăтăм — тытăм...
Пурте — пĕрне пĕри палланипе аталанать,
Пĕр ăруран тепĕр ăру явакланать.

2

Мĕн кирлĕ-ши манран
Асран тĕртсе кăларнă савнине?
Ма килчĕ-ши ман тĕлĕке?
Манса кайман-им-ха эпир пĕрле
Çĕрле çăлтăрсемпе пупленине,
Таса уйра кăвайт чĕртнисене,
Туйăмсене çăлтăрлăха вĕçтернине?..

Эп ун çинчен тахçантанпах илтмен,
Пĕлес тесе ыйтса та çӳремен.
Ман чун анлăшĕнче халь
Çăлтăрсем те, туйăмсем те çуталмаççĕ,
Унта халь уйăх та тухмасть.
Савни çумра çуккипеле —
Ман чунăм тӳпине хĕвел те хапармасть.
Асăм тамăкĕнчи савни сăнарĕ
Текех манпа хуçаланмасть.
Асăм тамăкĕнче халь шăп,
Кĕл куписем выртаççĕ тăп...

Асăм çăтмахĕнчи çанталăк
Çăтмахрисемшĕн пултăр авăк.

3

Юррăмсем — çунатăмсем,
Тӳпене çĕклекенсем.
Юррăмсем — юмахăмсем,
Ĕмĕтсен асамĕсем.

Юррăмсем — чечекĕмсем,
Кушăхман тымарлисем,
Юррăмсем — сар кайăксем,
Кĕвĕ-çемĕ ăстисем.

Çичçĕр хĕлĕх — сассăмра,
Çичçĕр çавра — юррăмра.

4

Ăçта каям ĕнтĕ, ăçта каям,
Тăван яла, тăван киле каймасăр?
Ăçта тата, ăçта саркаланам
Тăван кĕрекере саркаланмасăр.

Кама савам ĕнтĕ, кама савам,
Тус-тăвана, хурăнташа савмасăр?
Пуçа тайса кама-ши тав тăвам? —
Чунтан саван Çĕршывăма пулмасăр.

Çут тĕнчене çуратнăшăн, ӳстернĕшĕн
Тав аттене те аннене, ваттисене.
Пурнăçăмри çемье ăшши, телейĕшĕн
Тав мăшăра, ачамсене, мăнуксене.

29.10.16

КĔР КУНĔСЕМ

Каç вăрăмланчĕ, кун кĕскелчĕ,
Хĕвел ăшшин витти çӳхелчĕ.
Хаваслă, капăр кĕркунне
Чĕнет уяв кĕрекине.

Çил çакнă утьăкка тӳлеккĕн
Ярăнтарать çимĕçсене,
Сĕре ачашшăн та сĕреплĕн
Хĕвел лăпкать йывăçсене.

Халăх тапраннă вăрмана
Кăмпа та кĕр çырли пухма,
Çурран та машинпа каяççĕ,
Пĕри те пушă таврăнмаççĕ.

Сас-чĕвсĕр юлнă вăрманта
Çулçă ӳкни те илтĕнет,
Вĕтĕ, шултра çулçăсенчен
Çил — чăштăрти кавир тĕртет.

Çу çилĕсем таçта ăсаннă,
Кĕр кунĕсем ĕçле пуçланă.
Çанталăк, хайĕн еккипе
Пăшăлтатать хĕл çилĕпе.

17.09.16

ТАЛӐКӐН-ТАЛӐКӐН...

Кĕрхи кунсем асилтерсен ҫуркуннене,
Сирень шӑршиллĕ ӑшӑ каҫсене,
Калас килет-ҫке чун ыратӑвне:
«Савни, савниҫĕм, чун варли!
Ни кӑнтӑрла, ни сĕм ҫĕрле
Шырамӑн эс мана ĕлĕкхилле...
Сана курас килни —
Талӑкӑн-талӑкӑн,
Ҫулталӑкӑн-ҫулталӑкӑн
Ман кӑмӑла хуҫа-хуҫа сыпать.
Мĕн-ма сыпать?..»

Кайӑк-хурсем ӑсанчĕҫ ютлӑха,
Тӑван тавралӑх путрĕ ҫĕнĕ шӑплӑха.
Кичемлĕхрен ҫӑлмашкӑн чунӑма
Хӑяс килет туйӑмсене шуйлантарма:
«Эй, Хĕл мучи, ҫĕре юрпа хупланӑ чух
Пĕр-пĕр купа айне хурса
Пытар ман хурлӑ тунсӑха.
Шырассӑм ҫук. Эсĕ ӑна шӑнтса хытар та,
Ҫуркуннепе, юр шывĕпе пĕрле
Юхтар та яр. Мана унран хӑтар.
Талӑкӑн-талӑкӑн,
Ҫулталӑкӑн-ҫулталӑкӑн
Савниййĕме курас килни — ҫухалтӑр.
Ӑш-чикĕм, чунӑм ҫӑмӑллантӑр».

22.09.16

ТАВ ТУ...

6 тĕрленчĕк

1

Çулăм çунать.
Çулăм çинче хĕлхем йăлтăртатать.
Çулăм çинче юратăвăм çунса каять.

Çунсах каятăн-и, юратăвăм,
Ăçта каян?
Çунсах кайсан
Мĕскер пулса юлан?
Чипер çунма пĕлмен юратăва
Пулайĕ-ши тепре чĕртсе яма...
Тепре, урăхларах чĕртме-и?
Кампа? Пĕччен-и? Мĕн тума?

Сӳннĕ туйăм тĕтĕмĕ куçа çиет...
Шуралнă çӳçĕм шĕвелет...

2

Пуррине —
Çук тума пултаратпăр.
Çуккине —
Пур тума хăтланатпăр.
Аппаланатпăр!

Пĕлĕт, хăй çĕклемне
Çĕклеме ывăнсан
Çыххине пушатать те —
Шывне-и, пăрне-и
Тăкса хăварать,
Хăш тĕле, мĕн çине
Тăкнине уямасăр,
Ывăнса çитнĕрен
Нимĕне те курмасăр.

Шăрăх...
Манăн чун тӳпине
Шухăшсем килсе тулнă.
Чун ани кушăрханă.
Шухăш-ĕмĕтĕм — чун анине
Çĕннипе, уççипе
Чуптăва-чуптăва шăварать...

3

Çил-тăман палтăртатать,
Çĕлен-калтан явкаланса
Çул-йĕре хӳсе хурать.
Куç курать, ура утать,
Этем çĕнĕ йĕр хывать.

Кĕвĕçӳ йăкăштатать,
Çĕлен-калтан явкаланса
Шăвăнса кĕрсе сăхать.
Вĕлересле наркăмăшне
Çын ăшĕнчи тасалăхран
Чăнлăх сурса кăларать.

4

Аманнă кайăкăн
Йынăшакан юратăвăм,
Каçар çав пӳтсĕр тăхлана,
Каçар хăрушă пăшала,
Çав пăшала çĕкленĕ ик алла,
Эс вĕçнине сăнанă ик куçа,
Сана персе антарнăшăн савăннипе
Ахăрашса янранă хаваса...

Сана шыраканран пытарнăшăн
Кӳлĕ шывне тав ту,
Хăмăшлăха тав ту.
Чĕркуçленсе Турра тав ту
Сывă хăварнăшăн.

5

Чунăм, хăнăхрăм сана шанма,
Куллен кун санпа канашлама,
Тĕплĕн тишкерсе юмахлама,
Тĕрлĕ ыйтусем сӳтсе явма.

Тимлĕ те сăпайлă пулнăран,
Ăнланма та пулăшма пултарнăран,
Ывăнмасăр ырă тунăран,
Туйрăм — хăвату сан Турăран.

Тав тăватăп Аттемĕр Турра,
Ашшĕн ывăлне, Тур Амăшне,
Тав тăватăп Светуй Сывлăша —
Çутатнишĕн кăмăла, чуна, ăша.

6

Ĕç пуçласа вĕçлес ăсталăхшăн
Мĕн ĕмĕр тăршшĕпе тавах
Асаннене, кукамая,
Ать-аннене, ялти шкулта,
Вăтам шкулта, аслă шкулта
Вĕрентнĕ ăслă çынсене;
Тав кĕнеке çыракансен
Йышлă, мăнаçлă эртелне;
Тав тумаллах вулавăшра
Упранакан ăслăлăха,
Çут Тенчери чи пархатарлă,
Вышкайсăр хаклă пурлăха —
Кĕнекене!
Тавах куçа, кĕнекери ăса
Пуç арманне кӳрекене.

16.10.16

ТӐВАН ЛАЙӐХ

Ҫӑлкуҫ тӑрӑ, шывӗ тарӑн,
Ҫӑла сурма юрамасть,
Тӑван лайӑх, тӑван лайӑх,
Тӑвана сутма юрамасть.
Алла тытнӑ алтӑра та
Ҫапса ватма юрамасть,
Тӑван лайӑх, тӑван лайӑх,
Тӑвана прахма юрамасть.

Кӗрекене ларсассӑн та
Кӑмӑл шукӑль пултӑр-и,
Пӗрне пӗри кӑмӑл туса
Шӑкӑлтатса ларар-и?
Утсем чупса иртеҫҫӗ те,
Тусанӗсем вӗҫеҫҫӗ,
Юрла-юрла калаҫнисем
Калча пулса ӳсеҫҫӗ.

Йывӑр кунсем килсессӗн те
Кампа пӗрле чӑтмалла,
Твансем пире пӑрахсан та
Кам куҫӗнчен пӑхмалла?
Автан автать, шӑпчӑк юрлать
Тул ҫутӑлнӑ вӑхӑтра,
Йӑпӑртатса куҫҫуль юхать
Пӗччен ларнӑ вӑхӑтра.

Тӑван лайӑх, тӑван лайӑх,
Тӑвана сутма юрамасть.
Тӑван лайӑх, тӑван лайӑх,
Тӑвана прахма юрамасть.

22.02.16

МАН ЧУНĂМ

Сана мĕн кирлине пĕлесчĕ ман,
Ман чунăм, ман чунăм.
Ман пурнăçăн хĕрӳ тапхăрĕсем —
Вут-çулăм, вут-çулăм.

Сана мĕн кирлине пĕлесчĕ ман,
Ман чунăм, ман чунăм.
Ăçта çитсе мĕскер курмаваскать
Кун-çулăм, кун-çулăм.

Çĕр çийĕпе шăвать кăвак тĕтре
Ир-кӳлĕм, каç-кӳлĕм.
Йĕпе асилӳпе тулать тĕнче —
Ман килĕм, ман пӳлĕм.

Шăпа кĕнекине вулать пулас
Ман чунăм, ман чунăм.
Ун кĕнеки пулинччĕ çӳхе мар,
Хуп-хулăм, хуп-хулăм.

Ăшчик вăркать, ăшчик вăркать,
Чĕре хыпса çунать.
Чуна мĕн кирлине, чуна мĕн кирлине
Чĕре пĕлеймĕ ĕмĕрне.

11.03.16

КАШНИ САМАНТ — ПĔР ĔМĔР

Кĕтме пĕлекенсем чăтăмлине
Пĕлетĕн-и, пĕлетĕн-и?
Санпа татах та ӳлĕмрен тĕл пуласса
Кĕтетĕн-и, кĕтетĕн-и?

Чун куçĕ тĕттĕмре те курнине
Пĕлетĕн-и, пĕлетĕн-и?
Эпĕ сана çатăрласа ытамласса
Кĕтетĕн-и, кĕтетĕн-и?

Чăн юрату чăнах та пуррине
Пĕлетĕн-и, пĕлетĕн-и?
Эпир пĕррехинче пĕр мăшăр пуласса
Кĕтетĕн-и, кĕтетĕн-и?

Кĕтнĕ чухне кашни самант,
Кашни самант - пĕр ĕмĕр.
Пĕр чăмăра пуçтарнă чăтăмна
Ан çĕмĕрсем, ан çĕмĕр.

Юханшывсем анаталла юхаççĕ,
Нихçан та тăвалла хăпараймаççĕ.
Пурнан кунсем, çулсем хыçа юлаççĕ,
Самантлăха та каялла таврăнаймаççĕ.

Кĕтнĕ чухне кашни самант — пĕр ĕмĕр.
Килмеллисем килеççĕх, кĕтсемĕр,
Килмессисем килмеççĕх, тӳссемĕр,
Пурнăç саккунĕсем — кăра, атьсемĕр.

12.03.16

АЙ, ТУТУ

Илĕртӳллĕ куçпăван,
Куртăм сана ăнсăртран,
Хытă-хытă чăмăртаса
Тытрăм сана аллунтан.

Эсĕ манран ан вăтан,
Ан тĕртсе яр çумăнтан,
Эп сана куç хывнăран
Сăмах хушрăм кăмăлтан.

Ыталас та чуптăвас,
Ачашлас килет сана,
Çав териех, çав териех
Килĕшетĕн эс мана.

Хытăрах та хытăрах
Эс те мана çупăрла,
Лайăхран та лайăх-лайăх
Пултăр сана манпала.

Тăвансене пухам-и,
Евчĕ ярса пăхам-и,
Сана арăм тăвам-и те
Сан упăшку пулам-и?

Ай, туту — хурăн çырли,
Çĕр çырли, хăмла çырли,
Хитре туту — чечек пек,
Ман тута — пыл хурчĕ пек.

17.02.16

ЧĔНМЕН ХĂНА ПУЛАС МАР

Сĕтел çинчи чашăка
Пушă лартма юрать-и,
Кĕрсе тăнă тăвана
Хăвалама юрать-и?

Вĕр те çĕнĕ тутăра
Çурса тăкма юрать-и,
Кĕрсе тăнă тăвана
Тĕртсе яма юрать-и?

Сĕтел çинчи çăкăра
Типсе кайма памаççĕ,
Кĕрсе тăнă тăвана
Çитермесĕр ямаççĕ.

Сăра янă алтăра
Типсе ларма памаççĕ,
Кĕрсе тăнă тăвана
Ĕçтермесĕр ямаççĕ.

Каяс мар-ха, каяс мар,
Чĕнмен çĕре каяс мар.
Пулас мар-ха, пулас мар,
Чĕнмен хăна пулас мар.
Чĕнмен ĕçке каяс мар та
Намăс курса çӳрес мар.

22.02.16

ПĂХĂНУ

3 тĕрленчĕк

1

Хĕвел çунтарасси, тăвăл тустарасси,
Çумăр ислетесси, мĕнпур ытти-хытти
Çынран килмест. Веçех — çанталăкран.

Çĕрĕн, этемлĕхĕн — тӳпемĕр кăмăлне
Ӳпкевсĕр йышăнса чăтмалли çеç,
Тӳсмелли çеç юлать. Савăнасси те пулкалать...

Чунпа чĕрем мана çапла калать:
«Çут тĕнчене юрасси — çанталăка пăхăнасси,
Çанталăка пăхăнасси — çут тĕнчене юрасси».

2

Юрататпăр пулсан — пăхăнма хăнăхатпăр,
Мĕн пулса иртнипе, пуррипе, çуккипе,
Мĕн парса илнипе çырлахатпăр.

Хуть те кам тапăнсан та, сутсан та —
Каçарма пĕлмелле. Тур çырлах,
Атте Турă — тавах, эс пире ан пăрах...

3

Ман сăввăма та юррăма,
Сăмахăма та сассăма
Кăмăллакан е тиркекен пайтах.
Кăсăкланаççĕ? Лайăх, кăсăкланччĕр.

Мĕнпур ӳнерĕм — çутçанталăк
Йĕркине те саккунне чунтан,
Чипер пурнăçласа пурăннипе сывлать.

2016

2017

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш кĕнеке издательствин редакторĕ, Галина Матвеева çыравçă.

РФ театрĕсен Союзĕн стипендиачĕ Алевтина Семенова.

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, филологи наукисен кандидачĕ, доцент Александр Мефодьев çыравçă.

Чăваш халăх артисчĕсем Иванпа Валентина Ивановсем; ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕсем Александра Зайцевăпа Николай Сергеев, ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ЧНРадиовĕн продюсерĕ Виктор Дмитриев.

СЛАКПУҪ КĔВВИСЕМ

3 тĕрленчĕк

1

Паян эп пуринчен те телейли,
Ман кăмăлăм ҫӳпҫи тулли-тулли.
Ҫав ҫӳпҫере ман сăввăм-юррăмсем,
Тăвансене калас сăмахăмсем.

Паян эп пуринчен те телейли,
Тутарстан витĕр Пушкăрта каятăп,
«Хавхалану ҫăлкуҫĕ» уява
Чĕнсе илнишĕн питĕ савăнатăп.

Савнатăп ҫеҫ-и, пилĕке авса,
Пуҫа тайса ăшпиллĕн тав тăватăп.
Ирпе ирех тухса Шупашкартан
Каҫ пулттипе Пелепейре пулатăп.

Пелепейрен эп анăп Слакпуҫне,
Кĕҫтенттипе Якку пиччесене
Хăналăп кукăльпа та сăрапа,
Вĕсем ĕҫме юратнă кăмăспа.

Ҫăлкуҫ шăнкăртатать, йăлтăртатать,
Пире вăл тем ҫинчен вăлтса калать.
Итлетпĕр те илетпĕр чĕрене,
Шыв кĕввине вырнаҫтарма сăвăсене.

Ҫакă пуян та пархатарлă Пушкăрта
Килнĕ Чăваш виҫ ĕмĕр каялла.
Кашкăр тытма пултаракансене
Кашкăр таврашĕ тенĕ пуль, елле.

Кайнă, шыранă-тупнă та тĕпленнĕ,
Пелепей ятлă ҫĕнĕ ял ҫĕкленĕ,
Пелепейрен Слакпуҫнелле вĕҫтернĕ,
Ҫĕнĕ ҫĕрте йăх-рат йышне ӳстернĕ.

Кĕçтенттипе Якку — вĕсен ачи,
Чăвашпа пушкăрт халăхĕн элчи.
Пушкăрстана вĕсем чĕнеççĕ хăнана,
Йăпăртлăха, пĕрле пулмашкăн пĕр кана.

2

Хĕл кайса пĕтеймен-ха, выртать,
Хăшăл-хăшăл та ассăн сывлать,
Ирĕлсе пĕтмелле, юхмалла,
Çĕр ăшне сăрхăнса юлмалла.

Вăхăту виçĕ уйăх кăна,
Тахçанах эс пĕлетĕн çавна,
Пурпĕрех, уйрăлас килменни —
Çумăра юр туса вĕçтерни.

Хăваланăшăн хыт ан кӳрен,
Тăхăр уйăх иртет те, килен.
Шурă тăлăп парнелĕн çĕре,
Тĕлĕнтерĕн эрешлĕ ĕçре.

Çуркунне çитнине пĕлтереççĕ
Йăвине майлакан кураксем,
Çуркунне çитнине пĕлтереççĕ
Пăр катса ирĕкленнĕ шывсем.

Çуркунне çитнине пĕлтереççĕ
Çеçпĕлсен шăнкăрав сассисем,
Çуркунне çитнине пĕлтереççĕ
Сарпуçсен йăлтăрти куллисем.

Хĕл сивви çапасран хăрамасăр
Симĕс курăк шăтать ашкăрса.
Юлашки тăманна çавăрттар та,
Хĕл, кайсам хăвăртрах уйрăлса.

3

Шыв хĕррипе хăмăш,
Çеçенхирте кăлкан
Кĕшĕлтетсе ларать,
Кăшăл-юмах ярать.

Юманлăхра — юман.
Çăкалăхра — çăка
Йăлтăртатса тăрать,
Пылак тумла тăкать.

Йĕри-тавра юлташ,
Йĕри-тавра тăван
Саркаланса тăрать,
Уяв юрри юрлать.

Кашла, кашла вăрман,
Ташла, ташла уй-хир,
Пирĕн тăван — эсир,
Сирĕн тăван — эпир.

Кун ярипе, çĕрле
Эпир ялан пĕрле,
Эпир ялан пĕрле,
Эпир — пуян пӳлме.

Çутă тĕнче, этем
Вăрлăх сапса пурнать.
Вăрлăх сапми пулсан
Этем тĕнчи хухать.

Вăрлăх акар, акар! —
Ешерччĕр калчасем...
Вăрлăх акар, акар! —
Ĕрчеччĕр этемсем...

14.04.17

КОНСТАНТИН ИВАНОВА

Пелепейре хӗвел пӑхать,
Слакпуҫӗнче хӗвел пӑхать,
Ман чӗрере хӗвел пӑхать,
Хӗвел — ҫӗре телей лӑкать.

Ҫӑнӑх лӑканӑ пек лӑкать,
Кӗрпе лӑканӑ пек лӑкать.
Таса хӗмне сапа-сапа
Парка пайӑркине акать.

Эс укӑлча умне тухса
Кӗтсе илессӗнех мана,
Алран, хӑюллӑн ҫавӑтса
Илсе кӗрессӗнех яла.

Кил умӗнчи ват тиреке
Ытамласа эп пӗр кана
Тӑратӑп куҫӑма хупса,
Тӑратӑп вӑййӑма пухса.

Эп тинкеретӗп кантӑкран,
Кӗме юрать-и алӑкран,
Эс куҫна хупнӑ пӳлӗмре
Ларма юрать-и сак ҫине?

Тӗл пулнӑшӑн савӑннипе
Ӗсӗклесе йӗрсе яни —
Слакпуҫӗнчи музей-ҫурта
Час-час килсе ҫӳрейменни.

Килнӗ пулсан — хӑна пулас:
Ҫӑкӑр касса тӑвар сапас,
Кӑмӑс ярас та асӑнас,
Лере телей курма сунас.

Çамрӑкла кайрӑн, çамрӑклах
Чӑваш сӑввин çулпуçӗ пултӑн,
«Нарспи» поэма хайласа
Халӑх пуласлӑхӗшӗн çунтӑн.

Сана халь чӑвашла çеç мар,
Чылай чӗлхесемпе вулаççӗ,
«Нарспи» çинчен те, сан çинчен
Ӑслай кӗнекисем çыраççӗ.

Сана епле юратнине,
Сана епле чысланине! —
Санӑн курса-пӗлсе тӑрасчӗ,
Эс вилӗмсӗр, çавна туясчӗ.

Пӗлсе-курса, туйса тӑрса
Салху сӑну çуталтӑринччӗ,
Килкартинчи сад пахчинче
Кайӑк сассийӗ илтӗнинччӗ.

Сак çумӗнчи пилеш çине
Кайӑк пулса килсе ларса
Юрлаччӗр: Кӗçтентти пичче,
Якку пичче — тӑвайккинче.

Эпир итлер те киленер,
Аваллӑх кӗслине тимлер,
Пиччемӗрсен тӑван ялне
Çулсеренех килсе çӳрер.

14.04.17

АР ВĂЛ — ХĂВАТ, АМА — СĂВАП

2 тĕрленчĕк

1

Аякран пăхсан — хитре,
Шукăль курăнать тĕнче.
Уй-хир — парка пучахлă, тулăх,
Вăрман, çаран — пуян, çăра,
Шывсем, çăлсем те — тарăн, тăрă,
Çынсем — сĕреплĕ, уçă, ырă.

Çывăхран пăхма пуçлан та,
Тем те пĕр курса аптăраса каян та —
Аяккалла тарас килет!..
Ăçта? Çак пурнăç камитне
Шăла çыртса чăтма-тӳсме тивет...

Курас килменнисем — юнашарах,
Вĕсем курас килнисенчен правуртарах.
Хăваласа ярсассăн та хăпмаççĕ,
Çыртса туллас шутпа сăлтав шыраççĕ.

2

Çут тĕнчери мĕнпур аçа — амашăн,
Мĕнпур арçын — хĕрарăмшăн
Тӳпелешет те тупăшать.

Ама — хăватлине суйлать,
Хăватлинче — хăй чĕппине,
Хăй çурине, хăй ачине,
Ĕçне-хĕлне, хăй пурнăçне курать.
Ăслă ама хăйĕн пуласлăхне —
Хăватлă аçана шанса парать.
Ар вăл — хăват, ама — сăвап.

Çут тĕнчере
Хăватлă арçынсем çуралччăр.
Сăваплă анасем
Нăкă калча шăтарччăр.

23.04.17

САН САССУ

2 тĕрленчĕк

1

Юр ирĕлнĕ пек ирĕлчĕ те чун,
Савни шăнтса хăварнă кăмăл
Ирĕлет...

Çĕр ăшăннă пек ăшăнчĕ те юн,
Савни хăртса хăварнă туйăм
Ешерет...

Вăрман илемĕ — кăпăшка сарпуç,
Уçланкăра санах шырать ман куç.
Сарпуç — вăл пирĕн паллашу чечекĕ,
Анчах та наркăмăшлă ун шăрши, сĕтекĕ...

2

Сан сассу,
Епле мана вăл кирлĕ!
Сан сассуна илтме пăрахнă
Чунăм — чирлĕ.

Сан сассуна илтес килни —
Эс çутă тĕнчере чип-чиперех
Пурăннине пĕлес килни...

Эс асилместĕн ман çинчен,
Пачах та асилместĕн,
Эп çутă тĕнчере
Е пуррине, е çуккине
Пачах пĕлес теместĕн...

12.05.17

АЙВАН

2 тĕрленчĕк

1

Вылянă çеç, эс юратман.
Апла пулсан, апла пулсан!
Санăн мана ыталама та,
Чуптума та юраман;
Санăн мана ачашлама та,
Тĕкĕнме те юраман;
Куçран пăраласа пăхса
Йĕкĕлтеме те юраман;
Эсĕ мана улталама
Пĕр нимĕн чухлĕ вăтанман...

Мĕн-ма эп тимлĕрех пулман,
Эсĕ манпа вылянине
Курма, туйма пултарайман?
Эс илĕртни килĕшнĕрен
Сан суюна асăрхайман...
Айван... Айван...

2

Урамри пек шалкăм çумăр
Шапăртатать ăшăмра,
Урамри пек кăра çилсем
Алхасаççĕ пуçăмра.
Кăмăл-туйăм шӳсе кайрĕ,
Шал-шал çумăр, чарăнсам,
Урнă çилсен чукмарĕсем,
Пуçран çапма пăрахсам.

Çумăр айне тухса çакнă
Туйăм хĕнрен тасалчĕ.
Тăнлавран çапса кăларнă
Айван шухăш путланчĕ.

22.05.17

УЙĂРЧĔÇ

Тӳпере те уйăрчĕç пире,
Тĕлĕкре те курăнма пăрахрăн.
Кулянать пулин те чун-чĕрем,
Ман туяс килмест хама хăраххăн.

Паллашу те пулчĕ ăнсăртран,
Уйрăлу те килчĕ ăнсăртран.
Пулса иртрĕ пулĕ Çĕр çинче те,
Пулса иртрĕ пулĕ Тӳпере те.

Çĕр çинче те уйăрчĕç пире,
Çыхăнтарнă туртăма аркатрĕç,
Тӳпере те уйăрчĕç пире,
Çыхăнтарнă туйăма хавшатрĕç.

Панă — илнĕ! Каялла ыйтаймăн,
Пӳрнинчен мала иртсе каяймăн.
Тĕртсе панă — илнĕ, хĕпĕртенĕ.
Туртса илнĕ — пĕрлешӳ тĕпреннĕ.

Çук, пире никам та уйăрман,
Нимĕнле усал хушша тăман,
Туйăм шайĕ пĕчĕк пулнăран
Эпĕр хамăр — тачă çыхăнман.

4.09.17

ЮРĂ ЮРЛĂП...

Ăнлансамччĕ мана,
Сан çинчен шухăшлатăп.
Ăнлансамччĕ мана,
Эп санпа калаçатăп.
Сăнасам тавралла —
Çавраçил тапăнасшăн,
Сăнасам тавралла —
Хура тăвăл тухасшăн.

Асăрханччĕ, сана
Усалсем хупăрласшăн,
Асăрхан, сан çине
Хура тăм тăкăнасшăн.
Алăкран шаккасан
Уçса кĕртĕп, хăварăп,
Хура тăм çапасран
Хӳтĕлейĕп, хăтарăп.

Каяссу килейсен
Ниепле те чараймăп,
Сан хыçран алăка
Васкамасăр хупайăп.
Хупса юлăп та, хурлăн,
Пĕр сăмахсăр юрра
Алăка тĕршĕнсе
Шăппăн çеç, шăппăн юрлăп...

2017

ВИЛЕТ...

Ăҫта вĕсем
Ун куҫĕнчен вĕҫсе тухса
Ман питĕме хĕретнĕ
Ылтăн ҫулăм пĕрчисем?
Туйăм вучахĕ сӳннĕ тет...

Ăҫта вĕсем
Савни чĕлхи вĕҫне
Пырса ларса
Чĕвĕлтетсе пупленĕ сăмахсем?
Сăмах арчи пушаннă тет...

Туйăм — хуҫи пăрахнă килĕн
Сассăр ĕсĕклет,
Ун ишĕлес килмест,
Ĕлĕкхилле янрас килет...

Туйăм — хуҫи пăрахнă килĕн
Ишĕлет...
Тек никама та кирлĕ маррине
Пĕлсе... вилет...
Тет...

2017

ПЫЛАККИПЕ ЙӲҪҪИ ЕВĔР...

Пурнăҫа тытаҫҫĕ
Тĕрĕслĕхпе чăнлăх.
Пурнăҫа лăскаҫҫĕ
Ултавпа суя.
Сăмахне тытаҫҫĕ
Тĕрĕслĕхпе чăнлăх.
Сăмахне ваклаҫҫĕ
Ултавпа суя.

Шухăшсен патварлăхĕ —
Тĕрĕслĕхпе чăнлăх.
Шухăшсен пăтравлăхĕ
Ултавпа суя.
Юрату тĕрекĕ —
Тĕрĕслĕхпе чăнлăх.
Юрату инкекĕ —
Ултавпа суя.

Кăмăлсен кĕрнекĕ —
Тĕрĕслĕхпе чăнлăх.
Кăмăлсен чĕрпекĕ —
Ултавпа суя.
Ĕмĕрех пĕр мăшăр —
Тĕрĕслĕхпе чăнлăх.
Ĕмĕрех пĕр мăшăр —
Ултавпа суя.

Тĕрĕслĕхпеле ултав
Чăнлăхпа суя пекех,
Пылаккипе йӳҫҫи евĕр
Пулас ҫук ҫав пĕрпекрех.

15.09.17

2018

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ЧНРадиовĕн продюсерĕ Виктор Дмитриев; ЧАССР тата СССР халăх артисчĕ, ЧПАДТеатрĕн илемлĕх ертӳçи, аслă режиссерĕ Валерий Яковлев.

ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕсем: Елизавета Хрисанфова, Валерий Карпов, Ирина Верьялова.

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, «Чăваш хĕрарăмĕ» хаçат редакторĕ Маргарита Ильина çырăвçă; ЧНБиблиотекин тĕп специалисчĕ, ЧНКонгрессĕн культура комитечĕн ертӳçи Вера Архипова.

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш çамрăкĕсен театрĕн директорĕ Елена Николаева; ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Вячеслав Оринов режиссер.

ХУÇНĂ ТУРАТĂН — ХĂРАССИ

Мĕн-ма юратрăм-ши сана, савни,
Асран каймасть пĕрле пулни,
Нумай шутланăран пуç çаврăнать,
Куç умĕнче сăну тăрать.

Айван туйăмсене ятла-ятла
Ăçта çити хăваласа ярас?
Тен, çил çуначĕсем çине çакас,
Тен, юхакан шыва сапас?

Аванччĕ-çке иксĕмĕре пĕрле
Ирпе те, кăнтăрла, çĕрле,
Сивĕнессе шухăшламан, кĕтмен,
Нихçан та уйрăлас темен.

Мĕн уйăрчĕ, мĕн уйăрчĕ пире,
Тесе йĕреççĕ чунăмпа чĕре.
Шăпа пĕрле пулма çырман пулсан,
Ах, мĕн тăван-ха ĕнтĕ, мĕн тăван?

Хуçнă туратăн — хăрасси,
Татнă чечекĕн — шанасси,
Ах, питĕ йывăр савнирен
Тĕл пулмиех уйрăласси.

13.01.18

ЫЙТНИ...

2 тĕрленчĕк

1

Çил-тăвăла тархасласа ыйтатăп:
«Тĕп ту, пĕтер ман туйăма,
Ăна пусмăрлакан мĕскĕнлĕхне те
Таптаса ват, аркат, вĕтет...
Тĕпренчĕкне те тусанне
Вĕçтерсе кай та пе-ер! — ахрат тĕпне...
Кирлĕ пулманшăн савнине! —
Мĕскĕнĕнчен тасалнă туйăма та
Тĕртсе ярса чикелентер тĕнче хĕрне...» —
Йăлăхтарса çитернĕ туйăма
Пĕр шелсĕр ывăтрăм çил-тăвăл аллине,
Вăл тăватех эп ыйтнине.

2

Юр ирĕлме пуçланă пек
Чун ирĕлме пуçларĕ,
Ирĕлнĕçем — юрларĕ.

Юр ирĕлме пуçланă пек
Чун ирĕлме пикенчĕ,
Ирĕлнĕçем — çемçелчĕ.

Ӳкнĕ кăмăл çĕкленнĕрен
Йӳçĕ сăмах имленчĕ,
Сурнă суран тӳрленчĕ.

25.06.18

ЯТ...

Хĕвел, саррипе — сарă.
Тăпра, хурипе — хура.
Тимĕр, хыттипе — хытă.
Сывлăш, çăрипе — çăра.

Хĕлле, сиввипе — сивĕ.
Çулла, вĕрипе — вĕри.
Кĕр, кĕмĕллипе — кĕмĕл.
Çур, ешĕллипе — ешĕл.

Çырла, тутлипе — тутлă.
Çурт, хăтлипе — хăтлă.
Çăкăр, хаклипе — хаклă.
Тĕнче, аслипе — аслă.

Пурнăç, ыррипе — ырă.
Тӳпе, çӳллипе — çӳллĕ.
Хăват, вирлипе — вирлĕ.
Хисеп, чыслипе — чыслă.

Ят пани, ят хуни — явап.
Çутăпи ятăмпа килĕшӳллĕн
Таврана çутатма тăрăшап,
Сăввăмпа, юррăмпа ăшăтап.

Пӳлерти ту çинчи Киремет
Йывăççи тем те курнă, пĕлет.
Чунçӳрев йышăнчи чăвашсем
Çавăнта — чăвашла ят илет.

22.09.18

САНА КĂНА

Шăнкăртатса çăлкуç юхать,
Ун шывĕ хĕвеле савать.
Шăнкăртатса çăлкуç юхать,
Вăл хĕвеле савса юрлать.

Сирень çеçки йăлтăртатать,
Çеçкийĕ варкăшпа вылять.
Сирень çеçки йăлтăртатать,
Вăл варкăша савса юрлать.

Пĕр çамрăк тунсăхлă ларать,
Савнишĕн питĕ тунсăхлать.
Пĕр çамрăк тунсăхлă ларать,
Савни патне çыру çырать?

Çут тĕнчере ялан çапла:
Чун савнипе тĕл пулмалла,
Чун савнине куçран пăхса
Ялан çапла каламалла:

Эп сан çинчен,
Пĕр сан çинчен шутлап,
Эп пĕр сана, сана кăна савап.
Илтетĕн-и мана, илтетĕн-и?
Итлетĕн-и мана, итлетĕн-и?

17.10.18

КИРЛĔ ПУЛМАН

Чун хушнипе —
Туйăм çуначĕ çине ларнă
Вĕчĕх, анкă-минкĕ шухăшсем
Çула тапранчĕç, лерелле...
Чĕре сивленĕ шухăшсен
Çухалмалла, тĕпленмелле...

Путсĕр шухăшсене
Усал тума усă курма
Лере илсе юлсан — юлаççĕ,
Лере те сивлесен — кăнаççĕ.
Кăнччăр! Кирлĕ пулман!
Кирлĕ пулмаççĕ! Кайса тăкнă!
Тек, пуçăма та ăшăма
Варалаймаççĕ!
Чунăм — чĕре ĕçне çăмăллатать,
Йывăрлăхсен танатинчен çăлать.

Этем пуçне — ниме тăман
Киревсĕр, кĕтĕк шухăшсем
Килех тăраççĕ, çыпçăнаççĕ,
Çĕлен эшкерĕн явăнаççĕ,
Сăхма, пăвма тапаçланаççĕ...

Кăнччăр! Кирлĕ пулман!
Кирлĕ пулмаççĕ!

9.10.18

ТУНСӐХ

2 тӗрленчӗк

1

Тунсӑх — чее кушак.
Чӗрнипе чӑрмалать,
Хӳрипе кӑтӑклать.
Ӑна пӗрре тапса ярас килет,
Тепре — мӑрланине тӑнлас килет.

Тунсӑх — йӳҫек шӗвек.
Пӗрре сыпа-сыпа ӗҫес килет.
Тепре — пӗрӗхтерсе сурас килет.

Тунсӑх — кӑра асап.
Пӗрре ӑна ыталаса йӗрес килет,
Тепре — ятла-ятла
Хӑваласа ярас килет.

Тунсӑх — ӑста ӳнерҫӗ.
Хӑш-пӗр ӳкерчӗкне курса
Чун киленет.
Хӑше-пӗрне ҫурса тӑкас килет.

Тунсӑх — ӑслӑ патак.
Пӗрре — юнать, ҫапать.
Тепре — туяланма ирӗк парать.

Тунсӑх — асамлӑ сывлӑш —
Пӗр сивӗтет, пӗр ӑшӑтать,
Чирлеттерет те сыватать.

Тунсӑх пире алран ямасть,
Анчах та шукӑль шупӑрне
Улӑштарса уртса яма
Пирӗнсӗр пач! пултараймасть.

2

Чĕрне вĕççĕн тăрса
Мăйăнтан уртăнаттăм,
Тутасем пĕрлешсен
Вăйăмран тайăлаттăм.

Вăтана-вăтана
Тĕкĕнсе курнисем,
Имене-имене
Калама хăйнисем
Тен, пулман та вĕсем,
Чĕрене, чунăма
Çунтарман та вĕсем...

Вăхăт çитнĕ манма,
Хуçăлса тăвăнма —
Миçе хĕл, миçе çу
Куççульпе çăвăнма.

Ай, куççуль шăрçисем,
Ярăма пухнисем —
Çичçĕр тĕслĕн çунан
Сăввăмсем, юррăмсем...

24.09.18

ПАЙКИЛТ — СЛАКПУÇ

Мĕнех ĕнтĕ вăл пирĕн пурнăç?
Тăршшĕ ун — чĕльт! те вĕльт! кăна.
Çапах та чĕльт! — чĕлтĕртетет,
Çапах та вĕльт! — вĕлтĕртетет.
Çут тĕнчери кашни самант
Ахаль килмест, ахаль иртмест:
Пĕри каять — терпи килет,
Пĕри кулать — тепри йĕрет,
Пĕри урса кайса вăрçать,
Тепри ытамласа лăпкать.

Этем тенин, сывланă чух
Тĕрĕслĕхпе суялăха,
Тасалăхпа лапăрчăка
Пăтраштарни те пулкалать.
Çапах — апла та ак, çапла
Шухăшлакан ăс-пуçĕпе
Хăйне тивĕçлине суйлать,
Хăйĕн шайне пысăклатать.

Эй, Чăвашри Канаш-Пайкилт,
Эй, Пушкăртри Пелепей-Слакпуç,
Эй, Константин Ивановпа
Ухсай Яккăвĕн чунĕсем
Вĕçсе анса çӳл тӳперен
Утаççĕ пуль тăван çĕрпе
Тăван кĕтес хăнисемпе.
Шупашкартан килнисемпе
Сыпаççĕ пулĕ сăрине,
Çыртаççĕ пулĕ кукăльне,
Юрлаççĕ пуль, ташлаççĕ пуль,
Чун каниччен савнаççĕ пуль...

Йăх-рат тымарĕн йĕрĕпе —
Чăваш Енри Пайкилтрен

Тухса, çула якатса
Пушкăртстанри Пелепейĕн
Силпи, Слакпуç тăрăхне
Килсе ларса тĕпленнĕшĕн
Хĕпĕртеççĕ пуль, элле...

Пайкилт ялĕн варринче
«Слакпуç кĕтесĕ» ешерет,
Слакпусĕнчи сад пахчинче
«Пайкилт кĕтесĕ» вăй илет.

Ивановпа Ухсай йăх-рачĕн
Тăванлăхне сыпăнтарнишĕн,
Тавах Мударис тутара,
Тавах Виталий чăваша
Иккĕн пĕрле чăмăртанса
Тĕпчев тумашкăн тăрăшнишĕн,
Иккĕн пĕрле канашласа
Чăнне тупмашкăн вăй хунишĕн,
Мĕн пухнине калăпласа:
«Истоки. Родина и род поэтов
К.В. Иванова и Я.Г. Ухсая».
Кĕнекене вырнаçтарнишĕн.

Тавах чунтан Пайкилтсене,
Тавах чунтан Слакпуçсене
Хамăр поэт-тăвансене
Хисеп тунишĕн, чыс тунишĕн,
Ĕç пуçарса пурнăçланишĕн,
Малашлăха утасланишĕн.

26.10.18

ШУР ПЕРЧЕТКЕ

Кĕсле «Шур перчетке» калать,
Улах тĕрле-тĕрле юрлать.
Уйăх çутийĕн йăлтăркки
Кĕмĕл ўкерчĕксем сăрлать.

Тулта, кĕпер çинче пĕр йĕкĕт
Савнă хĕрне кĕтсе тăрать.
Кĕмĕл кĕпер патне пымашкăн
Хĕрне паян та тем чарать.

Мĕн-ши вăл çавă тем тени?
Тен, вăтанни, курнăçланни,
Тен, тĕл пулма юраманни?
Сăлтавсăр мар пуль кĕттерни...

Икĕ саспа юрланисем,
Сукмак хывса çўренисем
Тĕрленчĕç алшăлли çине,
Тутăр, кĕпе-саппун çине.

Хĕрарăм-хĕр йĕре-йĕре
Тĕрлерĕ пуль сăввисене,
Тĕрлерĕ пуль юррисене
Кун каçипе те çĕрĕпе...

Чун кĕтнипе тĕл пулнăран,
Юрларĕ пуль савăннăран,
Юрларĕ пуль хурланнăран
Кая юлса паллашнăран.

Улах «Шур перчетке» юрлать.
Хĕрарăм-хĕр сасси юхать
Кĕмĕл кĕпер çывăхнелле,
Чун варлине илтĕнмелле.

Кĕмĕл кĕпер ик айккинче,
Чупса иртен юханшывра —
Ик пирĕшти чăмпăлтатаççĕ,
Йĕкĕтпе хĕрĕн курăнаççĕ...

29.10.18

МĔН ТЕСЕ ХУРЛАНАН?

Мĕн тесе хурланан?
Мăшăру çумăнта, ачусем çумăнта,
Аçупа аннӳ сывă,
Ĕçре чиперех. Тата мĕн?
Мĕн шуйлатрĕ сана?

Ăнсăртран, тахçанхи савнипе
Тĕл пулса калаçни
Кăмăлна сыпайми хуçрĕ-и,
Кăмăлна сиплейми пăсрĕ-и?

Кĕл пулса кăвакарнă,
Кăвайт тепĕр хут чĕрĕлсе
Тепĕр хут хĕмленсе çунасси
Юмахра та пулман, ахалех ан кулян.

Ыр курса, савăнса
Чип-чипер пурăнмалăх,
Саншăн халь чи кирли —
Пĕтĕм пур, пурте лайăх.

Хăвна ху ăншăрт тивнĕ,
Е, куç ӳкнĕ ачан тыткалатăн...
А-а-ак сана! А-а-ак сана! А-а-ак сана!
Сив шывпа пĕрĕхтертĕм!
Çитĕ, тек, усал куç тапăнни
Ан туллатăр,
Шуйланни иртсе кайтăр...

1.12.18

ПУРНАÇÇĔ ТЕТ

Пурнаççĕ тет шартлаттарса
Карчăккипе старикки.
Стариккийĕ — Хăват тет,
Карчăккийĕ — Хавха тет.
Хавхаланса, хăватланса
Пурнаççĕ тет. Чăвашсем тет.

Пурнаççĕ тет вашлаттарса
Карчăккипе старикки.
Стариккийĕ — Мехел тет,
Карчăккийĕ — Хевте тет.
Хевтеленсе, мехелленсе
Пурнаççĕ тет. Чăвашсем тет.

Пурнаççĕ тет юрра ярса
Карчăккипе старикки.
Стариккийĕ — Симпыл тет,
Карчăккийĕ — Сăра тет.
Кăпăкланса симпылланса
Пурнаççĕ тет. Чăвашсем тет.

Пурнаççĕ тет шăкăлтатаса
Карчăккипе старикки.
Стариккийĕ — Чĕлхе тет,
Карчăккийĕ — Çăвар тет.
Юмах çапса юптарса
Пурнаççĕ тет. Чăвашсем тет.

Тетĕн хӳри вăрăм тет.
Тетĕн хӳри кĕске тет.
Тетĕн хӳри çук та тет.
Çут тĕнчене тĕлĕнтерсе
Пурнаççĕ тет чăвашсем:
Ачи-пăчи, çамрăксем,
Карчăксемпе стариксем.

2.12.18

ӲКĔН...

Латсĕр та нĕрсĕр ĕçӳсемшĕн,
Путсĕр, лапра калаçусемшĕн,
Ятарласа е шутламасăр
Тунă усал йăнăшусемшĕн —
Çын умĕнче, хăв умăнта
Ӳкĕн, çын кĕлетки — этем.

Çӳплĕ сăмах, элек сарнишĕн,
Йĕксĕкленсе ихĕлтетнишĕн,
Ура хурса такăнтарнишĕн,
Вĕчĕхленнишĕн, кĕвĕçнишĕн,
Çапса хуçма мĕкĕрленнишĕн,
Чун-чĕрӳне мĕскĕнлетнишĕн —
Хăть чиркӳре, хăть те уйра,
Хăть те килти туруменче
Атте Турă умне тăрса
Ӳкĕн те ӳпĕн, чĕркуçлен,
Çылăхсене каçарттарма
Ан кахалланчĕ, ан ӳркен.

Çын тавралла çылăхпа çынлăх
Харкашăнса кĕпĕртетет.
Çылăх сулахая тĕртет,
Унта — чăкраш асап та терт.
Сĕреплĕ çынлăх кашни çыннăн
Ӳсĕмĕсемшĕн хĕпĕртет,
Çынлăх таса пулма хистет.
Çын ĕмĕрĕ —
Чăлт! çуталать те, чĕлт! сӳнет.
Мĕскер хирĕçтерет çынна?..
Çынна мĕскер çитмест?..

11.12.18

ЧУНÇӲРЕВĔМСЕМ

4 тĕрленчĕк

1

Кĕнекере вуланипе
Киносенче куркалани — сахал.
Нумай çынна — тĕнче
Пуянлăхне куçпа курса
Алпа тытса пăхас килни
Канăç памасть.

Пăралакан ĕмĕтĕме лăплантарма
Пĕррехинче шут тытрăм та,
Тухса вĕçтертĕм.
Самолетпа Египета çитсе
Синай тăвĕ çинчен Шупашкара,
Вăтаçĕр тинĕсрен мăн Атăла
Чуллă тусен çӳллĕшĕнчен
Юрла-юрла салам ăсатнăччĕ
Чунтан саван Чăвашстана.

Египетран Израиле каçса,
Иерусалима таса ӳтпе кĕме
Шыва кĕрсеччĕ Вилĕ Тинĕсре,
Тӳпенелле пăхса кĕлĕ кала-кала
Шывра путмасăр, месерле выртса.

Христос вилсе, чĕрĕлсе тăнă вырăнсем —
Çут тĕнчери чи сумлă та сăваплă вырăнсем.
Унта çӳренĕ эпĕ макăрса,
Христос çĕрне, чулне ытамласа
Тав тунă — Çăлăнăç панишĕн çынсене,
Синай тăвĕ çинче, Моисея
Тыттарнăшăн ун икĕ аллине,
Икĕ чул лапташки çине
Ик алăри вунă пӳрни пекех —
Çырнă шăп! вунă саккунне.

Иерусалимран эп каçнă
Асаплă Палестинăна,

Вифлеемри пĕр витери пĕр кĕтесре
Тур Амăшĕ Мария, Христоса
Çуратнă вырăна чĕркуçленсе ларса
Чĕркуççипе те, çамкапа та, тутапа та —
Асамлă хӳтлĕх ăшшине
Чун-чĕремпе туйса тав каласа,
Вĕри куççулĕме шăлмасăр юхтарма...

Эп авалхи Иерихон хулин вырăнĕнчи
Виç çăлкуçран тапса тухса
Пĕр кӳлĕри чӳлмек, чечек пек фонтансен
Сăваплă шывĕпе чӳхеннĕ.
Христос, Иорданран шыва кĕрсе тухсан,
Пушă хирте, тусем çинче
Ăна Шуйттан илĕртнине,
Астарнине сирсе ярса,
Хĕрĕх куна пытаннă чăнкă ту çинчи
Пещера çинелле
Куçа чарса тинкернĕ эпĕ аякран.

2

Турцире каннă вăхăтра
Автобуспа кайса килсеччĕ
Пĕтĕм тĕнче пырса çӳрен
Мира-Демре хулинчи
Ту айĕнче вырнаçнă
Çĕр чĕтреннипе арканнă
Чулран каснă чиркĕве.

Светуй Николай Угодник,
Тепĕр майлă — Чудотворец
Çавăнта ĕçленĕ, вилнĕ.
Чул тупăкра пытарсан,
Мирра кăларса тултарнă
Сим ăшĕнчи шăмшакне
Италири чиркӳсенче
Ĕçлекенсем караппа
Ишсе килсе çаратнă та,
Бали хули чиркĕвĕнчи
Хăйсен тупри туса хунă.

Венецири купцасем те
Пынă Демре хулине,
Чудотворец шăмĕсене,
Вăрăсенчен юлнине
Пухса кайнă, вырнаçтарнă
Венецири Лидо ятлă
Утравĕнчи чиркӳре.
Хальхи Мира-Демрере
Туристсене кăтартма
Микул Турра çĕре панă
Чул тупăк вырăнĕ çеç.

Хиерополис — авалхи римлянсен
Ишĕлнĕ хули, амфитеатрĕ
Çывăхĕнче — çĕр айĕнчен
Кислород хăпарнипе
Вĕренĕ пек курăнакан
«Клеопатра бассейнĕнче»
Шампăртатса курнăччĕ,
Памуккале тăвĕ çинче
Ӳте, кăвак пыльчăкпа,
Сиплĕ кӳлленчĕксенче
Сĕрсе аппаланнăччĕ,
Чула катнă валак тăрăх
Ăшă çăлкуç шывне выртса
Шăмшака кантарнăччĕ.

Çĕр чĕтреннĕ самантра
Чăлтăр-тăрă Эгей тинĕс
Айне пулнă тватă хулан
Ишĕлнĕ керменĕсене
Шыва чăмса куçа уçса
Курса кăсăкланнăччĕ.
Тинĕс хĕрри тăршшĕйĕпе
Чуллă çуртсен пӳлĕмĕнчи
Сĕтелĕпе пуканĕсен
Ванчăкĕсем чылайччĕ.

Авалхи грексен поэчĕ
Гомер çырса хăварнă

Троя хулин вырăнне,
Аваллăхпа çыхăннă
Евфрат, Тигр юханшывлĕ,
Ванпа Туз — пĕтĕм Çĕр çинчи
Чи тăварлă кӳлĕсемлĕ,
Тватă тинĕс шăваракан
Чуллă çĕрлĕ, çӳл тусемлĕ
Тĕлĕнтермĕш Турцие
Каясахчĕех тепре.

3

Тунис çĕрĕнче çĕкленнĕ
Шутсăр пуян Карфагенра —
Пĕр хула-патшалăх тăрăх
Утни хăй мĕне тăрать!
Керменсен мăн стенисем,
Колонносем, палăксем,
Финикийла çырнă тĕрлĕ
Япала ванчăкĕсем
Куç шăрçинче упранать.

Абу-Саид хулинче —
Турачĕ, вуллисем тулли
Шăрçаллă, тутăрлă парнеллĕ,
Çулçăсăр, армак-чармак
Киремет йывăççи тăрать.
Халь ун вулли çинче хĕрлĕ тĕспе
«Ку — Киремет» тесе
Эп çырнине тупма пулать.
Парне туса çакса хăварнă хăйăва
Çил вылятма пуçланине курса
Сăнаса тăтăм пĕр кана —
Дербентри «Нарин-Кала» цитадельти,
Тутарстанри Пӳлер хулин тăвĕ çинчи,
Хамăрăн Атăл хĕрринчи
«Чувашия» сиплев çурчĕн картишĕнчи
Эрешлĕ «Киреметсене» танлаштарса...

Аваллăхра — пĕр чĕлхепе сăмахласа,
Пĕр хуранти пĕр апата
Пĕрле çисе ӳссе аталанса,

Сапаланса кайсан та упраса
Хăварнă йăлапа та йĕркепе
Халь те усă курса пурăннине шута хурса,
Тинĕселле пăхса тăрса шухăшласа...
Тинĕс — тунис, финикийла...

4

Çурçĕрти Пăрлă океанăн
Кольский çурма утравне,
Казахстана, Тюмене,
Кавказа та Кузбасса,
Украинăна, Крыма,
Германие, Венгрие,
Белоруссие, Эстоние
Ĕçпе кайса çӳренисем,
Раççейри ял-хуласене
Нумай республикăсене,
Облаççене кайса килни
Тавракурăма ӳстерчĕ
Тесен тĕрĕсех пулать.
Кайса курма палăртнă
Çĕршыв нумай, каясчĕ,
Çутă тĕнче пуянлăхне,
Мăнаçлăхне курасчĕ.

Чунçӳреве чун чĕнет,
Тахçан-авал ĕмĕрленĕ,
Ачалăхпа яшлăхра
Пурăннă вырăнсене
Туртсах илсе каясшăн,
Хăйĕн хальхи куçĕпе
Аваллăха чăмса анса —
Шыранине тупасшăн.
Аваллăхри вăрттăнлăхсен
Пĕлтерĕшне-асамне
Хальхи хăйне-хальхи мана
Кăтартасшăн, курасшăн...

Чун вăл таçтан вĕçсе аннă
Кĕтрет-кайăк, вут-кайăк.
2018

2019

ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, РФ патшалăх премийĕн лауреачĕ Арсений Тарасов драматург; ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, «Чăваш ен» Патшалăх телерадиокомпанийĕн радиовещанин шеф-редакторĕ Ольга Туркай драматург; чăваш халăх артисчĕ Александр Степанов-Пртта драматург; филологи наукисен кандидачĕ Ирина Кириллова.

РФ культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Юрий Кудаков композитор; РФ «Национальное достояние-2021» телеконкурс лауреачĕ Роза Степанова юрăç; Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер; ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Николай Эриванов композитор.



ЧР искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ Андрей Галкин композитор; ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ, ЧР Пуканесен театрĕн илемлĕх ертӳçи Юрий Филиппов.

Чăваш этнокультурин тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, Чăваш кинематографисчĕсен пĕрлешĕвĕн ертӳçи, ЧР çамрăкĕсен «Сăвар» пĕрлешĕвĕн хисеплĕ элтеперĕ Олег Цыпленков — Чунçӳревçĕсен пархатарлă юхăмне пуçарса ярса йĕркелесе пыраканĕ.

ТĂВАНЛĂХ ЮРРИ

Чĕннĕ пулсан хăнана
Пуçтарăнса каймалла,
Тăвансемпе тĕл пулсан та
Сăн-пит çиççе тăмалла.
Пирĕн пурнăç — сад пахчинчи
Улма-çырла ешерни,
Пирĕн пурнăç — юханшыври
Шывсен хумĕ шарлани.

Катаччисем чупнă чухне
Шăнкăравсем çакаççĕ.
Кăшарнире, çăварнире
Ай-лю-рай-ли тăваççĕ.
Çул куркине сыпса парсан
Каяс çула тухаççĕ,
Кайнă чухне çул тăршшĕпе
Ĕçкĕ юрри юрлаççĕ.

Тăван твана хисеп туса
Ал тытать те пуç таять,
Хăйсем патне пырса курма
Ыйтса чĕнсе хăварать.
Кайăк юрлать чăтлăхра та
Сасси вĕçет уçлăхра.
Тăван пурнать аякра та
Хаклă сасси хăлхара.

17.02.19

КИЛСЕМЧЧĔ

Сана курас килнипеле
Ман ăшăмра ăрша вылять.
Килсемччĕ, юнашар ларсам,
Санпа ăрша вăййи вылям.
Санпа кăна выляс килет,
Сана кăна савас килет.

Сана курас килнипеле
Ман чунăмра çăлкуç ташлать.
Килсемччĕ, юнашар ларсам,
Санпа çăлкуçăн калаçам.
Санпа кăна ташлас килет,
Сана кăна савас килет.

Сана курас килнипеле
Ман чĕрере чĕкеç юрлать.
Килсемччĕ, юнашар ларсам,
Саншăн чĕре юрри юрлам.
Санпа кăна юрлас килет,
Сана кăна савас килет.

Сана курас килнипеле
Купăсăма тăсса яратăп.
Килсемччĕ, юнашар ларсам,
Пĕр саншăн, кĕвĕсем калам.
Санпа кăна пулас килет,
Сана кăна савас килет.

6.04.19

АСАП

Çумăр тăкма хавас
Ăшчикĕмрен хăпарнă
Пыр тĕпĕнче капланнă пĕвере,
Хуйăхпа Суйăх авнă кимĕре
Шампăртатса Асап ишет,
Енчен енне шыв сирпĕтет,
Пăлханнă кăмăла йӳçĕхтерет.

Чун-чĕремри савни сăнарĕ, тăнласам,
Эс маншăн пур та, çук та пулнăран,
Ирĕлсе кай, куççулĕн шуса тух ман ăшăмран,
Тархасласа ыйтап, ан кутăнлан.

Тĕлли-паллисĕр шухăш пĕлĕчĕ пушантăр,
Йĕпе кӳренӳпе тепре тулса
Татах та сапăнма ан пултарайтăр.

Куçран кайми Савни сăнарĕ çилĕм евĕр,
Тархасласа ыйтса хăваласан та хăпăнмасть...
Хăй вырăннех вырнаçнă пуль, каймасть.

17.05.19

ПУРНĂÇ

3 тĕрленчĕк

1

Икĕ хĕвел пайăркине çыхатăп та
Чуччу тăватăп, вырнаçса ларатăп,
Ик аллăмпа пайăркаран тытатăп.
Эх! ярăнатăп, ярăнатăп,
Кăлтăр та кăлтăр кăмăл ăшшине
Тавраллипе кула-кула сапатăп.

Сăмахсăр кĕвĕ тĕнчипе
Сăмах тупса пăшăлтататăп:
«Тӳпе-Аттемçĕм, Çĕр-Аннем,
Сире ăшпиллĕн тав тăватăп,
Эп Çĕр çинче те, Тӳпере те
Сирĕн сывлăшăрпа сывлатăп.
Ĕмĕр çула çитсе курас
Тĕллевĕм юнăма уçлать.
Иккĕленӳ йăшкать пулсан та,
Чĕрем шанчăкăма шанать.

2

Ача валли сăпка аваççĕ,
Ăшне — тӳшек, минтер хураççĕ,
Çине — сăпка витти çакаççĕ.
Утьăккалла сиктернĕçем
Ачаш сăпка юрри юрлаççĕ,
Кăкăр параççĕ, ачашлаççĕ,
Ăшталанса, савса пăхаççĕ,
Ӳссен те пулăшсах тăраççĕ.

Элчелĕ татăлнă çынна та
Сăпка пек тупăка хураççĕ.
Çĕр шăтăкне антариччен —
Пирпе çĕкленĕ тупăкне
Шăтăк çинче ярăнтараççĕ,

Çут тĕнчерен леш тĕнчене
Хисеплĕн ăсатса яраççĕ.

Пĕрер-пĕрерĕн килнĕ, кайнă.
Чун килĕ-ши кунта тепре?
Ку ыйтăва татса параççĕ
Çӳл тӳпере, чăн тӳпере...

3

Этем —
Çуралать те ӳсет,
Мăшăрланать,
Ачаланать, мăнукланать,
Ĕçре тарласа касăхать,
Телейне туптаса антăхать,
Теме те шанать,
Хĕртĕнет те шăнать...

Малта мĕн юлать? —
Куç хупса
Шак! хытса каясси,
Çĕр пулмашкăн — çĕрме,
Çĕр айне, шăтăка выртасси...
Чунĕпе — ухăнса ярăна-ярăна
Тӳпене хăпарса каясси...
Çăтмаха улăхма — тамăкра тасалса,
Тамăк сийĕсене çĕнтерсе тухасси.

3.09.19

Ӳ́ЛĔМРЕН

Черкке тулли симпылĕ,
Курка тулли кăрчами
Эпир тытса паманран,
Эпир сыпса пăхманран
Каяшланса ларчĕç пуль.

Черккине те, куркине те
Эпĕр алла тытас çук,
Чăнклаттарса шаккаса
«Тав сана» та, «Сав мана»,
«Тавсси» тесе калас çук.

Текех эпĕр тытас çук
Черккипеле куркийĕ
Сас памасăр сентре çинче
Мĕн кивелсе кайичченех
Тусанланса тăччĕрин?..

Эрех-сăра сыпмасăрах,
Куçран пăхсах ӳсĕрĕлнĕ,
Вĕриленнĕ çан-çурăмпа
Эс ман тавра ура хуçса,
Эп сан тавра шуçкаласа
Çиçе-çиçе ташласси
Тепĕр хут пулаймасси —
Эпир санпа ӳлĕмрен
Тĕл пулма пăрахасси,
Чăнкăртатнă тапхăра
Ĕмĕрлĕхе манасси,
Тутăх тивнĕ туйăмсене
Çӳп шăтăкне ывтасси.

5.09.19

КĔРХИ ТУНСĂХ

Хирти сарă хăмăл çийĕн
Çил ачисем вĕçеççĕ,
Хăмăлсене вĕре-вĕре
Шăхлич калас тееççĕ.

Шăхличĕсем шăхăртнисем —
Улăм купи тавралла,
Шăхличĕсем шăхăртнисем —
Тырă пӳлми тавралла.

Шăхличĕсем шăхăрччăрин
Çулсерен те çулсерен,
Çуркуннепе акнă тырă
Тулăх пиçсе çитнĕрен.

Лайăх пиçсе çитнĕ тырра
Лайăх пухса илнĕрен,
Хутса тухнă кăмакара
Çăкăр, кукăль пиçнĕрен.

Çулса тăкнă улăх çинче
Çил ачисем вĕçеççĕ,
Улăх утин чечекĕсем
Кушăхаççĕ, типеççĕ.

Улăх — утă пулмаллине
Пĕлсе тăрсах шăтать-çке,
Вăрлăх акма ĕлкĕрмесен
Тымарĕнчен хунать-çке.

Çилсем вĕрсе хумхантарнă
Уйсем-хирсем пушанчĕç,
Кайăк кĕвви ташлаттарнă
Улăх-çаран шăпланчĕç.

Таптас килмен çулçă тăрăх
Утмалла та, утатпăр.
Кĕр мăнтăрĕ иртсе пырать,
Часах хĕле куçатпăр.

2.10.19

ПĔРПĔЧЧЕНЛĔХ

Пĕрпĕчченлĕх асапне чăтма
Епле йывăррине
Пĕлеççĕ пулĕ çăлтăрсем.
Тĕнче уçлăхĕнчи таранлăхран
Яраççĕ тĕрлĕ тĕслĕ çутăсем.

Çав çутăсен çипписемпе
Сыпăнтараççĕ пуль вĕсем
Çурăлса кайнă чун,
Çурăлса кайнă чĕрери сурансене...
Те çил, те çумăр шăтарса пĕтернĕ
Çулçă евĕрлĕрех туйăмсене,
Шăпа ури айне пулнисене...

Ах, пĕрпĕчченлĕх асапне чăтма
Епле йывăррине
Пĕлеççĕ çăлтăрсем кăна.
Вĕсем — тĕнче тусанĕ, тĕтĕмĕ,
Асар-писер çанталăк витĕр
Пăшăлтатаççĕ шахвăртса:
«Сан пек, тата ман пек пĕччен
Хăть çĕр çинче, хăть тӳпере,
Ирпе, кун ярипе, каçпа, çĕрле —
Шута илми нумай — çумра, лере...».

Ах, пĕрпĕчченлĕхрен хăтăлмалли меслет
Çак таранччен никам та
Шутласа кăларайман...
Тĕнчемĕр — пĕрпĕчченлĕхсен купи...
Çав купара йăшăлтатни пуль,
Пурăнни...

2.10.19

ВӐЙСЕМ

3 тӗрленчӗк

1

Савни савманшӑн
Кӳренме те намӑс.

Сан валли мар вӑл, урӑххи валли,
Ҫапла пайланӑ тен, шӑпа алли.
Тӗл пултарни те уйӑрни —
Темле вӑйсем, тен, вӑйӑ выляни.
Эсӗ ӗсӗклесе макӑрнине
Темле вӑйсем, тен, итлеме кӑмӑллани,
Ӗсӗклени — сӑмахсӑр юрлани...
Сӑмахсӑр юрӑ витӗр уласа
Кӳреннине, куляннине
Ӑшран хӑвалани...

2

Пире савӑнтарма васканӑ
Ырӑ вӑйсене
Усал вӑйсем такӑнтараҫҫӗ,
Ӳксен — таптаҫҫӗ...

Вӑйсем — ҫынсем пекех
Хирӗҫтӑруллӑ вӑрҫӑсем пуҫлаҫҫӗ,
Пӗрне пӗри пӗтереспе
Тӳпелешеҫҫӗ, ҫапӑҫаҫҫӗ, харкашаҫҫӗ...
Нихҫан та туслашмаҫҫӗ!
Кашниййӗ — хӑй ӗҫне тӑвать,
Ҫынна та пусмӑрлать,
Ырӑ тума та, хур тума та яваплать,
Икӗ енчен — ҫынна,
Икӗ хӑват тӗрӗслесе тӑрать.

Ҫут тӗнчере Ырӑ-Хаяр, Усал-Хаяр
Вӑйсем хуҫаланаҫҫӗ,

Усал-Хаяр эшкерĕсем
Çĕре кисрентереççĕ, амантаççĕ,
Этемлĕхе чир-чĕрсемпе пăваççĕ.

Ырриййĕ темшĕн сахалрах,
Хурриййĕ темшĕн нумайраххăн туйăнать.
Çĕр тулхăрать, çапах чăтать.
Чăтсан-чăтсан, пĕррехинче
Тĕнĕлĕнчен сиксе тухма та пултарать.

3

Сăвă çырма çуркуннепе,
Кĕркуннепе пуçлатăп,
Çулла, хĕлле канатăп,
Вăй пухатăп.
Е çырнине пăхса тухатăп:
Пĕр сăвăратăп, пĕр алатăп,
Пĕр пĕрчĕн — хутаçа хуратăп.
Хутаçĕ — кĕнеке пулса
Ман пурлăх арчине выртать,
Кĕнекемсем вулавăшсен пÿлмисенче
Хисеплĕн упранаççĕ,
Ачасемпе, çамрăксемпе,
Аслисемпе çывăхланаççĕ, туслашаççĕ,
Хыттăн е шăппăн калаçаççĕ,
Пурăнаççĕ...

3.10.19

ХУРА ТИНĔС...

Турă çырман телее
Хĕвелтен те уйăхран,
Çĕртен, шывран тархасласа
Ыйтса илме ирĕк çук.
Турра хирĕç кайма çук.

Хура тинĕс шывĕнче те,
Анаталла юхса аннă
Атăл, Сĕве, ытти шывсем —
Хутшăнайса кайнисем те
Тинĕс пулса тăнисем.

Хура тинĕс ăшĕнче
Ман куççуль тумламĕсем,
Анлă Атăл юхăмĕпе
Тинĕсе шарласа кĕнĕ
Тăварлă хум пĕрчисем.

Хура тинĕс çийĕпе
Ишсе-çиçсе çӳрерĕм,
Сыпкăмланă шывĕпеле
Ыратакан пыр йӳçĕхне
Лăнкăр-лăнкăр чӳхерĕм.

Хуйăха — чул, хăйăр айне
Тапта-тапта путартăм.
Савнă тусăм урăххине
Суйланăшăн кулянман пек
Курнăçланма пултартăм.

28.11.19

ШАЙ

Вĕçен кайăк, çăткăн кайăк,
Кайăк-кĕшĕк, тискер кайăк,
Вĕтĕ кайăк, ытти кайăк —
Çут тĕнче уйăрса панă
Шăп та хăйĕн сассипе
Хăйĕн юррине юрлать.
Ах, анчах та, тем тесен те,
Кашни кайăк — юрăç тесен
Кулăшла пулса тухать.

Ах, анчах та, тем тесен те,
Кашни сăвă çыракана
Сăвăç теме юрасан та,
Поэт тени — йăнăш пуль,
Тавлашниййĕ уссăр пуль.
Поэт пулма — этеме
Турă хăех çырать пуль те
Вăй-хăватне парать пуль...

Кашни кĕвĕ хывакана
Композитор теес пулсан,
Тĕрĕс мар пулса тухать.
Пултарулăхпа ăсталăх
Хăйсен шайне палăртнипе
Çӳллĕ вырăнта тăрать.
Çак йĕркепе, мĕн авалтан
Çирĕплетсе йышăннипе —
Мирлĕн килĕшес пулать.

21.12.19

2020

ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ, ЧНРадиовĕн продюсерĕ Виктор Дмитриев; ЧР литературăпа искусствăсен Патшалăх премийĕн лауреачĕ Борис Чиндыков драматург; ЧР киноӳкерçĕсен пĕрлешĕвĕн ертӳçин çумĕ, киноӳкерçĕ Илтимĕр Ефремов историк-архивист; киносценарист Зоя Илларионова педагог.

ЧР, РФ халăх артисчĕ, Чăваш патшалăх академи юрăпа ташă ансамблĕн илемлĕх ертӳçи, тĕп дирижерĕ Юрий Васильев; Чăваш халăх артистки Светлана Бубнова.

ЧР халăх пултарулăхĕн центрĕн методисчĕ, ЧР культура институчĕн доценчĕ, ЧР тава тивĕçлĕ артисчĕ Владимир Григорьев.

Чăваш халăх поэчĕ Юрий Сементер, Вера Енцова музейçĕ Мускавран тӳрĕ эфирта пыракан «Сас» кăларăма ярса панă парнепе, эпĕ те парнеллĕ.

ПĔРТЕН-ПĔРЕХĔМ...

Куçран пăхса каланă сăмахсем,
Кăвак сирень çеçки сапакисем,
Ман чунăмпа юмахлама
Çуркуннепе килеççĕ асăма:
«Пĕртен-пĕрехĕм, чун савниçĕм,
Эс çупăрла мана,
Чупту мана, юрат мана,
Пĕрле пулар яланлăха».

Вĕри туту каланă сăмахсем,
Пĕрле çунтарнă кăвайтсен хĕлхемĕсем,
Ăшри вучах хĕмне пăлхаштарма
Çу тăршшĕпе килеççĕ асăма:
«Пĕртен-пĕрехĕм, чун савниçĕм,
Эс çупăрла мана,
Чупту мана, юрат мана,
Пĕрле пулар яланлăха».

Иксĕмĕртен çуралнă туйăмсем —
Тĕнче çутин кăтра сывлăшĕсем
Кунĕн те çĕрĕн — кĕркунне, хĕлле
Пырса çӳреççĕ чунăм-чĕреме:
«Пĕртен-пĕрехĕм, чун савниçĕм,
Эс çупăрла мана,
Чупту мана, юрат мана,
Пĕрле пулар яланлăха».

11.01.20

КĂТАРТ СĂННА...

Тĕнче хĕрри пек
Аякра пуль эс, юратăвăм?
Туйăм сисменнипе-и тен,
Эс килнине, эс çумрине
Пĕлмерĕм те-и тен...
Тен паллаймарăм эп сана,
Тен, йышăнмарăм...
Тен, ӳлĕмрен те сывлăп сансăрах,
Эс килессе кĕтсе,
Эс пурпĕр килессе шансах...

Эсĕ — Эсех пулнă пулсан,
Турă çырни пулнă пулсан,
Палланă пулăттăм сана...
Кăтарт сăнна,
Кăтарт чăн-чăн сăнна...

Эп хамăн мар юратăва
Кансĕрлеместĕп, тĕкĕнместĕп,
Хăйĕн телейĕ çумĕнчен
Хамăн çумма туртса илместĕп.

Ман хамăн юрату хăвачĕпе
Хавхаланса хавасланса пурнасчĕ.
Ман хамăн юрату илемĕ-çутипе
Умри çула хевтеллĕн çутатасчĕ.

23.01.20

МАНĂÇАЙМИ КУНСЕМ-ÇУЛСЕМ

Эс парнеленĕ чечексем çинче
Хĕвел пайăркисем выляççĕ,
Çепĕç чечек çеçкисене
Чăпăл та чăпăл чуптăваççĕ.

Эсĕ каланă сăмахсем çинче
Хĕвел пайăркисем çунаççĕ,
Вĕри сăмах хумĕсене
Чун-чĕреме вырнаçтараççĕ.

Эс парнеленĕ ăшă туйăмсем
Хĕвел ăшшийĕн ăшăтаççĕ,
«Сана саватăп» тенисем
Кунĕн те çĕрĕн ачашлаççĕ.

Халь ыталатăн пуль урăххине,
Урăххине саватăн пуль,
Эсĕ чуптунă куçăмран
Йăпăртатса юхать куççуль.

Телей куççулĕ юхнисем —
Санпа телейлĕ пулнисем,
Санпа калаçнă вăхăтсем —
Манăçайми кунсем-çулсем.

25.01.20

КĔТРЕТ

Çавăн пек черчен, асамлă,
Çепĕç, илĕртӳллĕ кĕвĕ
Урамра та, чиркӳре те,
Залсенчи концертсенче те,
Телевиденипе радиора,
Интернетра, кинора
Халиччен илтсе курман.
Илтсе тĕлĕнтĕм паян.

Пĕччен мар пек, виççĕн пек,
Шăхличĕпе шăхăртни,
Сĕрме купăс калани —
Виçĕ саслă çемĕпе
Чĕвĕлтетни-чăвăлтатни
Тулта, кантăк тăрринче-ши? —
Илтĕнчĕ ман пӳлĕмре,
Эп — компьютер умĕнче...

Пуç янрарĕ, алтупанĕ
Тарлă çамкана хупларĕ,
Çуммăн янракан кĕвве
Ĕненсе те ĕненмесĕр
Тимлĕн, чун-чĕре тăнларĕ,
«Камсем?» — шухăш пăраларĕ.
Тен, ангелсен-херувимсен
Çемçе йыхравлă кĕллисем?
Ман пӳлĕмри иконăсен
Сăн-пичĕсем çуталчĕç,
Мана кĕтрет кăтартакан
Хăнасене, элле, палларĕç...

Илтĕннине
Ма телефон çине çырмарăм?
Пăлханнипе, сĕтел çинчи телефона
Пачах курмарăм.

26.10.20

ТАКАМ-ТЕМСКЕР

2 тĕрленчĕк

1

Канма выртсан та сăвă анратать,
Хусах йĕрке мăшăр йĕрке шырать.
Тупать, танлаштарать, вырнаçтарать,
Татах, çине-çинех çĕнни ыйтать.
Пуç çаврăнать...
Пăлхавлă шухăш чĕтренсе тăрать,
Ăна вылянчăк шухăш пăтрататать.

Ай, шухăшсен те тем курас килет,
Ай, шухăшсен те тем туяс килет.
Ай, шухăшсем те куçлă-им?
Ай, шухăшсем хăлхаллă-им?
Ман аллăмри калем —
Шухăш чĕлхи пулас...
Умри хута йăранлама
Сĕре правур, сĕре хавас.

Пĕччен — кичем...
Кичем — чĕрне кăларнă кушак евĕр
Хĕве тăрмалама хăять.

Тĕттĕм маччаллă шăплăхра
Такам сасси: «Чарăн, çите-ет!».
Кушакĕ вĕльт! сикет,
Çунатлă урхамах пулса,
Таканĕпе тапа-тапа хĕм кăларса
Ăçта-таçта ĕрĕхтерет...

«Тăкăтăк-хум», «тăкăтăк-сас»
Юртти уçлăхалла вĕçет.
Такам: «А-ă-ă, а-ă-ă, а-ă-ă,
Темскер: Ĕ-ӳ-ӳ, ĕ-ӳ-ӳ, ĕ-ӳ-ӳ —
Ейӳ пек сарăлса ĕрлет...

Канма выртсан та, канăçа
Тунсăх карталаса илет.
Каллех... Савни аса килет...
Мĕн-ма килет? Мĕн-ма килет?
Асăм — пыра йӳçĕхтерет:
А-ă-ă, а-ă-ă, ĕ-ӳ-ӳ, ĕ-ӳ-ӳ —
Такам-темскер çетĕлтетет...

2

Пĕлтерĕрччĕ мана шывсем,
Хитре-и манăн юррăмсем —
Атте-анне, тăван Çĕршыв,
Туслăх çинчен хывăннисем?
Ман юррăмсем —
Чунлăхпа çынлăх кĕввисем...

Пĕлтерĕрччĕ мана çилсем,
Чипер-и манăн сăввăмсем —
Çĕрпе тӳпе, тăван, юлташ,
Пурнăç çинчен çырăннисем?
Сăмахăмсем —
Куçран куçа вĕлкĕшнисем...

Пĕлтерĕрччĕ, кунсем-çулсем,
Хисеплĕ-и ман ĕçĕмсем —
Юратупа тату, телей,
Пĕрлĕх çинчен янранисем?
Ĕç-пуçăм — ăрăскал пӳрни,
Кун-çулăм — ăрăскал çырни.

26.01.20

ВĔÇЕРĔННИ...

Шухăш — вĕçерĕнсе кайса
Таçта тарни-тытăнманни,
Чĕнсессĕн те таврăнманни —
Çĕтсе кайса юта юлни...

Кулă — вĕçерĕнсе кайса
Ихĕрешни-ахăрашни,
Çихĕрешни-çухăрашни —
Кăмăл-сипет пăтрашни...

Намăс — вĕçерĕнсе кайса
Пиçиххине салтса ярса
Якăлтатни-япăлтатни —
Тасалайми вараланни...

Чĕлхе — вĕçерĕнче кайса
Сăмах тусанĕ вĕçтерни,
Сăмах çӳпне сапалани —
Çын умĕнче ята яни.

Тӳмеленни — хупланни,
Сăпайлăха хӳтĕлени,
Салтăнни — вĕçерĕнни,
Иртĕхсе латсăрланни.

26.01.20

МАН САНА КУРАС КИЛЕТ

Ман сана курас килет,
Пĕррехинче тĕл пулса
Куçа-куçăн шăкăлтатса
Калаçса ларас килет.
Юлташусем, тăванусем,
Ачусемпе мăнукусем
Мĕнле пурăнни çинчен
Пĕтĕмпех пĕлес килет.
Ман сана курас килет.
Сан мана курас килет-и?

Курас килнĕ пулсассăн та,
Эс ман пата ĕлĕкхилле
Нимле чăрмава пăхмасăр
Киле-киле кайăттăн,
Эсĕ мана ĕлĕкхилле —
Пĕрмай курас килни çинчен,
Пĕрле пулас килни çинчен
Куçран пăхса калăттăн...
Пит-куçăма чуптунă май
Пуçăмран ачашлăттăн...

26.01.20

КАМ ВĂЛ, МĔН ВĂЛ ЭТЕМ?

Мĕн чухлĕ куççуль юхтарать-ши этем?
Курка-и, витре-и — пулаймĕ виçме.
Куççулĕн тĕнчи питĕ кăткăс та тарăн,
Йӳççине, пылакне пăтратать те, мăнтарăн,
Тапать те тухать вăл куçран пит çине.
Юхать те анать, эс ăна пытараймăн,
Ăна каялла, шалалла хăвалаймăн.
Çăлкуç пек тапать вăл этем ăшĕнчен,
Этем ăшĕнчи тарават тĕнчерен.

Этем ăшĕнчен вĕри тар та тапать:
Пуçран пуçласа урана çитиччен —
Ӳт-пĕве касакан тăвартан тасатать,
Мунчара тарлани — сывлăха сыватать.

Куççульпе те тарпа шĕвенет пулмалла
Пирĕн ĕмĕр сакки — сарлаки, вăрăмми,
Ансăрри е кĕски...
Çĕр çинче мĕн пурри, этемре — пурте пур.
Кам вăл, мĕн вăл этем?
Мур пĕлет-и ăна?! Тур пĕлет-и ăна?!
Ай, тур-тур... Эй, тур-тур...

25.03.20

СĔРĔМ

Кĕтмен çĕртен пирĕн хушша
Каю шăтрĕ пуль,
Çавăнпа та пĕрне пĕри
Сас памастпăр пуль.
«Кая юлсан каю шăтать»
Тени тĕрĕс пуль,
Çавăнпа та пĕрне-пĕри
Шырамастпăр пуль.

Пирĕн хушша ятарласах
Кăвар хучĕç пуль,
Кăвар çине, çатăртатма
Тăвар тăкрĕç пуль.
Тăвар çатăртатса çунни
Сĕрĕм пулчĕ пуль,
Иксĕмĕре ик еннелле
Тĕртсе ячĕ пуль.

Урăм-сурăм шутлă сĕрĕм
Камран явăнать,
Аллипе те урипе
Камран çакăнать?
Сĕрĕм тивнĕ пуçупа
Мĕскер хăтланан,
Мана кампа пăтраштарса
Хăшне çупăрлан?

Сĕрĕм — пĕри кĕвĕçни,
Тепри ăмсанни.
Ма сахал-ши çын хушшинче
Çыншăн савăнни?..

1.04.20

ИККЕН...

4 тĕрленчĕк

1

Çур кунĕсем иртсе каяç иккен,
Çу кунĕсем иртсе каяç иккен,
Кĕр кунĕсем иртсе каяç иккен,
Хĕл кунĕсем иртсе каяç иккен...

Çăра çӳçсем те шĕвелеç иккен,
Шурă шăлсем те саралаç иккен,
Хулпуççисем те усăнаç иккен,
Чĕркуççисем те тайăлаç иккен...

Тĕлпулусем тĕссĕрленеç иккен,
Ал тытнисем имшерленеç иккен,
Калаçусем те шăпланаç иккен,
Савăшусем те сивĕнеç иккен...

Çутă кунсем тĕксĕмленеç иккен,
Хура кунсем шупкаланаç иккен,
Çул çыççăн çул хыçа юлать иккен,
Пĕртен пĕр ĕмĕр вĕçленет иккен...

Мĕскер юлать, мĕскер юлать хыçра?
Юлниййĕ — анăçра е тухăçра,
Юлниййĕ — савнăçра е хурлăхра,
Юлниййĕ — юшкăнра е вăрлăхра?

Телей курмасăр иртнĕ ĕмĕр — пушă,
Пушă пулсан, кама парайĕ усă?
Юлнин усси — тĕрек те ӳсĕм парасси,
Юлнин усси — ăс-хакăла ӳстересси.

Кам янкăр ĕмĕтлĕ, ун ĕçĕ-пуçĕ янкăр,
Кам çирĕп утăмлă, ун пурнăç çулĕ такăр.
Янкăр тӳпеллĕ, такăр çул-йĕрсемлĕ
Çынсен шăпи пулинччĕех — хĕвеллĕ.

2

Пĕтĕм çут тĕнче — куç шăрçинче,
Куç шăрçин керменĕнче — тĕнче.

Сан куçун Çĕршывĕпе çӳретĕп.
Тавтапуç, кĕмешкĕн ирĕк панăшăн,
Тавтапуç, мана эс çавăтса
Сан куçун Çĕршывĕпе уттарнăшăн.

Сан куçун Çĕршывĕпе çӳретĕп.
Уçса хунă хапхаран кĕретĕп,
Пĕччен мар, санпа, санпа утатăп,
Сисĕм-туртăм юхăмне путатăп.

Сан куçун Çĕршывĕпе çӳретĕп.
Хамăрăн çăлкуç шывне ĕçетĕп
Эсĕ ăсса панă ывăçран,
Эс те сып шывне ман ывăçран.

Сан куçун Çĕршывĕпе çӳретĕп.
Çуммăн утнă йĕрсене йĕрлетĕп.
Тавтапуç, асилӳсен илемĕшĕн,
Тавтапуç, тута хĕрри чĕтревĕшĕн.

Пĕтĕм çут тĕнче — куç шăрçинче,
Куç шăрçин керменĕнче — тĕнче.

3

Ай, тĕлĕнтермĕш туйăм!
Эс пĕчĕк питлĕ-куçлă
Чиперкке çăлкуçчĕ,
Юхрăн та кĕтĕн тăсланка юханшыва...
Çав юханшывăн васкаварлă чуппинче
Эс шăнкăртатрăн ун хаваслă куллинче...

Унтан вара, сиккипеле —
Чăнкă шывсиккине çаклантăн,

Пĕр çурăлса-сапаланса,
Пĕр пухăнса-чăмăртанса
Шавларăн шарласа —
Ӳксен, тăма пĕлнишĕн савăнса.

Унтан эс кĕтĕн тинĕсе,
Тинĕсĕн лăпкă е кăра
Вылянчăк çивитти çинче —
Хумсем тӳпкенине тӳссе,
Хумсем чуптунипе киленĕçсе
Вылянтăн кăпăкăн чĕтрешĕнсе...

Тинĕсĕн анлă çулĕпе
Кĕтĕн юхса океана,
Сивĕ-и, ăшă-и сана?
Ман туйăм — океан, типмеç,
Ман туйăм — океан, вилмеç,
Ман туйăм ĕмĕрне те иксĕлмеç —
Юратнăран пĕртен пĕрех ăна,
Чунăм суйланă Улăп-Арçына.

4

Сывлăшра шухăшсем вĕлкĕшеççĕ.
Тен вĕсем — лĕпĕшсем?
Курăка, чечеке чуптăваççĕ,
Улăхра утьăкка ярăнаççĕ,
Тен вĕсем чечексен çеçкисем?

Сывлăшра шухăшсем вĕлкĕшеççĕ.
Тен вĕсем — кайăксем?
Сăрт-тупа, вăрманпа калаçаççĕ,
Чĕлтĕрти кĕвĕ-çемĕ хываççĕ,
Тен вĕсем ылтăн-кĕмĕл çилсем?

Сывлăшра шухăшсем вĕлкĕшеççĕ.
Тен вĕсем — туйăмсем?

Çынсене лăскама пултараççĕ,
Çынсене чир-чĕртен сыватаççĕ,
Тен вĕсем эмельсем, симпылсем?

Сывлăшра шухăшсем вĕлкĕшеççĕ.
Тен вĕсем — ĕмĕтсем?
Çынсене тӳпене вĕçтереççĕ,
Тĕлĕксем кăтартса çиçтереççĕ,
Тен вĕсем шанчăксен çилхисем?

Сывлăшра шухăшсем вĕлкĕшеççĕ.
Тен, çынсен чунĕсем?
Асилсе кĕлтусан хĕпĕртеççĕ,
Асилместпĕр пулсан кӳренеççĕ...
Пире çывăх çынсен чунĕсем —
Лĕпĕшсем, кайăксем...

Пире çывăх çынсен чунĕсем
Сывлăшра вĕлкĕшеççĕ,
Пирĕнпе мĕн пулса иртнине
Тĕмсĕлсе тишкереççĕ,
Пулăшу ыйтакан тăванне
Инкекрен хӳтĕлеççĕ.

Чĕррисем вĕсене кĕлтуса асăнни,
Кайнисен ячĕпе те Мăнкун ирттерни —
Çын — Турра тав туни,
Çын — Турра ĕненни.
Чăн-чăн тав вăл — чипер,
Çын ятне ӳкермесĕр
Тарават, вашават пурăнма пултарни.

11.04.20

КĂТКĂСЕМ

Кăткăсем хĕвелпе вăранаççĕ,
Кантăкран тулалла тинкереççĕ,
Апат çинĕ-çимен, кун каçи
Вĕшкеме пикенеççĕ,
Ĕнтрĕкпе керменне питĕреççĕ.

Кăткă йăхĕн ратне тăсакан,
Çăмарта тăвакан Амана
Пăхакан ĕçĕ — чи явапли.
Пĕрисем Амана тăрантаççĕ,
Теприсем Амана арăмлаççĕ,
Теприсем — шăтнă чĕпписене
Ӳстереççĕ, ĕçе вĕрентеççĕ.
Кашниннех — ĕçмелли-çимелли,
Ывăнсан канмалли пĕр кĕтес,
Кунсерен тăрăшса тумалли
Шанса панă ĕç вырăнĕ пур.

Кăткăсем, Çĕр çинче
Пуринчен ăслăрах пулнине
Ăсчахсем палăртса çирĕплетнĕ.
Кăткă пуçĕн мими,
Кĕлеткин виçипе шутласан —
Йывăртарах...
Суя мар ку, шӳт мар ку, чăнах.

Пĕр йăва хӳттинчи тăвансем —
Кăткăсем пĕр-пĕрне ăмсанмаççĕ,
Пĕр-пĕрне таптамаççĕ,
Кĕвĕçсе кăшламаççĕ, сутмаççĕ.
Пĕртăван хушшинче вĕçкĕн çук,
Нишлĕ çук, чухăн çук, пуян çук.
Ма çынсен кăткăран вĕренсе
Туслă-мирлĕ, чипер пурнас çук?..

12.04.20

ПĂЯВ

Чăрмав çине чăрмав купаланать,
Кам тапăнать?
Çынна усал туса кам савăнать?

Çынна сиен туса ыр курасса шанса
Çĕленĕн шăвăнса кĕреççĕ хăшĕсем
Хура тухатмăш шăтăкне,
Сурса-вĕрсе сĕрĕмлесе
Тăваççĕ сарăмсăр ĕçне.

Тухатмăшсем сĕтел çине
Тĕрлĕ иконăсем лартаççĕ,
Намăсланмасăр сăхсăхаççĕ,
Çылăхĕнчен-им сыхланаççĕ?
Темскер лăпăртатса мăкăртатаççĕ,
Çук, Турăран пачах та хăрамаççĕ,
Темскер сапаççĕ, тем тăкаççĕ,
Мăшкăлтăк шыв ярса параççĕ — ĕçтереççĕ,
Им-çам ярса параççĕ — çитереççĕ,
Мăшăрсене çапăçтараççĕ, вăрçтараççĕ,
Çынран çынна туртса илме тĕллев лартаççĕ,
Çынна сăха-сăха чирлеттереççĕ, амакласçĕ...
Çын хуйăхĕ çинче ташша çапаççĕ...

Анчах! — Аслă тĕнче саккунĕсен
Виççĕлле явнă тĕрĕслĕх пăявĕ —
Вĕри çĕленĕн чашкăран çынпăвана та,
Тухатмăш тăрăх çӳрекен
Сӳсленчĕк, кĕтĕк, сӳтĕк тăмсая та —
Меллĕ самант тупса — хăйнех пăвать,
Ăнт! кăтартать.

12.04.20

ВАТЛĂХ

Куçкĕски çине сайра пăхатăп.
Ман çине эп мар, такам пăхать:
Кăвак çӳçлĕ,
Çамкапа янах шăмми таран —
Пурнăç урапи
Тапта-тапта шăтарнă йĕрпĕксем...
Пурнăç кустăрмин таканĕсем —
Путăк чĕрекен ӳнерçĕсем
Кӳлепе талккăшĕпех кусаççĕ,
Таптанишĕн каçару ыйтмаççĕ.

Лӳчĕркесе якатнă хут листи
Евĕрлĕ салхуллă сăнлă пит
Сайраланнă хăрпăксемлĕ куçĕпе
Хăй çине вăтанчăклăн пăхать.

Куç урамĕпе тĕпĕртетсе
Аякка таврăнайми ăсаннă
Тапхăрсен паха техĕмĕнчен
Тӳсĕм — алтăрпа телей ăсать, сыпать,
Чăтăмне-тусне те сыптарать...

Ватлăх çурăмран лăпкать, тавах.
Пирĕн пĕр-пĕрне упрамаллах,
Пирĕн пĕр-пĕрне юратмаллах.
Нумайрах пĕрле пурăнмалла
Пултăринччĕех... Эй, Тур çырлах...

13.04.20

СЫВЛА...

2 тĕрленчĕк

1

Тĕл пуласла шантарасла
Хутран-ситрен шăнкăравла,
Эп янă йышлă салама
Сайра хутран хăть хуравла.

Хăть те ăçта, хăть те кампа эс пурăн,
Анчах та пурăн.
Саншăн эп пуррипе-çукки
Пĕрех пулсан та — пурăн, сывла...
Телейлĕ пул, кур пархатар,
Ху пуррипе эс такама та савăнтар,
Мана та...

Аллусене вĕçсе каяссăн авăсса,
Ура хуçса
Эс ман тавра чăваш ташши ташланă,
Хамăр юрăсене эпир санпа
Икĕ саспа хитре, таса юрланă.
«Савниçĕм, эсĕ манăн, эпĕ — санăн» —
Тесе вĕрин-вĕрин пăшăлтатса,
Эсĕ мана ална йăтса,
Кăкăр ытамĕнче ачашласа
Чуччу пек ухăнтарнă-ярăнтарнă...

Тута сĕтекĕпе ӳсĕрĕлсе
Çĕре тĕшĕрĕлсе ансан,
Куснă эпир чечеклĕ курăк çийĕпе
Чечек саррилĕ сывлăша
Антăхиччен çăта-çăта,
Пĕрлешнĕ кăмăл-туйăма
Чĕресемпе уçла-уçла...

Асăм тĕнчи
Пулни-иртнишĕн тунсăхлать.
Сирень çеçки пек кăпăшка çӳçӳ,

Юман пек кĕрĕ кӳлепӳ,
Сассу, куллу —
Ман чунăм чĕринче,
Ман чунăм куçĕнче
Çырăнса юлнă...

Эс пурăнсамччĕ, эс сывла...
Сывлăш хумĕсемпе пĕрлешĕнсе кайса
Ман тунсăхăм çитет те сан пата —
Ăшна кĕрет, вĕриленсе тухать те
Каялла вĕçет.
Сан çумăнти хĕрарăму пекех
Эп те сывлатăп сан сывлăшупа,
Сывла, пуриншĕн те сывла...

Кунтан кайса кунтах таврăнасси
Тен, пулмĕ нихăçан та,
Вара пĕр-пĕринпе тепре тĕл пуласси
Пулаймĕ тек ниçта та...
Сывла, пурăннă чух сывла...

13.04.20

2

Нивушлĕ-ши çак пурнăçра
Тек нихăçан та, тек ниçта та
Тепре тĕл пуласси пулаймĕ?..
Çак ыйтăва татса пама
Шăпа мана пĕр япала кăтартрĕ.
Пĕррехинче, иксĕмĕр те
Пачах! кĕтмен çĕртен
Пирĕн куçсем тĕл пулчĕç...
Эп пуçа пăрнă вăхăтра
Эс вăтанса-ши е намăсланса-ши,
Пĕр самантрах — çĕмренĕн, çĕре путнăн
Тарса çухалтăн ман куçран...
Сан сывлăшна пӳлсе, шĕвĕр ыйту парса
Чăрмантарассăм çук. Сывла...

3.03.21

КАМ ХĂЛХИНЕ КĔМЕН?

Çынна хăй пек пулма
Никам та, нимĕн те чармасть.
Турă — çынна, хăйне тивĕçтерме
Маçтăрласа пуçтарнă та
Çĕре антарнă.
Çынсем — каппайланса кайса
Çĕр-аннене чура тăвассипе
Тăмсай пулса тăнишĕн
Кама айăпласа ятламалла?
Турă айăплă мар!

Турă çутатнă Çĕр çинче
Таса, илемлĕ çутçанталăк, апла-тăк,
Пурнăç пулмалла йĕркеллĕ, савăк.
Анчах та Çĕр талккăшĕпех
Пĕтме пĕлмен вĕçĕ-хĕррисĕр
Киревсĕр-ирсĕр вăрçă алхасать.
Этем тавра мĕн асăхать?
Çĕр-аннене сирпĕнтерсе кисрентерме
Намăсланмаççĕ.
Çĕрпе шывсен, çынсен сасси — шари!
Этем — тискер ĕç тунипе телейлĕ-и?

Укçашăн, мулшăн антăхса,
Çĕр ăшĕнчи пуянлăха
Хапсăннипе ăсран кайса
Этемлĕх пĕтерет этемлĕхе.
Пĕтĕм Этемлĕх мар, чăнне калар!
Этемлĕхе аташтарать
Пĕр пĕчĕкçĕ эшкер каварĕ!
Ирсĕр тĕллевлĕ ушкăна
Пĕррехинче шачлаттаринччĕ
Архангелсен капмар чукмарĕ!

Çынна вĕлерекен бактери-вирус
Шыраса тупнă ăслă тăмпуçсен

Çук-шим ашшĕпе амăш,
Мăшăр, ачисем,
Мăнукĕсем, тăванĕсем...
Вăрçă промышленноçĕн чăнкă аталанăвĕ
Патшалăха хӳтĕлеме...
Хӳтĕленме! Тăшман ан тапăнтăр, хăратăр!
Ма тапăнать вăл? — выçăх пулнăран,
Миçе банкра-ши? — мăй тари! пуянлăхĕ
Сахал пекрех курăннăран.

Тăшман: яш-кĕрĕме, ача ашшĕсене
Вăрçа кĕртет те, пĕтерет...
Тĕнче кĕрлет:
«Çитет выçăхланма, харампырсем!
Пурăнччĕр пирĕн ывăлсем, упăшкасем.
Эсир пуçарнă вăрçăсен хирĕсенче
Миллионшар выртаççĕ пирĕн пепкесем!
Пăчлантăр вăрçă! Тĕнчипех пулинччĕ мир!
Атте-аннен — саркаланса юрлатăр
Тулăх вăрман, пуян уй-хир» —
Янрать Çĕр çийĕн амăшсен сасси.
Тархасланин — пулинччĕех усси!

«Çынна çын ухмаххи çиме пуçларĕ.
Этемлĕх ĕмĕрĕ татăласран —
Çынсем пĕрне пĕри, çĕре, шыва
Хисеплени, савса пăхни кăна хăтарĕ» —
Турă Этемлĕхе çапла каларĕ.

Кам хăлхине кĕмен? Кам ăнланмарĕ?
Турă юнанине ни чĕрипе,
Ни чунĕпе ăнкарманни —
Вилĕм çави айне пулма пултарĕ.

14.04.20

ĔМĔРЛĔХЕ ЭПĔ — САН

Савни тетĕн эс мана,
Савни тетĕп эп сана,
Икĕ савни мăшăрланса
Пурăнатпăр савăнса.

Туя туй пек турăмăр,
Тус-тăвана пухрăмăр,
Пире ырă суннисене
Хапăлласа пăхрăмăр.

Пĕрне пĕри кирлĕрен,
Пĕрне пĕри кĕтнĕрен
Тĕл пултăмăр пулмалла та,
Пĕр пултăмăр пулмалла.

Килĕшӳллĕ кăмăлсем,
Илĕртӳллĕ туйăмсем,
Шăкăлтатса иртсе пыччĕр
Пирĕн пурнăç çулĕсем.

Паянлăха, ыранлăха,
Ĕмĕрлĕхе эпĕ — сан.
Паянлăха, ыранлăха,
Ĕмĕрлĕхе эсĕ — ман.
Пирĕн семьере, савниçĕм,
Çыпăçуллă юрату.
Эсĕ мана мĕн виличчен
Чуппа тума кăмăл ту.

16.04.20

ПУРНАСЧĔ!

Чип-чиперех пурăнмаллаччĕ,
Макра кĕвви нăрлаттаратпăр.
Йăлтăр та ялтăр кулмаллаччĕ,
Сăмса шывне нăшлаттаратпăр.
Тăвансемпе тĕл пулмаллаччĕ,
Пĕр усалтан сыхăланатпăр.
Ĕçе тухса ĕçлес çынсем
Килте вĕчĕрхенсе ларатпăр.

Таçтан килсе çакланнă мур
Этемлĕхе туллать, çăлать,
Мĕне пула çак мăшкăла
Этемлĕхĕн чăтас пулать?
Каясси кайĕ пурпĕрех,
Анчах пĕтет-ши тĕппипех?
Çынна çиен выçăх микроб
Асать пĕтĕм тĕнчипех.

Çĕр-аннене асап кӳреççĕ —
Вĕçĕ-хĕррисĕр вăрçăсем,
Пуяс шутпа ун ăшчикне
Пăраласа шăтарнисем.
Ун тӳсĕмĕ хашлатнине
Сăнаса тарăхнă Тӳпе
Ывăтрĕ пуль хура тăмне
Этемлĕхĕн лĕпки çине.

«Айлат, нăйла айван этем,
Сана пĕрре вĕтсе илем.
Пĕртен пĕрех Çĕр-аннӳне
Чарăн, чарусăр тӳпкеме,
Вĕрен ăна хисеп туса
Ырă ĕçпе савăнтарма,
Сăмахна пар та, пурнăçла!» —
Янрать тăнлав, янрать хăлха.

Этемлĕхĕн лĕпки çунать!
Çунать пулсассăн та, этем
Хăнăхниллех выçăхланать! —
Лавкка таварĕ хакланать.
Мĕн тери йывăр самантра та
Этем çапла чунсăрланни
Этем — микроб пек вĕтелсе
Этемçиен пулса тăни.

Ыран мĕн пуласси паян
Хамăр тăрăшнинчен килет.
Мур аснинчен хӳтĕленме
Питĕрĕнсе ларма тивет.
Мăнкун ирттертĕмĕр килте,
Ăшă, тулли кĕрекере.
«Христос чăн чĕрĕлнĕ» тесе
Чунтан-вартан хĕпĕртесе.

«Христос чăн чĕрĕлнĕ» пулсан
Кăçал, тавах, тĕнче пĕтмест.
Христос чĕрĕлеймен çулта
Çĕр çине Çăлăнăç килмест.

Христос чăн чĕрĕлтĕр! Пурнасчĕ!
Турă сывлăшĕпе сывласчĕ...

16.04.20

КАЙРИ — МАЛА!..

7 тĕрленчĕк

1

Уя тухатăп та,
Тӳпенелле пăхатăп.
Эй, пĕлĕтсем, шур пĕлĕтсем,
Ăçта вĕçетĕр вашкăртса?
Сире — малтан такам туртса пырать-и,
Е хыçалтан
Такам хăваласа хăшкăлтарать-и?
Кĕшĕлтетсе утма-чупма кам яваплать?
Шурă, хура, кăвак, сенкер тумăрсене
Кам çĕлесе тăхăнтарса,
Улăштарса тăрать?..
Е хăвăр маçтăр?

Уçланкăна кĕретĕп те,
Чечек чашкисене ӳпĕнтерсе
Сывлăм шăрçисене
Ал тупанне пухатăп —
Сыпма, пит-куçăма уçăлтарма...
Ай, сывлăм тĕтрисем
Мĕн-ма ӳкетĕр çĕр çине?
Сире — çĕре нӳрĕлетме кам яваплать?
Е хăвăр маçтăр?

Çăлкуç патне анатăп та,
Шывне ывăçласа ăса-ăса ĕçсе
Вăя хушатăп.
Ай, çăлкуççем, асамлă шĕвексем,
Çĕр айĕпе çулсем хывса
Çĕр ăшĕнчен тапса тухса
Çĕр çийĕпе шăнкăртатса юхма
Сире кам яваплать?
Е хăвăр маçтăр?

Эп чиркĕве кĕретĕп те,
Кĕлĕ итле-итле
Чунпа-юнпа каяп вĕриленсе,
Чунпа-юнпа каяп илемленсе...
Уй-хир, вăрман та çăлкуçсем,
Çилсем те пĕлĕтсем —
Тӳпе-Аттемĕрпе Тăпра-Аннемĕрĕн
Капмар хăвачĕсем,
Çылăха кĕнĕ çынсене
Çăлăнăç панăшăн тавах, тавах.
Эй, Турăçăм! Пире эс ан пăрах.

2

Эс иртнĕ вăхăт тĕтринче çухалтăн.
Эс кайрăн, кайрăн, кайрăн та пытантăн
Пĕр чăтлăхра...
Сĕм-сĕм вăрман, хура вăрман,
Ма чарăна пĕлми шавлан?

Эс иртнĕ вăхăт çулĕпе ăсантăн
Манран татах, пушшех те аякка,
Пĕр çавраçил ăшне тарса кĕме хăтлантăн,
Халь, çавăнпа сăну та лутăрка,
Çӳпленнĕ куçупа хăлху мăка...

Мăшăр çунатлă туйăма
Пĕр çавраçил хаччи касса вакларĕ,
Пулаймĕ çуната сыпăнтарма.
Касса вакланă туйăма
Пулаймĕ тек çыпçăнтарма.

Ман иртнĕ вăхăта кайса курасчĕ,
Сана тепре ытамлама хăясчĕ...
Уйрăлăва айккинелле хăвалама,
Уйрăлăва тĕлпулупа улăштарма
Çав вăхăтран тархасласах ыйтасчĕ...

Юрату пулнă-и? Тен, пулнă...
Пулнă пулсан, ма хуçăлнă?
Куççу-уль, ан тăварлан, а-ан тăварла-ан,
«Кайри — мала-а!..» — хуркайăксен кăна,
Хуркайăксен кăна: «Кайри — мала-а!..».
Лăпланмалла, асапланма чарăнмалла.

3

Ир тăрсассăн та çумра,
Каç выртсассăн та çумра,
Хаклă мăшăрăм-савни,
Эс ялан ман ăшăмра.

Пĕрле пулас килнисем —
Шăкăлтатса ларнисем,
Иккĕн выртса виççĕн тăрса
Хамăр йăха тăснисем.

Нумай çул эпир пĕрле,
Пĕр телейлĕ çемьере
Ӳстеретпĕр ачасем,
Ӳстеретпĕр мăнуксем.

Пыллă-çуллă выляшни,
Йăлтăртатса калаçни,
Хиркешсен те мирлешни —
Пĕрлĕхе шăнăрлани.

Карчăкпа старик çулне
Çитеесчĕ пурăнса.
Çав таранччен авкаланса
Линкка-линкка ташласа.

4

Нимĕнле чăрмав та çук пек
Пирĕн хушăра,
Мĕншĕн эпĕр пĕр-пĕринчен
Шутсăр аякра?
Пирĕн хушăра пушхир
Çилĕ шăхăрать,
Пирĕн хушăри çула
Тăвăл тустарать.

Пирĕн хушăри сасса
Аслати çапать,
Ăнтăлу çилхисене
Çиçĕм çунтарать.
Тен, ватăлса виличчен
Пурăнăп пĕччен,
Савнă тусăма кĕтсе
Кӳтсе çитиччен...

Çӳллĕ кĕпер айĕпе
Çырма шыв юхать,
Карлăк çине таянса
Пĕр арçын тăрать.
Ан кĕт мана, ан çилен,
Ан чĕнсем, пыраймăп,
Эпĕ сана савайрас çук,
Суйма пултараймăп.

Нимĕнле чăрмав та çук пек,
Пур ĕнтĕ, çук мар.
Пур пулмасан мĕне пула
Уйрăмшар пурнар?
Иксĕмĕре пĕр-пĕринчен
Сивĕтнĕ сăлтав —
Наркăмăшлă чĕлхе тăкнă
Элекпе ултав.

Ма итленĕ, ма ĕненнĕ,
Ма юта тăнланă?
Çук пуль, пирĕн хушăра
Юрату пулман, ăнман.

5

Çумăр çăвать — тăкăнать,
Ăна кам-ши чараять?
Кутамккийĕ пушансан
Лăштах пулать, лăпланать,
Çăмăлланнă пĕлĕт вара
Аяккалла чуптарать.

Пĕри хытах ятлаçать,
Ăна кам-ши чараять?
Çилли тухса пĕтиччен
Чашкăртăрин, кăшкăртăр,
Çилли тухса пĕтсессĕнех
Тута хĕрри йăлкăштăр.

Ĕмĕр вĕçленсе пырать,
Ăна кам тытса чарать?
Курмаллине курăпăр,
Кăкăр туллин сывлăпăр,
Панă сывлăш пĕтсессĕн,
Пуçтарăнса выртăпăр.

Леш тĕнчере вăрансан —
Утас çулĕ малалла,
Тăвалла, анаталла-и,
Чун çулĕпе — шалалла.

6

«Тăхта-ха, ан васка, калам...
Эп сан çинчен
Ĕмĕтленсе çӳретĕп.
Эс калаçни, кулни,
Эс хăвна ху манпа,
Ыттисемпе епле тытни —
Тахçантанпах, веç килĕшет...

Сана куçран хăваласа
Санра шыратăп кăлтăксем...
Тупăнманни пушшех те аптратать.
Ман ĕмĕтри хĕрарăм эсĕ,
Савма пуçларăм та сана,
Пĕлетĕн-и, аван мана,
Сĕре аван мана...» —
Вăл именсе, йăлтăртатса кулса
Сăпайлăн калани
Вырнаçрĕ кăкăра... Вĕри...
Ку таранччен туйса курман,
Çан-çурăм талккăшĕ тари
Пылак вĕри...

Çавăнтанпа чĕрем
Пуçларĕ чунăмпа канашлама:
«Сĕтеклĕ туйăм симпылне
Унпа пĕрле сыпса курма
Ирĕк парар-и хамăра?..
Ара...».

7

Пĕр мĕскĕне —
Суйма чармасăр тăнласа
Ывăнаслах ĕшентĕм.
Айван, пустуй сăмах
Çаптартăр та çаптартăр,
Мана хăйĕнчен хăй
Култарнине ăнкараймасăр,
Мухтанчăклăн каппайланса
Çунатсăр кăркка евĕр
Хăпартлантăр.

24.04.20

ÇУРХИ САЛАМ

Салам, салам тесе юрлать
Турат çинчи саркайăк,
Ăна курса, тавраллипе
Салам ямашкăн лайăх.

Салам тесе йăлтăртатать
Сарă хĕвел тӳперен,
Салам тесе шăнкăртатать
Çырма шывĕ кунсерен.

Салам тесе куçне чарнă
Тĕрлĕ йывăç папкисем,
Салам тесе карăнаççĕ
Йывăçсен турачĕсем.

Салам тесе куç хĕсеççĕ
Сарă пуçлă чечексем,
Салам тесе вĕлкĕшеççĕ
Вĕсем çийĕн лĕпĕшсем.

Салам сире тăванăмсем,
Юлташăмсем, тусăмсем,
Çурхи салам йышăнсамăр,
Саламне мана та калăр.

25.04.20

ХĂРАСА ӲКНИ

Ăна пĕрремĕш хут курсан,
Сасартăк, манăн ăшăмра
Çеçке çурма пуçланă туйăма
Хам ирĕкпе хамах
Хуçнин сăлтавĕ — хăраса ӳкни,
Хăрани çеç те мар, юраманни...

Шуйланнă кăмăл кивнĕ туйăма
Куççуль валашкинче чӳхерĕм те
Сирень сапакинчен çакса хăвартăм...
Кам валли?..

Кивнĕ кĕвентипе валашкине
Чĕре кăмакине пăрахрăм...

Сирень сапакинчен вĕçерĕнсе —
Кăмакаран йăсăрланса çĕкленнĕ
Сĕрĕмлĕ тĕтĕм ункинчен çакланнă
Туйăм хăпарса кайрĕ çӳлелле...
Кайрĕ, тек анмĕ çĕрелле...
Манран тата мĕн кĕтмелле?..

Пылак асап — савни пурри,
Йӳçĕ асап — савни çукки...
Кам айăплă? Ма хăваланă?
Чуна — çыпçăннă çылăхран упранă.

27.04.20

ЭЛЧЕЛ ÇИТСЕССĔН

2 тĕрленчĕк

1

Утăр та чупăр урасем, ан ывăнăр,
Хастаррăн утăр тăвалла, анаталла.
Сире тăп! чарăнма элчел çитсессĕн,
Ун чух пĕр шит тăваймăр малалла.

Пăхăр хăюллăн, куçăмсем, ан ывăнăр,
Тимлĕн тинкерĕр унталла та кунталла.
Сире лăп! хупăнма элчел çитсессĕн
Ун чух вара пăхаймăр ниçталла.

Килĕр те килĕр, ĕмĕтсем, ан ывăнăр,
Салхуллă сăнăма савăнăçпа çутма.
Мана пач! çухалма элчел çитсессĕн
Мана тупаймăр тек, татах савăнтарма.

Ĕçлĕр те ĕçлĕр, аллăмсем, ан ывăнăр,
Ĕç пӳлмине тултарăр хаклă тупрапа.
Манпа сывпуллашма элчел çитсессĕн
Пайлĕç мĕн пуррине ăшпиллĕ кăмăлпа.

2

Пĕрисене ырла-ырла,
Теприсене хурла-хурла
Çăхавласа такăнтарса
Çын пулнă çынсене пĕлетпĕр.
Йĕрĕннипе пуçа пăрса
Юнашарах утса иртетпĕр.
Сайра хутра хирĕç тăрса
Йăл-ял кулиш тукаласа
Пекĕлтетни те пулкалать.
Пурнас пулать...

30.04.20

ÇĔНТЕРӲ КУНĔ

Аслă Çĕнтерӳ уявĕ, кунĕ...
Вăрçă салтакĕсен кăкăрĕсем
Аэродром пек сарлака,
Самолетсем пек йăлкăшаççĕ
Медальсемпе орденĕсем.

Ветерансен паттăрлăхне
Пуç таякан хальхи ăру
Туйма та, ăнланма та пултараймĕ
Епле тискер вĕсем,
Киревсĕр вăрçă хирĕсем:
Аманнисем ахлатнисем,
Ĕмĕрлĕхе куç хупнисем,
Хăш-пĕрисем
Çут тĕнчепе уйрăлнине
Сиссе те юлайманнисем,
Тăшман пулли, пăшалĕн штыкĕ
Тĕл лектерсе вĕлернисем;
Бомба кисретнĕ хуласем,
Ялсем, шывсем, уйсем-хирсем,
Танксем пырса кĕрсе таптанă
Хуралтăсем, çуртсем, çынсем...
Совет салтакĕсем
Çĕнтерӳпе киле килме тĕллев тытни —
Юратнă Çĕршыва тăшман кулли пулас
Хăрушлăхран хаярланса хӳтĕлени.

Вăрçă çави касса ӳкернĕ салтака
Çĕрçуллăхсем иртсен те манас çук.
Тавах сире, ват салтаксем,
Çĕнтерӳпе таврăннисем,
Вăрçă аркатнă ял-хуçалăха
Ура çине тăратнă ĕç паттăрĕсем.

Тавах сире ветерансем,
Ирсĕр тăшман пуçне

Çапса аркатнă салтаксем.
Тăван Çĕршыв ятне-сумне
Варалама паманнисем —
Таймапуçах сире, ветерансем.

Миçе çĕрти юханшыва та тăпрана
Хăй юнĕпе шăварнă вăл, совет салтакĕ?
Совет çынни — фронтри тата тылри
Çухатусемшĕн юхнă куççульне çăта-çăта
Чăтăмлăн çапăçнă, ырми-канми ĕçленĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи ял-хулара,
Çĕнтерĕве кĕтсе теваскатса
Заводсенче, уйра, артельсенче,
Фермăсенче пĕтĕм ватти-вĕтти
Кунне-çĕрне пĕлмесĕр, выçă-тутăлла
Çĕршыв хуçалăхне аталантарнă,
Салтаксене тăрантнă, тумлантарнă,
Театрта ĕçленĕ актĕрсем те юрăçсем
Çарсем вăй пухакан вырăнсене çитсе
Сăвă каланă, юрласа ташланă.
Совет çынни пĕрне-пĕри хавхалантарнă,
Йывăр пулсан та, тăшмана çĕнме
Пĕрне пĕри тупа туса шантарнă.

Совет Союзĕн тĕп тĕллевĕ пулнă —
Гитлер çарне Берлин таран
Хăваласа кайса, хăваласа çитсе тĕп тăвасси,
Фашизм йăвине — совет салтакĕн
Кирза аттипе тапта-тапта лӳчĕркесси,
Фашистсене хăйсен чĕлхипелех
«Гитлер капут» тесе çухăртасси.

Вăрçă вăхăтĕнчи, ун хыççăнхи
Ăру çулсеренех сайраланса пырать.
Сыввисене хисеп те тав туса юлас пулать.
«Татах та вăрçă кăларма ан хăйăр!» тесе

Вĕчĕх те выçăх этемсен хăлхисене
Çурса ярассăн кăшкăрас пулать.
Тӳпенелле пăхса: «Упраччĕ, Туррăмăр...
Сыхлаччĕ, Туррăмăр Çут тĕнчене» тесе
Пăшăлтатса ыйтас пулать. Ырра шанас пулать.

Таймапуçах сана, Аслă Аттелĕх вăрçине
Тата тĕнчен иккĕмĕш вăрçине —
Пуçне çапса антарнă тăшманпа
Пĕр хирĕçӳсĕр Пакт çырса çирĕплетсе
Чаплă Çĕнтерӳпе вĕçленĕ
Совет Çĕршывĕн чăн-чăн паттăр салтакне.

2.05.20

«МАН ЮРАТНĂ АСАМАТ»

«Ман юратнă Асамат» —
Вăл мана çапла чĕнет,
Чăркăшмастăп, килĕшет.
«Ман юратнă Асамат» —
Терĕ те, тавра çуталчĕ,
Хуйăх-суйăх тухса тарчĕ.

«Ман юратнă Асамат
Тарават та вашават,
Питĕ тухăçлă ĕçлет,
Шухăша яма пĕлет,
Ун сăввисем, юррисем
Мана шутсăр килĕшет».

«Ман юратнă Асамат,
Эс мана паран хăват.
Каламасăр чăтаймас,
Сансăр чĕптĕм пурнаймас.
Эсĕ та мана юрат,
Ман юратнă Асамат».

22.05.20

УЙРĂЛНИ — ПАХА

Йăнăшрăм пулсан, каçар,
Атя тепре тĕл пулар,
Çĕнĕ çăкăр пуçласа
Çĕнĕрен çыртса пăхар.

Шăнкăравăм сан пата
Вĕçсе кайрĕ, тыт ăна.
Тыт та калаç, хуравла,
Ан персемччĕ кутăна.

Атя ĕнтĕ тата тепре
Мирлешер те ал тытар,
Атя тепре туслашăнса
Пĕрле пурăнса пăхар.

Ӳлĕмрен те мăкăртатма
Сăлтав тупăнсах тăрсан,
Харкашмасăр татăлар та
Ик еннелле пăрăнар.

Килĕшӳпе ăнлану
Çук-тăк, уйрăлни — паха,
Пĕрне пĕри тарăхтарса
Пăсас мар-ха сывлăха.

5.05.20

КИЛЕССИПЕ КАЯССИ

4 тĕрленчĕк

1

Сывлăшра ихĕлтетсе ишеççĕ
Çуркуннен асамлă шăршисем,
Тӳпере чĕвĕлтетсе вĕçеççĕ
Йăва çавăрнă телейлĕ кайăксем.

Шăнкăр юрăсем ярса лараççĕ
Вăрманти пĕрремĕш чечексем,
Пахчара куçĕсене уçаççĕ
Папка çурнă ешĕл хунавсем.

Çуркуннен çĕн пурнăç юррине
Юрлама пуçларĕç вăрмансем,
Уй-хирсем те кайăк-кĕшĕксем,
Хурт-кăпшанкăсем те чĕрчунсем.

Халăх пахчара çерем уçать,
Сухалать те йăрансем касать,
Тĕрлĕ çимĕç калчисем лартать,
Тĕрлĕ курăк вăрлăхне акать.

Пĕтĕленнĕ кăпăшка çĕре
Шăпăр-шăпăр çумăр шăварать,
Сар хĕвел шевлийĕ ачашлать.
Çуркунне! Çĕн пурнăç пуçланать.

2

Ай, мăнтарăн, çемçе çерем
Пĕлет вĕт-ха таптасса,
Çĕр-амăшне савăнтарма
Пурпĕрех шăтса тухать,
Имлĕн йăлкăшса ларать.

Ай, мăнтарăн, улăх-çаран
Пĕлет вĕт-ха çуласса,
Çĕр-амăшне савăнтарма
Пурпĕрех шăтса тухать,
Капăр çеçке кăларать.

Ай, мăнтарăн, çын-этем
Пĕлет вĕт-ха каясса,
Çĕр-амăшне савăнтарма
Вăхăт çитсен — сас парать,
Вăхăт çитсен — шăп пулать.

Килессипе каясси —
Куçа уçса хупасси,
Тăпра тăрăх утасси те,
Вилсен тăпра пуласси.
Тата тепре çуралсан та
Каллех çавнах курасси,
Турă панă Пурăнăçа
Ĕмĕрĕпех юрасси.

3

Çĕр ăшăнса çитсен кăна
Палан çурăлать.
Ман ăшра та ăшă туйăм
Çеçкине сарать.
Палан çеçкин çемçе шăрши
Пуçа çавăрать,
Савни ăшшăн ачашлани
Чуна ăшăтать.

Хурăн, хăлха çаккисене
Хывса ывăтать,
Ман туйăм та именчĕкне
Сирсе пăрахать.
Икĕ чĕре пĕр кĕвĕпе
Юрлама пуçлать,

Икĕ туйăм салтăнмиех
Çыхăнса ларать.

Ай, паланăм, ай, палан
Мĕншĕн хумханан?
Сарă кăтра çеçкӳпе
Кĕçех уйрăлан.
Хĕлле çитсен сарă çырлу
Хĕрелет, пиçет.
Палан кайăк хăналанма
Вĕçтерсе çитет.

Çуркуннехи йывăç-курăк
Хулпуççине тӳрлетнĕ,
Çимĕçне тытса тăмалăх
Çурăмне çĕнетнĕ.

4

Уçă кăмăл шерпетне
Сыпа-сыпа тăранаймăн.
Чун шыв мар вĕт, шĕвек мар,
Сивĕнсессĕн — ăшăтаймăн.

Татнă чечек шанса кайсан
Кăларса пăрахмалла.
Хуçăк чуна сыватмашкăн
Мĕн чуль çине тăмалла.

Кăмрăкланнă кăмăлăн
Сӳннĕ пайăрки,
Эс мĕн тĕслĕ пулнине
Кам асилĕ-ши?

13.05.20

ЧĂВАШ ЕН

Чăваш несĕлĕсен кунçулĕ
Тĕнче, Çĕр чăмăрĕ тавра
Кăшкарăн çаврăннă пулсан та,
Малашлăха тăсса инçе —
Тĕпленнĕ Атăл хĕрринче.

Чăваш сасси, чĕлхи, сăмахĕ —
Манăн Чăваш çĕршывĕнче
Янрать тĕнче кĕрлевĕнче.
Эп хамăн харсăр хăвата
Хуратăп кĕмĕл савăта.
Эп кĕмĕл тумлă чăваш хĕрĕ,
Ман ĕçĕм-хĕлĕм — кĕмĕл тĕрĕ.

Çĕр çула çитнĕ Чăваш Ен,
Сăпайлă та сăваплă Чăваш Ен,
Тĕреклĕ, ăрăскаллă Чăваш Ен,
Хĕвеллĕ те хевтеллĕ Чăваш Ен
Çулу сан пултăр вăрăм та ĕлккен.

Юман вăрманĕн кашшăн кашласа,
Çăка çулçийĕн çуттăн çуталса —
Анлă, мăнаçлă Атăл тăршшĕпе,
Илемлĕ çут тĕнче анлăшĕпе,
Тăванлă халăхсен туслăхĕпе,
Ырă хутшăнусен пĕрлĕхĕпе
Янратăр чаплă Чăваш Кил сасси —
ПУЛНИ, ПУРРИЙĔ ПУЛАССИ.

24.05.20

ХИРЕ-ХИРĔÇЛĔХ

Ыррипе хурри мирлешесси
Этемрен кăна килет пулсан —
Вĕçмĕччĕ пӳртре çӳп-çап, тусан.

Сиввипе ăшши хирĕçесси
Вучахран кăна килет пулсан —
Тухмĕччĕ килте кăра тăман.

Чăнлăхпа суя тупăшасси
Сăмахран кăна килет пулсан —
Мăлатуксăр янрĕччĕ такан.

Этемпе этем харкашасси
Пурлăхран кăна килет пулсан —
Тан тăмасчĕç ĕçченпе наян.

Пурнăçпа шăпа туслашасси
Пӳлĕхрен кăна килет пулсан —
Пурте пулĕччĕç телейлĕ те пуян.

Хурлăхпа хавас хутшăнасси
Сăлтавран кăна килет пулсан —
Тапăнаймĕччĕ çынна куштан тăшман.

Хире-хирĕçлĕх саккунĕ еккипе
Çырлахас пулать ун чалăш тулккипе.

16.08.20

МАНĂÇМИ ТĔНЧЕ

Çулçăн татăлса ӳкеççĕ
Сарăхнă çулсем,
Çилĕн çиçкĕнсе иртеççĕ
Шухă вăхăтсем.
Хĕрлĕ çулçăсен хĕлхемĕ
Илĕртет куçа,
Акă тепĕр кĕркунне те
Кайрĕ анăça.

Вĕçен кайăк карти вĕçет
Ăшă çĕрелле,
Çуркуннепе вĕсен кунтах
Вĕçсе килмелле.
Ах, мĕн-ма-ши ăшăм вăркать,
Чĕре йынăшать,
Пурнас ĕмĕр кунран кунах
Катăлса пырать.

Пуçа тайса тав тăватпăр
Пурнан çулсене,
Хĕвелтухăç, хĕвеланăç
Панă кунсене.
Ăнăçу, телей çӳреччĕр
Çуммăн, юнашар,
Чăрмавсене сирсе ярса
Лайăх пурăнар.

Ах, ачалăх, çамрăклăхăм —
Манăçми тĕнче.
Умри кунсем, умри каçсем
Утма çул çинче.

29.09.20

ПУКАНЕ

Ҫынра чӑнах, шыв нумай,
Йӳҫекки те пылакки...
Ҫавӑ шывпа исленет
Этем пичӗн ик айкки —
Этеме вӗтсех тӑрсассӑн
Усал-тӗсел нухайкки.

Улӑхса тӑнӑ ту ҫинчен
Анаталла — тӑвайкки,
Анса ҫитсен, пӗррехинче,
Ӗмӗрлӗхе чарӑнса
Ура тӑсса, куҫ хупса
Канма кайма выртасси...
Тулнӑ-тулман кутамккана
Пӗрле илсе каясси,
Шӑпа ҫакнӑ кутамккашӑн
Лере явап тытасси,
Тивӗҫлипе — е тамӑка,
Е ҫӑтмаха лекесси...

Этемлӗхӗн шӑпине
Этем татса параймӗ,
Хӑть те унта, хӑть те кунта
Канӑҫ курса пулаймӗ.
Таканара ҫӑрнӑ тӑмран
Тунӑ этем — такам валли —
Ҫыхса лартса турткаласа
Вылямалли пукане,
Такама — такам тыттарнӑ
Путишленмелли парне.

21.12.20

ЫЙТУ

Мĕн? Ăçта? Хăçан? —
Ыйту паран та
Шухăша каян, путан, чăмса тухан...
Мĕн? — пулнă,
Мĕн? — кĕтет пире малта...
Ăçта? — кунта-и,
Е кунтан лере кайсан...
Хăçан? — ăçтан пĕлен?.. Тахçан...

Эпир — мĕн ĕмĕр тăршшĕпе
Ыйту çине ыйту купаласа
Сапаласа-салтса тишкернĕçем —
Ăшталанса сӳтсе-явса
Тĕрĕс хурав шыратпăр.
Таçта çити чакаланса кĕрсе кайса
Шыранине тупатпăр,
Наянланса тимсĕрленсен
Йăнăш тума та пултаратпăр.

Иккĕленӳллĕх, тĕрĕслĕх, ултав,
Хирĕçтăруллă чыслăх, тасамарлăх
Çынна нумай пăтраштарать:
Лайăхлатать — пур енĕпе пуянлатать,
Япăхлатать — пур енĕпе чухăнлатать.
Çын умĕнче ялан
Ыйту хыççăн ыйту черетленсе тăрать,
Çынна — шухăшламасăр пурăнма,
Чунсăрланма чарать.

27.12.20

ТУПМАЛЛИ

2013

Туслăх кăшăлĕ 5
Тăван кĕтес 6
Йăнăш 7
Эпĕр санпа 8
Ачалăхра 9
Тăван тавралăх пархатарĕ 10
Килĕштеретĕп 11
Ыраттаратăн... 12
Икĕ тусăм пур 13
Кĕве 14
Сансăр 15
Чунăм савни çумĕнче 16

2014

Ĕмĕр тăршшĕпе 19
Пурнăç кустăрми 20
Саваттăнччĕ 21
Çырма юхать 22
Сĕреп 23
Йĕкĕр ывăç 24
Сансăр пуçне 25
Каллех 26
Пĕр никама та 27
Хăна такмакĕсем 28
Савас килнишĕн 30
Пĕрлĕх 31
Кашни çуркуннепе 32
Тунсăхлатăп 33
Питĕ лайăх, тăвансемĕр 34
Шуçчуман 35
Пирĕн урам леш енче 36
Вăхăт йĕппи 37
Аса илетĕн-ши? 38
Телей мар-и?.. 39
Ăнсăртран 40

Часах... 41
Каласамччĕ кашни кун 42
Чăннипех те юратать 43
Ылтăн-кĕмĕл 44
Сана курсан, савăннипе 45
Ваттисем вĕрентнинчен 46
Тĕл пулса уйрăлса кайиччен 47
Сăнав... 2 тĕрленчĕк 48
Сансăр кама савас? 49
Ĕмĕр тăршшĕ 50
Çу уйăхĕн вĕçĕнче 52
Каях ĕнтĕ 53
Ах, пĕлесчĕ 54
Икĕ сарă кайăк 55
Пурнăç шавĕ 56
Иртет... 57
Таврăн... 58
Килпетсĕрлĕх . . . . —

2015

Çӳл тӳпери çăлтăрсем 61
Кай 62
Эпир санпа пĕрле чухне 63
Слакпуç чăвашĕсене 64
Вăйăсем 65
Ай, çаврăнать... 66
Манса кайрăн пуль 67
Малалла 68
Ултав 69
Сума суни 70
Пурнăçпа тĕлĕк 71
Çеçпĕл 72
Савнă мăшăрăм 73
Пĕрмече 74
Савман савни. 18 тĕрленчĕк 75
Тăван чĕлхе. 2 тĕрленчĕк 87
Тавах, тăван 89
Çумăр витĕр... 2 тĕрленчĕк 90

Ялан çапла пулнă 91
Пирĕн ĕмĕр çулĕсем 92
Вăхăт-хуçа 93
Савни патне кайăттăмччĕ 94
Мĕнле пурăнас-ха ман? 95
Мĕнле пурăнатăн вара? 96
Сăнав. 2 тĕрленчĕк 97
Асилӳ. 8 тĕрленчĕк 98
Хальччен. 7 тĕрленчĕк 102
Ăшăм ăрши 106
Кавир 107
Эпир кунта... 108
Явап 109
Тӳперен — çĕрелле 110
Ыт-ахальтен-им? 111
Ĕненме пăрахнă. 2 тĕрленчĕк 112
Улшăнусем 113
Ĕмĕт 114
Утмăлтурат 115
Телейлисемччĕ... 116
Иккĕн, уйралми пĕрле 117
Ах! сана, ах! мана 118

2016

Юлташсем-тантăшсем 121
Телей ыйтса... 122
Çеçпĕл куççулĕ 123
Кай! 3 тĕрленчĕк 124
Тытăм. 4 тĕрленчĕк 126
Кĕр кунĕсем 128
Талăкăн-талăкăн... 129
Тав ту... 6 тĕрленчĕк 130
Тăван лайăх 133
Ман чунăм 134
Кашни самант — пĕр ĕмĕр 135
Ай, туту 136
Чĕнмен хăна пулас мар 137
Пăхăну. 3 тĕрленчĕк 138

2017

Слакпуç кĕввисем. 3 тĕрленчĕк 141
Константин Иванова 144
Ар вăл — хăват, ама — сăвап. 2 тĕрленчĕк 146
Сан сассу. 2 тĕрленчĕк 147
Айван 148
Уйăрчĕç 149
Юрă юрлăп... 150
Вилет... 151
Пылаккипе йӳççи евĕр... 152

2018

Хуçнă туратăн — хăрасси 155
Ыйтни... 2 тĕрленчĕк 156
Ят... 157
Сана кăна 158
Кирлĕ пулман 159
Тунсăх. 2 тĕрленчĕк 160
Пайкилт — Слакпуç 162
Шур перчетке 164
Мĕн тесе хурланан? 165
Пурнаççĕ тет 166
Ӳкĕн... 167
Чунçӳревĕмсем. 4 тĕрленчĕк 168

2019

Тăванлăх юрри 175
Килсемччĕ 176
Асап 177
Пурнăç. 3 тĕрленчĕк 178
Ӳлĕмрен 180
Кĕрхи тунсăх 181
Пĕрпĕчченлĕх 182
Вăйсем. 3 тĕрленчĕк 183
Хура тинĕс 185
Шай 186

2020

Пӗртен-пӗрехӗм 189
Кӑтарт сӑнна... 190
Манӑҫайми кунсем-ҫулсем 191
Кӗтрет 192
Такам-темскер. 2 тӗрленчӗк 193
Вӗҫерӗнни... 195
Ман сана курас килет 196
Кам вӑл, мӗн вӑл этем? 197
Сӗрӗм 198
Иккен... 4 тӗрленчӗк 199
Кӑткӑсем 203
Пӑяв 204
Ватлӑх 205
Сывла... 2 тӗрленчӗк 206
Кам хӑлхине кӗмен? 208
Ӗмӗрлӗхе эпӗ — сан 210
Пурнасчӗ! 211
Кайри — мала!.. 7 тӗрленчӗк 213
Ҫурхи салам 219
Хӑраса ӳкни 220
Элчел ҫитсессӗн. 2 тӗрленчӗк 221
Ҫӗнтерӳ кунӗ 222
«Ман юратнӑ Асамат» 224
Уйрӑлни — паха 225
Килессипе каясси. 4 тӗрленчӗк 226
Чӑваш ен 229
Хире-хирӗҫлӗх 230
Манӑҫми тӗнче 231
Пукане 232
Ыйту 233

ХУШСА КАЛАМАЛЛИ

Хуплашка ҫинче тата кӗнеке тӑршшӗпех, С.В. Асамат Чӑваш наци радиовӗнче йӗркелесе ертсе пыракан «Сас» тата «Пӗррехинче» кӑларӑмсен хӑнисем.

Хуплашка умӗнче: Раҫҫей халӑх артисчӗ, Чӑваш Патшалӑх академи юрӑпа ташӑ ансамблӗн пултарулӑх ертӳҫи, тӗп дирижерӗ *Ю.В. Васильев*; филологи наукисен кандидачӗ *А.П. Хусанкай* литература критикӗ; Чӑваш наци радиовӗн продюсерӗ *В.Н. Дмитриев*, ЧР профессионал ҫыравҫӑсен пӗрлешӗвӗн ертӳҫи *Л.И. Филиппова* сӑвӑҫ, Чӑваш наци библиотекин маркетингпа инноваци пайӗн пуҫлӑхӗ *Н.Т. Егорова*; ЧР культурӑпа наци ӗҫӗсен министрӗ *С.А. Каликова*; РФ тава тивӗҫлӗ культура ӗҫченӗ *Ю.Д. Кудаков* композитор, доцент.

Хуплашка хыҫӗнче: Чӑваш халӑх поэчӗ, ЧР культура тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ *Ю.С. Сементер*, Ҫӗнӗ Шупашкарти 18-мӗш лицейре вӗрентекенсемпе вӗренекенсем — *Л.К. Севрикова*, *К. Севрикова*, *С. Шмелева*, РФ вӗрентӳпе пӗлӗвӗн хисеплӗ ӗҫченӗ *А.А. Такина*; Чӑваш халӑх артисчӗ *И.И. Иванов* доцент, Чӑваш наци радиовӗн продюсерӗ *В.Н. Дмитриев*, Чӑваш халӑх артисчӗ *С.П. Иванов*, РСФСР тава тивӗҫлӗ артисчӗн, Г.Т. Терентьев драматургӑн мӑшӑрӗ *Е.К. Терентьева*; ЧР искусствӑсен тава тивӗҫлӗ деятелӗ *А.А. Осипов* композитор, тележурналист; ЧР культура тава тивӗҫлӗ ӗҫченӗ, драматург *Р.В. Сарпи* сӑвӑҫ, *Лидия Сарине* ҫыравҫӑ; Раҫҫей халӑх артисчӗ, Чӑваш Патшалӑх академи симфони капеллин илемлӗх ертӳҫи, тӗп дирижерӗ *М.Н. Яклашкин* профессор; Чӑваш наци радиовӗн продюсерӗ *В.Н. Дмитриев*; ЧПТРКӗн тележурналисчӗ, ЧР ҫамрӑкӗсен премийӗн лауреачӗ *А.Н. Енейкин*, Шупашкарти Ҫеҫпӗл Мишши музейӗн ертӳҫи *А.В. Андреева*.

Светлана Азамат
(Смирнова Светлана Васильевна)

ЁМĔР ТĂРШШĔПЕ...

НА ВСЕМ ВЕКУ...

Книга издается в авторской редакции

Компьютерный набор *С. Азамат*
Верстка *Э. Кирилловой*
Дизайн обложки *С. Азамат, Э. Кирилловой*

Подписано в печать 15.06.2021. Формат 60×84 1/16. Гарнитура Times. Физ. печ. л. 15,0. Тираж 150 экз. Заказ № 115.

Отпечатано с готового макета в "Типография № 7"
г. Чебоксары, пр-т. Машиностроителей д. 11 В
тел. (8352) 22-27-90, (8352) 22-27-68
E-mail: tipografia7@mail.ru, сайт: www.tipografia7.com